Уйрăм шурнал хакĕ—30 пус.

# СУНТАЛ

Ђăваш пролеттари писсаттĕлĕсен „Канаш" сойусĕн литтературă, криттĕк, политтĕк тата наукка шурналĕ

**№ 10 (40)**

ОКТĂПĔР

1927 çул.



# ШУРНАЛТА ПУРРИ:


Стр.

1. **Ђава П.**—Октапёрти тивёçлёх (*статйа*) . . . . . . . . . 1
2. **Петтоки А.**—Левин (*илемлетнё статйа*) . . . . . . . 3
3. **Иехрем Иванё**—Йыхрав шăнкравё (*сăвă*) . . . . . . . 4
4. **Йуман М.**—Пурлăх комиссарё (*калаллы*) . . . . . . . 5
5. **Елкер**—Улăп (*паллата*) . . . . . . . . . . . . . . . 9
6. **Танилăв М.**—Ирĕклĕхшĕн çапăçакансем (*калав*) . . . . . 12
7. **Тўмер В.**—Октапĕр револђутси вырăнсенђе (*статйа*) . . 14
8. **Курак И.**—Сăвăсем . . . . . . . . . . . . . . . . . 18
9. **Ђава П.**—Ахах (И. Е. Унтритсов) поет çинђен (*статйа*) 19
10. **Патман**—Йурату ыйтăвё ђăваш литтераттуринђе (*статйа*) 22
11. **Н. Шупуççынни**—Октапĕрпе ђăваш литтераттури çинђен 25
12. **Ник. Латвиненккă**—Хутошнĕк М. Çпиритоновă . . . . . . 27
13. **Митте В.**—«Ђăваш çĕршыв...» (*сăвă*) . . . . . . . . —
14. **Кели**—Поеçин формисем çинђен (*йулашки*) . . . . . . 28
15. **Ли**—Ђăваш поеçин формисем çинђенех (*статйа*) . . . 29
16. Литтераттурă сатађисем . . . . . . . . . . . . . . . 30
17. Халăх творђĕстви . . . . . . . . . . . . . . . . . 31
18. Вулакансем мĕн калаççĕ . . . . . . . . . . . . . . 32
19. Шахмăт пайĕ . . . . . . . . . . . . . . . . . . . çийĕ
20. Пуштă йешђĕкĕ . . . . . . . . . . . . . . . . . . „



## „КАНАШПА" „КАПКĂН", „СУНТАЛ"

### КОРЕСПОТЕНЂĔСЕМ!

**„СУНТАЛА"** ЂĂВАШ ХАЛĂХĔН ПУРНĂÇНЕ КĂТАРТАКАН ФОТОКРАФИ КАРТТИНЕСЕНЕ ЙАРСА ТĂМА **ТĂРĂШĂР!**

**Ђăваш хушшинђи хапрăк-савăтсем, çĕнĕрен лартнă шкулсем, клупсем, нумай пусăва куçни, халăхпа кўлĕсем ђавни, йалти пионерсем орканисатсиленни т. ыт. кăтартакан паллă йапаласене кăтартакан карттинсем йарсан питĕ аван пулĕђђĕ.**

**„Сунтала" кĕнĕ карттинсемшĕн „Сунтал" ретаксийĕ пĕрер тенкĕ укçа тўлет.**

Октăпĕрти Револђутси 10 çул тултарнă çĕре тухакан ђăвашла

## КĔНЕКЕСЕМ:

1. **Ленин.** Октăпĕрти Револђутси çинђен.
2. Ђăваш хушшинђи Советсем.
3. ПСК(п)П Ђăваш орканисатсийĕн 10 çул хушшинђи ĕçĕсем.
4. Ђăвашсен çамрăк квартийĕ.
5. Октăпĕрти Револђутсипе ђăваш хĕрарăмĕ.
6. **Миххайлăв А.** Ђăваш промышлĕннăçĕ.
7. Халăха вĕрентес ĕç.
8. Ђăваш йалхуçайстви.
9. Ђăваш хушшинђи потр. копператсийĕ.
10. —„— происвотстă копператсийĕ.
11. Октăпĕр хисепне—илемлĕ литтераттурă пуххи.
12. **Йуман.** Укăђа касси—пйессă.
13. **Шенкер.** Çиçĕм çиçрĕ... кĕмсĕртетрĕ—повĕç.
14. **Трупина М.** Çĕнтерђĕ—пйессă.

ЂĂВАШ КĔНЕКИ УЙРĂМĔ

ШУПАШКАР

*ВИÇÇĔМĔШ ÇУЛ ТУХАЙ.*

*Пĕтĕм тĕнтъери пролеттарисем, пĕрлешĕр!*

Уйăхра пĕрре тухаЙ.
**ХАКĔ:**
пĕр уйăха — 20 п.
3 уйăха — 60 п.
6 уйăха 1 т. 10 п.
1 çула 2 тенкĕ
**Ретакси атрĕсĕ:**
Чебоксары, Канашская ул. дом Совдепа № 15. Телефон № 47.

# СУНТАЛ

**Ђăваш пролеттари писсаттĕлĕсен „Канаш" сойусĕн литтераттурă, криттĕк, политтĕк тата наукă шурналĕ**

„КАНАШ" ХАÇАТ ÇУМĔНЂЕ ТУХАЙ.

**№ 10 (40)**
ОКЙАПĔР
**1927 çул.**

# ОКЙАПĔРТИ ТИВĔÇЛĔХ.

Раççейра революцисен 150 мĕлйун халăх шутланнă. Вĕсенђен çурри ытла «вак халăхсем»: тутарсем, мишерсем, ђăвашсем, пашкирсем, сыренсем, пермйаксем, самойетсем, çармăссем т. ыт. пулнă. Тата, 150 мĕљйун халăхран 23-мĕлйупăшĕ çеç улпутсем пулнă. Ыттисем, вара,—ђи йышли—хресђенсем, унтан рапођђисем, вĕсем хыççăн, мешђенсем тата тĕрлĕрен кăпăр-капăр ђиновниксем пулнă.

Рапођђисемпе хресђенсен пурнăçĕ—сĕм тĕксĕм, питĕ хĕсĕк пурăнăç пулнă, анђах вĕсенђен те йăвăр, хĕсĕк, ђĕмсĕр пурăнăç, тата вак халăхсен пулнă. Вĕсене патша решимĕ йуратман. Вĕсене хупĕрлес, пĕтерес шухăшпа патша ђинавникĕсем темĕн те пĕр хытланнă: вĕсене пĕр-пĕринпе хирĕçтернĕ, вĕсене илĕртенçи пулса вăрçăсене илсе кайса унта пĕтернĕ, вĕсен ырлăх-пурлăхне нимĕн вырăнне хумасăр йепретнĕ, вĕсенђен такам та мăшкăлама пултарнă, рускăпа наккасани парассине пуриншĕн те пĕтернĕ пулсан та, вак халăхсене тĕрлĕрен çемĕскисем, становойсем, уретник-шантармăсем пĕрмайах кăшт айăпшăнах хĕнеме пултарнă.

Ђăвашсене илсен—вĕсен те пурăнăçĕ ытти вак халăхсен пекех калама та çук хĕсĕк пулнă: пурне те пăхăн, пуринђен те хăра, ăна та ту, кăна та ту, çитменнине, темĕн ђул правăçланас тесен те çупкăпа-тапкине çеç çисе тăр. Кам мăшкăламан пулĕ ђăвашсенђен: вырăсси те, тутарĕ те, тата ђăвашранах тухнă „улпутсем"те: пупĕ те, кантурти тийекĕ те, стрипшнийĕ те, такам та. Ђăваш «сурмассерен улпут питне тивретнĕ»: Çав тери ђăвашсемпĕн „улпут" йышлă пулнă. Кашни „улпутăннах" патшана йурама тăрăшмалла пулнă. Ирĕксĕрех, вара, ђăваш [халăхне кашнийех хĕстерме, путарма тытăннă.

Тĕрлĕрен тивĕç йенђен илсен те — ђăвашсен нимĕн тивĕçлĕх те (правă та) пулман. Ђăваш пуçĕ-урипех йăл опђине пăхăннă. Лешĕ темĕн муталама та пултарнă: хăмăт тăхăнтарса та намăслантарнă, çăраççи çакса çӳретсе те намăслантарнă, рускăпа та çаптарнă, ахаљ те хĕненĕ. Йал опђи йамасан ђăваш хăй йалĕнђен ниçта тухма та пултарайман. Сут умне тăрас пулсан та ђăваш хресђенĕн ытти классен пек тивĕç пулман: ăна вулăс кантурĕнђи сут çеç сут тунă.

Ахаљрен мар йентĕ çав, ђăвашсен ваттисем „тийекĕн йытти те тилĕ тытаЙ", — „пуйапăн кушакки те пулă тытаЙ"—тесе сăмах каларнă. Ђăвах та, ђăваш хурахалăхĕн пур йенђен те тивĕç пулман, пурăнăçра вăл хыр хăййи сутсах ирттернĕ—çав вăхăтрах ыттисем пур йенђен те ырă курса пурăннă. Ђăваш хресђенĕ, хăйĕнђен мăшкăлакансене нимĕнле тивĕçпе те тавăрса параймаш, пĕр, — „типшар" — туса çеç ăшне пусарнă (хăйне мăшкăланă çын патĕнђе çакăнса вилнĕ). Çапла, ђăваш хăй вилсе çеç хăйне мăшкăлакансене тавăрнă. Упăн, йалти, хурал патĕнђисĕр пуçне, урăх ниçта та сас пулман. Анђах «хурал патĕнђе» те кăшт куштанраххисем, уретник-писсăрсем ури тупанĕсене çуласа тăраканĕсем çеç кăшкăрнă, ыттисен нимĕн сас-ђĕв кăлармалли те пулман.




Хĕрарăмсен, вара, пушшех нимĕн тивĕç те пулман, вĕсене выљăх вырăнне çеç шутланă. „Ђăх-ђĕпе кайăк ан шутла, хĕрарăма етем ан те"—тенĕ ун ђухне.

Йалти кулаксем, пупсем, плеђђавскисем, революци мĕн тапрансан хăйсене мĕн пулассине сиссех тăнă. Вĕсем, хăшĕ укçи-мулĕпе, хăшĕ ђейелĕхĕпе, хăшĕ нухайкка вăйĕпе мĕскĕн ĕçхурахалăхне хăратса тăрса, патша ирĕкне сыхласа тăнă.

Анђах ĕмĕрех сыхласа тăма пултарайман. —Тумлам ђул шăтараЙ—тенĕ пек, хурахалăх та пĕђĕккĕн-пĕђĕккĕнех ăсланса, харсăрланса пынă та, вунă çул ĕлĕкрех, 1917 çулта, малтан патша ирĕкне тĕксе антарнă, унтан улпутсен вăйне те луђăркаса хунă. Ĕçхурахалăхĕ ирĕке тухнă, ђăвашсем те ĕмĕрхи пуслăх пăйавне татса пурăнăç çулĕ çине тухнă, пур тивĕçлĕхе те çавăрса илнĕ. 1917-мĕш çулта ОкЙапĕрĕн 25-мĕшĕнђе Ленинкратри Советăн ђи первайхи кĕретĕн саççетанинђе Ленин й. çапла каланă: —Пољшевиксем пĕрмайах хатĕрлесе пынă рапођђисемпе-хресђенсен революцийĕ пайан çĕнтерђĕ. Мĕншĕн паха вăл рапођђисемпе хресђенсен революцийĕ? Ђи малтанах, вăл пирĕн Совет правиттĕлстви, тата нимĕнле пуршуаçисĕр хамăрăн влаç оркăнĕ пулнăшăн паха. Ĕмĕр пусмăрта пурăннă хураха-

лăх хăйех влаç пулса тăрат, кив патшалăх аппараҫĕ тымарне ҫитеҫҫенех арканат, унăн вырăнне ҫĕнĕрен тытăм аппараҫĕ пулĕ, вăл — Совет орканисатсийĕсем. Пайантан Раççейри влаçĕн историйĕ ҫĕнĕ мăн ҫул ҫине тăрат. Халĕ çеç ҫĕнтернĕ виççĕмĕш революци кайран-кайран сотсиалисăм ҫĕнтерĕвĕ патне илсе пырса тăратмалла. Халĕ Раççейре пирĕн пролеттариатăн сотсиалисăмлă патшалăх тума тытăнмалла. Сывă пултăр пĕтĕм тĕнҫери сотсиалисăмлă революци, тенĕ.

Пĕтĕм тĕнҫери революци тапранса кайайман пулин те, епĕр сотсиалисăмлă патшалăхах туса ҫитереймен пулсан та, вунă ҫул хушшинҫе ирĕккĕн пурăнса ҫылай кун-ҫути куртăмăр. Ҫи малтан—пире халĕ кашнинех ĕҫлĕ ҫын туса лартма та пултараççĕ, хамăр та епĕр кашнийех ĕҫлĕ ҫын суйланă ҫĕрте сас пама пултаратпăр. Ку тивĕç пек тивĕç урăх ниăçти патшалăхра та ҫук. Ку тивĕç—етемĕн ҫи пысăк тивĕҫĕ; ĕҫхурахалăхĕ хăй пурăнăçне темĕнле майсемпе те тытса пыма пултарат: влаç аппаратĕнҫе ĕçлесе те, килте ҫакаланса та. Никам та ăна, нимĕнле кӳрентерӳ те тума пултараймаст, тепле-капла пулсан та вăл влаçрен кирек ăçта та пулăшу илме пултарат, ăна тĕпри уҫрештенисем патне кайса ăс ыйтма та никам та ҫарман, ăна вĕренес тесен те ҫаракан ҫук. Халăхсен пĕртанлăхĕ, пур халăхсене те малалла кайма ирĕк парасси, куҫттурлăха хăпартасси, халăхсене пусмăрланине пĕтĕмпех пĕтерессi, халăхсен тăванлăхĕ—акă Октăпĕрти революцин пур тивĕçлĕхĕ те.

Патша Раççейĕнҫе темиçе ҫĕлхепе калаçакан, кашни харпăр йăлаллă пурăнакан вак халăхсене патша ирĕкĕ пупсем, ҫинавнĕксем урлă вырăс тума, вырăс пулмасан та, хĕсĕрлесе пĕтерме, вĕсенне пĕтĕм сӳнтерме шухăшланă. Октăпĕрти революци тивĕçĕпе вăл вак халăхсене пурне те харпăр ҫĕлхипе, харпăр йăлисемпе пурăнма ирĕк панă. Халĕ Советсен патшалăхĕнҫе 6 пĕр-тăван респуплĕк, вăл респуплĕксенҫе 16 оплăç, 18 автономлă респуплĕк. Сăмахран, кашни халăх—респуплĕкле, оплăçлă, кашни халăхăн хăйĕнҫен тухнă ĕçлĕ ҫынсем, хăйĕнпе тымарланса тăракан уҫрештенисем. Ҫăвашсен те хăйсен респуплĕк, хăйсен шкулĕсем. Ҫăвашсем те пур вак халăхсемпе пĕрле сотсиалисăмлă патшалăх тунă ҫĕрте ĕçлеççĕ.

Сывă пултăр Октăпĕр ҫулăмĕ, сывă пултăр пĕтĕм тĕнҫере революци хĕлхемĕ, сывă пултăр пур тĕнҫери ĕҫхалăхĕн инттернатсионалĕ!

Путлантăр кив тĕнҫе, сӳнтĕр авалхи пусмăрлăх—капитталисăм вăйĕ!!!

**Ҫава Платтунĕ.**

## 1917-мĕш ҫул ЛЕНИНКРАТРА.



Рапоҫҫисем Октăпĕрте патшан Хĕллехи творетсне туртса илеççĕ.

**Тăшмансем кураймаççĕ, ĕненменнисем шанмаççĕ пулин те, епĕр ӳсетпĕр, епĕр патмарланатпăр, епĕр сотсиалисăм тăватпăр, епĕр сотсиалисăм тусах пĕтеретпĕр!**

# ЛЕНИН.

**А. Петтоки.**

Капаланса, капаланса килеççĕ, иртсе кайаççĕ хăрушă хура пĕлĕтсем. Тискеррĕн, пур тĕнђене ђĕтретсе сарăлат̆ аслатийĕн сассийĕ... Тĕнђе пăтранат̆. Тĕнђе саланса кайас пек... ак, ак сасартăкăн çурăлса кайат̆ çеç.

Çурçĕр йенђен вĕçен-çил уласа, ахăрса, касса татас пек вĕрет... Çил тĕнђене силлет. Çĕр йăлтах кисренсе ђĕтренет. Çĕр хумханат̆.

* * *

...Ах, ђунăм?!.. Мĕнмаха, мĕнма?!!! Мĕнеха ку пĕлтерет?! Ђанах та, çанталăк пĕтмĕши?! Йăлт тĕнђе çаврăнат̆... пуç та çаврăнат̆... Ăçта вĕçĕ, вĕçĕ ăçта?!...

...Вĕçĕ? —Вĕçĕ Унăн çук. Вăл ĕмĕртен пуçланнă. Вăл ĕлĕк те пулнă, вăл ак хаљ те мĕн пур тĕнђипе сарăлат̆.

Куратăри?! Пăхăр пурте!.. Ун сăн-сăпатне астăвăр! Вăл хĕрлĕ. Вăл вут хĕмлĕ. Вăл çунтарат̆. Вăл çĕмĕрет, Вăл мĕн-пур тĕнђене ишĕлтерет, ишĕлтерсе çĕнĕрен тăват̆.

Вăл пĕр шелĕвсĕр: кам Ăна хирĕç—вăл пĕтет, Унăн çил-çунатлă çулĕ айне таптанса йулат̆. Вăл пĕрне çĕклет, теприне çаврăрса пăрахат̆. Пурнăçра малта тăракансене кайа хăварат̆, кайрисене малалла çул парат̆.

Унăн йађĕ аслă. Унăн йађĕ—РЕВОЛЂУТСИ.

* * *

Авалах, ĕмĕр пуçламĕшĕнђех çуралнă вăл. Авалах сахал мар тĕнђене кисретнĕ, самана урăх сăнсăпат кĕртнĕ. Унăн пурнăçĕ те—кĕрешӳ. Авалран тĕнђери киревсĕрлĕхпе кĕрешнĕ. Кĕрешӳпе Вăл пурăнат̆, кĕрешӳпе пусмăр айĕнђисене ирĕке кăларат̆, çут-çанталăкăн ырă сĕткенне ĕмтерет.

Аслă Римри ђурасен пăлхавĕнђе—Спарттак миминђе Вăл аталаннă, Раçĕнпа Пукађђов çарĕсенђе ӳссе сарăлнă. Хастарлă Парижри Комунă вăхăтĕнђе вăй-хăватне палăртнă. 1905-мĕш çулта тĕнђене кисретнĕ. Ак хаљ каллех, йулашки хут Вăл çаврăнса çитрĕ. Йулашки хут... Хаљ ĕнтĕ Вăл пултармаллăх, хаљ ĕнтĕ йулашки çапăçу пулмалла...

Револђутсийĕн пĕр сăн. Вăл икĕ питлĕ мар. Револђутси пĕр çулпа пырат̆. Револђутси хастарлă çиçĕм.

Револђутсийĕн сăнĕ—ЛЕНИН.

* * *

Хурăç сулăмĕпе çутатса, тимĕр тĕслĕ сăнпа, вăйлă утăмăн, тинĕссем, тусем, çырмасем урлă утса килђĕ вăл пирĕн пата...

...Килђĕ те, мĕн-пур хăйĕн хастарлă ђапĕпе çунтарса пырсатăђĕ авалхи, хăйĕн йулашки ирсĕр ĕмĕрне иртерекен, çĕрсе çитнĕ мăн купа йеверлĕ, тĕнђе умне...

Кивĕ тĕнђе ђĕтренсе кайрĕ хăйĕн палађне[1]) хăйĕн умĕнђе кура.

Пĕлĕте пуçĕпе тĕкĕнсе, хура пĕлĕт пархисене сирсе, хăйĕн куçĕнђен пăлхав вут-кăварĕ кăларса тăрат̆ Вăл—теме те çапса ватма хатĕрскер...

Кив тĕнђе хăранипе ђĕтренсе кайрĕ, ним тума пĕлмесĕр, хăйĕн суйа шăлĕсемпе çиллипе шатăртаттарса илђĕ. Пиђĕ-куçĕ тискеррĕн хуралса кайрĕ, йулашки хут хăйĕн тăшманĕпе çапăçма хатĕр тăђĕ.

Çĕлен-калта пек сарăлса тăраççĕ унăн вĕçĕ-хĕррисем, мĕн-пур çĕре йавса илнĕ сăнђăрсем пек... Мĕн пур пурăнăç та унăн аллинђе пулнă, ăна хирĕç ним те тăрайман.

[1]) Палађ—пуç татакан.

Çынсем—çав тискер кайăк айĕнђе таптаннăскерсем, çутта та тухайман. Сывлăшĕ те вилĕм шăршипе сарăлса çитнĕ, çавăнпа та вĕсем, ђатаймасăр, çĕр тĕпне ђавса, тарса пытанса пĕтнĕ, çĕрпе танлашнă, çĕрпе пĕрлешнĕ, çĕр тĕпĕнђех хăйсен ĕмĕрхи тăшманĕсемпе çапăçма, кĕрешме, вилиђђен кĕрешме хатĕрленнĕ.

Акă Вăл килђĕ вĕсем патне—вĕсене ĕмĕрхи ыйăхран вăратма, ĕмĕрхи ђуралăхран хăтарма.

...„Асап айĕнђисем!.. Капиттапа таптаннăскерсем!.. Тĕнђе ђурисем!..

Вăранăр!.. Тăрăр!!!

— Сире пусмăрлакансен шађђи тулнă... Вĕсен вилĕмĕ çитнĕ... Мĕн пур тĕнђери пролетари, харăсах сиксе тăрăр!.. Килĕр кунта! Килĕр кунта!.. Йăлтах! Йăлтах...»

Мĕн пур ĕçхалăхне вăратса, Унăн сасси тĕнђене аслати сасси пек йантраса кайрĕ. Хирĕçĕн:

—«Епĕр пыратпăр!...» —
—«Епĕр хатĕр!»
—«Епĕр ђĕрĕ—вилмен!...»—

тенĕ мĕлйунлă сасă таçтан-таçтан катаран йанрарĕ. Мĕн-пур çĕр кисренђĕ çав сасăран, кивĕ тĕнђе пĕтĕмпе ђĕтренсе кайрĕ... Вăл хăй пĕтессине, вăл хăй путланассине, унăн вырăнне çĕнĕ тĕнђе пулассине, çĕнĕ саман килессине, çурхи ђеђексемпе йавăннă савăнăçлă пурăнăç пулассине сисрĕ.

Ђаплă паттăр хăйĕн хурăç пурттипе ирсĕрлĕх тĕнђи пурнăçĕ çĕне туртса йађĕ те... мĕн-пур çанталăк çавăнтан кисренсе кайрĕ. —Мĕн-пур пурăнăç вăхăтлăха хупланђĕ. Унăн йун тымаррийĕ таккама ђаранђĕ, ђаранђĕ те вăхăтлăха—каллех тата вăйлăн, тата хастаррăн тапма тытăнђĕ.

Кивĕ тĕнђе айĕнђен купипех—тем пысăккĕш купа, етем пуçĕсем, шăммисем купи тухса выртрĕ. Вĕсем йăлтах ђĕрĕлђĕç, вĕсен ăшне пурăнăç кĕђĕ, вăсем ђаплă паттăра хăйсене пурнăçа кăларнăшăн тав турĕç.

Йĕри-тавра йăлтах çуталса кайрĕ. Хĕвел хăйĕн ылттăн çуттипе пурне те савса ăшăтма пуçларĕ. Етем шăммисем хушшинђе вут пек, йун пек хĕп-хĕрлĕ ђеђексем сарăлђĕç...

Темиçе мĕлйун çын йăлт пĕтĕçсе пĕрлешрĕç... Пĕлĕте тĕкĕнекен, вут пек йалав çинђе пĕр йат ылттăнăн йалкăштарса вĕлтĕртетсе тăрат̆:

ЛЕНИН

тесе çырнă çавăнта...

* * *

Тăшман путланнă... вăл пĕтнĕ. Ĕлĕкхи ђуралăх тĕнђи, пусмăр тĕнђи асра анђах йулнă. Ленин йертсе пынă Аслă Çĕнтерӳллĕ Октăпĕр Револђутсийĕ, мĕн пур капиттал тĕнђине кисретсе, çĕрĕн улттăмĕш татăкĕ çине сотсиалисăмăн хĕрлĕ йалавне çӳле-çӳле улăхса лартрĕ. Вут-хĕмĕн тĕнђипе ђалкăшса çав йалав пур тĕнђери мул хуçисен, капитталиссен куçне хăйĕн çиђђĕ çуттипе çунтарат̆.

Çав йалав ирĕке тухайманнисене йалан йăлтах ирĕке, çĕнĕ ырă пурнăçа тухма ĕмĕтлентерет, шантарат̆.

Çав йалав тĕнђипех аслă, хастарлă йулашки хут Револђутси пулассипе, ун хыççăн çĕр çинђе йăлтах çĕнĕ йĕрке—сотсиалисăм йĕрки пулассине пĕлтерет.

— Çав йалавăн йађĕ—ЛЕНИНИСĂМ.

— Ӑна ҫирӗппӗн тытса тӑраканӗ—Комуниссен парттийӗ, тӗнђери Комунислӑ парттисен пӗрлешӗвӗ—КОМИНТЕРН.

— Йалавӑн кӑвапи—МУСКАВ.

* * *

Тӑшман путланнӑ... Вӑл пӗтнӗ... Ӗлӗкхи ђуралӑх тӗнђи—пусмӑр тӗнђи асра анђах йулнӑ.

Анђах паттӑр та хӑй те вилђӗ... Тӑшман аллинђен мар—пурнӑҫ кӗрешӗвӗнђе...

Тӳпери хӗрлӗ йалав ҫумне хурлӑхлӑ хура пусма хушӑнђӗ. Мӗн-пур ӗҫхалӑх ђаплӑ паттӑршӑн хурланса траур[1]) иртерђӗ.

Вилђӗ пире йертсе пыракан.

— Анђах вӑл вилсен те унӑн шухӑшӗсем, унӑн ӑсӗ, унӑн ирӗкӗ, унӑн тӗп шухӑшӗ (итейӗ) халӑх хушшине йулнӑ. Кашни ҫын ђӗринђе паттӑрӑн ирӗкӗ пӑлханаҭ... Кашни ҫын мими унӑн итейӗпе ҫеҫ сарӑлнӑ...

...Мул хуҫисем хӗпӗртерӗҫ. Вӗсем савӑнса алӑ ҫупрӗҫ.

Тӑхтӑрха, тӑхтӑр—пулӗ хӗпӗртеме! Ытла ир савӑнма! —Ҫук! Тем ђухлӗ ҫӗнӗ йӗркене пӗтерес тесе тӑрӑшсан та, тем ђухлӗ иртсе кайнӑ ӗмӗре кайалла ҫавӑрас теттӗр пулсан та—ҫук! Сирӗн мар савӑнмалли!

Ҫук! Сирӗн мар иртнӗ пурнӑҫа кайалла ҫавӑрма! Вилнӗ йапала ђӗрӗлмест!

Тӑшмансем: «А-а!... пӗтӗҫха ӗнтӗ кусем хӑйсемех!» тесе хӗпӗртенипе шӑлӗсене ђӑмларӗҫ, пирӗн ҫийе ҫавӑрӗсене, хыпса йарас пек, хура ҫӑхансем пек, карђӗҫ.

Ҫук! Пире есӗр хыпса йарас ҫук! Шӑлӑрсем ванӗҫ!

— Мӗншӗн тесен, кашни пуҫ мимине Ленин ирӗкӗ тулнӑ.

— Мӗншӗн тесен, кашни ӗҫҫынӗн алӑ тымарӗнђе Ленин хастарлӑхӗ тапаҭ.

— Мӗншӗн тесен, кашни ӗҫҫынӗ—Ленинтсӑ!

— Мӗншӗн тесен, хађхи тӗнђе Ленин итейӗпе ҫеҫ пурӑнаҭ, Ленин вӗрентнӗ пек ҫапӑҫма, кӗрешме хатӗрленсе тӑраҭ.

* * *

Вунӑ ҫул.

Ђаплӑ пултарӑв хыҫҫӑн вунӑ ҫул иртрӗ. Вунӑ ҫул хушши ҫапӑҫу, кӗрешӳ... Вунӑ ҫул хушши тар-йун йухтарса ӗҫлени... Вунӑ ҫул хушши сотсиилисӑм никӗсне хывни...

— Акӑ ӑҫта пирӗн ҫул! Акӑ ӑҫта Ленина вађђи ђӗрӗ памӗтнӗк!

* * *

Хапрӑк-савӑт тру исем (мӑрйисем) пайан вӑрӑммӑн хӑйсен хура хӑрӑмлӑ кӑкӑрӗсенђен пур тӗнђипе йанраҫҫӗ: КОМУНИСӐМ ҪУЛӖ УҪӐ!...

Хурӑҫлӑ ђукун ҫулӗ тӑрӑх хӑвӑрттӑн малалла «Експресс»[2]) ђупаҭ; ҫулӗ ҫине: КОМУНИСӐМ СУКМАКӖ, тесе ҫырнӑ.

Йешӗл симӗс хирте хурӑҫ тӑрактӑр кӗрлетет. Ҫийӗнђе йалав, унта: ХРЕҪЂЕНПЕ ӖҪЛЕКЕН ҪЫХӐНӐВӖН НИКӖСӖ тесе ҫырнӑ.

Ҫӗр сӑнпиђӗ ҫийӗн ӗретӗн ӗретӗн параппан сассипе хастаррӑн ађасем утаҫҫӗ. Вӗсен йађӗ—ПИОНЕР. Вӗсен йађӗ—ҪАМРӐК ЛЕНИНТСӐ.

* * *

Ленин ӗҫне тӑвасах, унӑн шухӑшне малалла йарасах, унӑн тӗп шухӑшне пурнӑҫа кӳресех! —акӑ пирӗн умра йалан тӑракан сатађсем.

Ленин пуҫланине туса пӗтерме—акӑ кашнӑ Ленинтсӑшӑн тивӗҫлӗ ӗҫ.

Пурте Ленин пек пулӑр!.. Пур ӗҫе те Ленин пек тӑвӑр!..

---

## Йӑхрав шӑнкӑравӗ.

Ан вӑрҫ мана, атте, ан вӑрҫ мана,
Ҫӗнӗ йӗркене еп йуратнӑшӑн!
Пит кӑмӑллӑ вара ку самана,
Пит те кӑмӑллӑҫке вӑлӑ маншӑн!

Санпа пӗрле пыма еп ађа мар,
Сан ҫул—ҫӗрӗк ҫех, ман ҫул—ђӑн кранит
Ҫӗнӗ ҫула сӑрӑх шӑтӑк ђавма
Кӗреҫе те ес манран хађ ан ыйт...

Ђӗре ман хађ веҫех урӑх, веҫех:
Вӑлӑ хӗрнӗ хађ тӑвӑл вутӗнђе;
Пӑрӑн, атте, манран! Ђиркӳ—вӗҫех!
Кунта ҫӗн пурнӑҫ—ђиркӳсӗр тӗнђе!..

Кайар, савни, кайар кив тӗнђерен
Ҫӗн тӗнђене—телейлӗ пурӑнма!
Илтетни ес—йепле ав ҫӗнӗрен
Шӑнкрав хӗрсе тапраннӑ йанрама?

Шӑнкрав йанравӗ вӑл пире ђӗнет
Тӗреклӗ, ирӗк пурӑнӑҫ тума...
Ҫӗре пуҫланӑ кивӗ тӗнђене
Йӗмесӗрех тупӑк ӑшне хума!!!

Хурар, савни, йӗмесӗрех ђикер
Ҫав ҫӗрӗке хавассӑн тупӑка!..
Авал сӗм-тӗттӗмре шӑтнӑ ђурал
Вӑл та ӑна ђышаҭ хађ шӑтӑка.

Пӑхха: йепле хитре вӗҫет йалав,
Ҫӗн йурра ав йепле йурлаҫ ҫынсем!
Мӑлатукпа туслашнӑ йӗс ҫурла—
Ђӑнтан ҫӗн тӗс кӳртеҫ йала вӗсем.

Коммун патне ҫӗнӗ ҫулпа кайма
Сӑмах параҫ вӗсем ак пайан кун...
Мӑнкун, раштав вӗсемшӗн хађ май мар
Октапӗр ҫех вӗсемшӗн ђӑн мӑнкун!!!

Кайар, савни, кайар кив тӗнђерен
Ҫӗн тӗнђене—телейлӗ пурӑнма...
Илтетни ес—йепле ав ҫӗнӗрен
Шӑнкрав хӗрсе тапраннӑ йанрама.

**Йехрим Иванӗ.**

---

[1]) Траур— куђанни; кам та пулин вилнӗ пулсан—ӑна шелленипе куђанаҫҫӗ, траур паллисем ҫакаҫҫӗ.

[2]) Експересс—хӑвӑрт пыракан пойӗс,

# Пурлăх комиссарĕ




Интустри—-пурлăхăн тĕп шăнăрĕ.

*(Малалли)*

Хунăр йулташ пуçа тайса тĕлĕрсе пырат̆. Вăрман сывлăшĕ ăш-ţике çуса çĕнетрĕ. Пыр тĕпĕ çемçелсе кăтăкланат̆. Çунса хĕртекен ўпке-пĕвер лăпланţĕ. Ўт-пў выртса канасшăн· Ўт-тир киленкĕçлĕ сўленсе тăрат̆. Пуçра шухăшсем тĕтре пек тăмаланса иртеççĕ. Шупашкар... Мăн Çурт... Тĕп Ĕçтăвком... Комиссариат... Иртен пуçласа автан авăтиţţен ĕç... Вĕçĕмсĕр ĕç, халăх ĕçĕ, йал ĕçĕ мар—пĕтĕм ţăваш çĕршывĕн ĕçĕ. Халăх пурлăхĕн тытăмĕ. Халăх хуçалăхĕ, халăх кил-йышĕ, халăх пурăнăçĕ. Сĕм вăрман пек пысăк ĕç, сĕм вăрман пек хумханса кашласа тăракан мăн ĕç... Хресţен тĕнţи, тинĕс пек вĕçĕмсĕр тĕнţе. Имшеркке хуласем... ишĕлнĕ çулсем... çĕмрĕк кĕперсем... лăţăр-лаţăр йăнăшса ĕçлекен хапрăксемпе савăтсем. Йĕритавра йухăннă пурлăх, ишĕлме хатĕрленнĕ кил-çурт, хуçалăх... Тĕнţе вăйĕ кирлĕ çав пурăнăçа йĕркене кĕртме. Хисепсĕр мул. Хисепсĕр хастарлăх кирлĕ çав пур йĕре çĕнетсе ура çине тăратма. Етем ывăлĕ-хĕрĕ курман терт кирлĕ халăх пурлăхне çĕнĕ çул çине сĕтĕрсе кăларма. Çав хастарлăхпа, çав тертпе пуйан ţăваш ĕç халăхĕ. Ĕмĕртен тăм-хăйăр ţаваласа çăкăр тунă хресţенсем, ĕçпе пиçнĕ ţухăнсем, лашасăр та пĕр лашаллă хуçасем пурте—çĕр хурţĕсем. Ţăпта çапса, çăпата туса хырăма тăрантаракан мĕскĕнсем. Атăл тэрăх нушаланакан пурлаксем. Сĕм вăрмансенţе хĕвел çуттине курмасăр вăрман касса—турттарса асапланакансем. Тĕнţе тăрăх хапрăк-савăтсенţе ĕçлесе пурăнакан ţăвашсем. Уралра, Çĕпĕрте, Капкасра ĕç шыраса çўрекен хресţнсем. Тĕнţе тăрăх çĕнĕ çĕр шыракан, çĕнĕ çĕре куçма терт тытнă çемйесем. Çĕпĕр стантсисенţе выртакан выçа ţăваш аţи-пăţи. Пур тĕлте те ĕççĕр аптăранă етемсем... Пуç çаврăнат̆. Шухăш саланат̆. Тăн пуç анăрат̆ сирĕн çинţен тĕлĕрсен. Куç умĕнţе сĕм вăрманран хăватлă ţăваш ĕç халахĕ тăрат̆. Ĕçпе пиçнĕ, тарпа пĕвеннĕ, йуппа нумай сĕрĕннĕ етем пуçне усмаст̆. Ĕç халăхĕ, хура халăх çанĕсене тавăрнă. Унăн нĕрлешўллĕ вăйĕ çутçанталăкран хăватлă. Пĕр çын сурсан типсе пырат̆, халăх сурсан кўл пулат̆... Ĕç халăхĕ алтивĕççĕн тăрсан—ăна хирĕç мĕн тăрĕ, ăна хирĕç мĕн тўсĕ? Ţăваш çĕр-шывĕ çĕнĕ пусма çине улăхĕ. Ĕмĕрхи пусмăра ывăтса хуçалăха çĕнĕ тымарпа сыпса çĕнĕ çулпа аталантарĕ. Йал ţасах палламалла мар улăшăнса кайĕ. Пĕр лашаллă хуçалăх, виçĕ-туслă ана-çаран, ĕçлесе тăрантарайман пур-йĕр çухалĕ, çĕнелĕ... Ţăваш çĕр-шывĕнţе интусри çуралĕ, технĕккă аталанĕ, сотсиалисăм йĕрки карталанса тĕрекленĕ...

Кўме вĕçĕмсĕр шыв-шур таврашĕнţи хуралтăсем патне пырса тухрĕ. Татăк-татăк кўлсем, вĕçĕмсĕр лаţака. Вăрман пек хăмăш кашласа ларат̆. Йĕритавра пĕлĕт пек вăрăмтунапа ўпре вĕркĕшет.—Ак, хайхи, ирсĕр вырăна ţăваш лаţаки тесе виртлешеççĕ. Ахтономи лаţаки вăл, тесе мăшкăлаççĕ мурсем,—тет Таңук лашине тăварма хăтланса.

Хунар, унтан пырса çитнĕ иншенерсем хуралтăсем ăшнелле утаççĕ.

—Пирĕн лаţака хуралтисем тимĕрçĕ лаçĕнţен те ытла ţăплă мар... Анţах çак вăхăтлăха кăна. Есĕ, йулташ комиссар, ху пĕлетĕн: кăткă йăва пуçлас пулсан малтан нăрă шăтăкĕнţен те пĕţĕкçĕ шăтăк шăтарат̆, анţах талăк та иртмест—кусатран çўлĕш купа, тирпейлĕ кăткă кил-çурţĕ те пулса тăрат̆—тет ţăваш иншенерĕ утнă халлен.—Етем йăхĕ кăткăран ĕçţенрех, хăватлăрах... Епĕр шанатпăр—çавăнпа та пулат̆, тетпĕр... Çĕнĕ йĕрке шăнăçат̆, тымар йарат̆, хăват илет тетпĕр, ĕмĕр кисренми тĕрекленет, тетпĕр—тэт Хунар кулкаласа.

Хуралтăсене иртнĕ-иртменех малта пылţăк çинţе хĕрĕх-аллă ţăваш ĕçлекенĕ курăнат̆. Вĕсем комиссарпа иншенерсене курсанах ţавалашма ţарăнаççĕ, хăшĕ хирĕç тухса, типĕ çĕрелле тухса тăраççĕ.

—Сывăйха, йулташсем! Ĕçсем витĕнсе пыраççĕи?—тет Хунар çитнĕ-çитменех.

—Сыввине сывăтаçке. Ĕçсем питех ăнмарĕçха...

—Тата мĕн?

Ерттелтен пĕр çамрăк йĕкĕт малалла иртет. Вăл



—Епĕ лаţакана типĕтме пулат̆ тетĕп, терĕ ţăваш иншенерĕ вырăсне.

пус тасатаканран, кӑмака тӑваканран та ытла пыђђӑкпа варланса пӗтрӗ. Вӑл кулкаласа калама пуҫлат̆:—Ђи малтан мӗн калас... Ху та пӗлетӗн—ҫӗр ӗҫӗ йӑвӑр ӗҫ. А ку лађака ӗҫӗнђен ирсӗр ӗҫ те ҫуки тен. Ҫӗр кӑмрӑкӗ ђавалатӑн—вӑл йӑвӑр. Тӗрӗс, калама та кирлӗ—вӑл йӑвӑр. А, ку ӗҫ—ҫӗр ҫӑттӑр ӗнтӗ... ӑҫта пӳсмастӑн—мӑй таран путса анатӑн. Йӗритавра ишӗлсе кӑна пырат̆...

—Ку ӗҫ пулат̆и: ак кӗреҫене тытса ывӑтатӑп та, киле вӗҫтеретӗп,—тет пӗр сасӑ ерттелтен.

—Ан пӳлҫын сӑмахне... кирлине калат̆,—теҫҫӗ нумайӑшӗ пӗр харӑс. Малалла тухнӑ ҫамрӑк тытӑнкаласа тӑрат̆ те, тата калама пуҫлат̆:



Хунар комиссар нимӗн ђӗнмесӗр ҫармӑссемпе пӗрлешсе ише пуҫларӗ.

—Епӗр шалу ӳстерме ыйтас терӗмӗр те: тата те йурат̆, те йурамаст̆, тетпӗр. Ађасем хысна ӗҫӗ мар вӗт, хуҫа ӗҫӗ мар вӗт—хамӑр ӗҫ, теҫҫӗ... Ђӑнах та ӗҫӗ хамӑрӑнах пулас та. Анђах, каллех тата, мӗне кирлӗши вара ҫак ӗҫ, тесе те илетпӗр. Ђӑнах та, ӑҫта хумалла вара ҫак ҫӗр тирӗсне? Мӗн хапи пур ҫав ҫӗреке тӗк тӑнӑ ҫӗртен ђаваласа кӑларнийӗн?

Хунар кулкаласа илет те, ҫамрӑк сӑмахне пулет:

—Сире шалу ӳстерме хутӑмӑр, епӗ пӗр йенђен ҫавна пӗлтерме килтӗм те. Лађака кӑмрӑкӗ мӗнле усӑ панине, ӑна мӗншӗн епӗр ђаваланине ак ишенерсем каласа ӑнлантарӗҫ, вӗсем темӗн халиђђен сире каламан ҫав. Пӗр сӑмахпа каласан—ҫак ӗҫе тапратса майа йарсан, епӗр ҫакӑнта икӗ-виҫӗ хапрӑк-савӑт тӑвас тетпӗр. Сирех ӗҫ пулӗ, ҫак пылђӑк ӗҫӗнђен тасарах ӗҫ пулӗ. Тата мӗн каласси пур, тантӑшӑм?

—Вӑл хӑҫан пулат̆—пӗлместӗпӗр те. Тата ӗҫӗ те пӗртех те ӑнса пымаст̆. Алтнӑ канав шыв унтан йухнӑ йухманах ишӗлсе питӗрӗнђӗ. Ҫӗр ӗмекен машшинӑн йӗркине тупаймастпӑр. Асап ӗнтӗ—шӗшлӗ тыткалама хӑнахнӑ ала-урара мел сахал ҫав...

—Ну йурӗ, йулташсем, йурӗ. Епӗ ӗнтӗ: есӗр тӳрех сӑпаstувкӑ тума хатӗрленнӗ пулӗ, тесе шиклентӗм... А есӗр ӗҫе ӑнтарасшӑн терт тытнӑ иккен. Ат̆ӑрха еппин, пӗрле ҫав меле тупаймӑпӑри?—тет те Хунар, пиншакне пӑрахса ҫаннисене тавӑрат̆. Кӑна курсан ишенерсем те ҫийелти тумӗсене пӑрахса ӗҫлеме хатӗрленсе тӑраҫҫӗ.

Йӗритавра ђӑкӑлтӑш. Тӗрлӗ тӗлте кӑларса типӗтнӗ торх тӗмисем лараҫҫӗ. Торх кирпӗђӗсем выђӑх-ђӗрлӗх тирӗсӗнђен тунӑ кирпӗђсем йевӗрлӗ. Тӗмесен варринђе типӗрех ҫӗрте лутра пус тараси пек йапала курӑнса ларат̆.

—Ак ҫак тӑрнана куҫарса лартарха... Ав ҫавӑнта меллӗрех ҫӗре лартар, тет комиссар. Пурте Атӑл пурлакӗсем пек, харӑс кӗвӗлесе, машшинӑна куҫарса пыраҫҫӗ. Машшинӑна лађака кӑмрӑкӗ кӑларнӑ шӑтӑк хӗррине пырса лартнӑ-лартман ҫӗртем ђӑваш ишенерӗ шуса ӳкет те, шӑтӑка анса кайат̆. Вӑл кӑкӑр таран пылђӑклӑ шыв ҫине кӗрсе тӑрат̆. Ишенера пулӑшас тесе ӑна хулӗнђен тытат̆ те, Хунар та ун хыҫӗнђен пӗҫтӗпӗ таранђђен анса ларат̆. Ӗҫлекенсем ђупкаласа пырса вӗсене сӗтӗрсе кӑлараҫҫӗ.

—Ак инкек, ак синкек... вара варлантӑр пулӗ? йӗпентӗр пулӗ?—тесе пӗр ватӑ ђӑваш пӗҫҫине шарт! ҫапса тӑрат̆.

Хунарпа ишенер ахӑлтатса кулса тумӗсене пылђӑкран тасатаҫҫӗ. Хунар аттисене хывса шыва тӑкат̆ те, пурттенкине пӑрса типӗтсе ҫӗнӗрен тӑхӑнат̆. Машшинӑ патӗнђе ишенерсем кӑшт ҫалланкалаҫҫӗ те вӑл ӗҫлеме тытӑнат̆.

—Ак хайхи тӑрна-мӑй ӗҫлет те, катӑршнӑй,—тет ерттел хавасланса.

—Сире мунђа кирлӗ ӗнтӗ йӗпеннӗ хыҫҫӑн, мунђа та пӗр-икӗ курка ерех,—тет кулӑшкаласа ватӑ ђӑваш.

—Мунђипе ерехре ӗҫ тӑрат̆ пулсан йурӗђђӗ те... сывлӑх ҫук ман, кӑкӑр пӑсӑлђӗ... ҫавӑнтан хӑратӑп,—тет Хунар сивӗпе ђӗтӗрекелесе. Комиссар Тађука лаша кӳлме, ишенерсене вӑрман савӑтне кайма хатӗрленме хушат̆. Хӑй, йулашкинђен, ӗҫлекенсене ҫакна каласа уйӑрлат̆:

— Тӑвансем! Хӑшӗе сӗр йулташсем, хӑшӗ тантӑшсем пулатӑр. Ӗҫӗр сирӗн йӑвӑр, таса мар ӗҫ. Анђах епӗр ӗмӗртен ҫапла ӗҫе хӑнахнӑ вӗт. Атӑл тӑрӑх сулӑ хӑвалама, Атӑл тӑрӑх тетел туртса пулӑ тытма, шахтӑсенђе кӑмрӑк ђавалама, ђукун-ҫул кађӗсене хывма та ҫӑмӑлах марђӗ. Ӗҫ йӑвӑр тесе ан йӳҫӗнкӗленӗр. Мӗн



Ђӑваш савӑђӗ ӗҫлет... Хӑма савӑђӗ.

вӑй ҫитнӗ таран епӗр сире пулӑшӑпӑр. Мӗн ҫитмесси пулсан тӳрех хама калӑр. Лађака кӑмрӑкӗ—пирӗн хисепсӗр пысӑк пурлӑх. Ӑна пула епӗр промышлӗннӑҫ тума ӗмӗтленетпӗр...

—Ђипер кай ӗнтӗ, ырӑ ҫыннӑмӑр, сыв пул комиссарӑмӑр,—теҫҫӗ ерттел ҫыннисем.

* * *

Кӳме вӑрман ҫулӗпе Атӑл йеннелле йухса пырат̆. Хайӑрлӑ ҫулпа кусатрансем пӗр сасӑсӑр ҫавӑрӑнса

пыраҫҫӗ. Таңук ӑйӑра хистех пырат̆, хӑй ӑна хистенӗҫем такмакласа пырат̆:

—Ей, ей, ђӗлхесӗр йанавар! Ђӑваш лађаки йулђӗ ӗнтӗ. Кирлех мартӑр та ҫав сирӗн ӗҫӗр, пуҫлӑхӑм? Ак вӑрман касса хӑма ҫурни—вӑл ӗҫ, усӑллӑ ӗҫ... Лађака ҫинђе мӗн халӑха асаплантармаллаши ӗнтӗ?..—Хунар пӗкӗрӗлсе ӗнтӗркесе ларса пырат̆. Пӗтӗм ӳтпӳ ӗшенсе лашт кайнӑ пек туйӑнат̆. Пуҫра савӑнӑҫлӑ мар шухӑшсем вӗђӗлтетеҫҫӗ.

Ӗнтӗ виҫ-тӑватӑ ҫултанпа ҫав торх ӗҫне хӑпартасшӑн асапланатпӑр. Малтан торх пурне-ҫукне, вӑл нумайине-сахаллине тӗпђесе пӗлме кирлӗ пулђӗ. Унтан торх лайӑхлӑхне, унӑн хӑватне виҫсе ђухлама кирлӗ пулђӗ. Ҫулсем иртеҫҫӗ. Електрификатси планӗ улӑшӑнса пырат̆. Патшалӑх ҫывӑх ҫулсенђе пире пулӑшаймаст̆ ахӑр. Атӑл сӗмвӑрманӗнђе ђукунҫул хывма турӑмӑр—хӑват ҫитеймерӗ. Нумайӑшӗ йулташсем: пӑрахас ҫав ӗҫе—нимӗн те тухмаст̆, теҫҫӗ. Анђах Сӗве хулинђех пысӑк електрӑстантси туса лартаҫҫӗ. Мӗншӗн епӗр тӑвас мар? Мӗнле майпа тата епӗр ҫӗкленейӗпӗр? Хамӑр халпа та пулин ҫав стантсӑна туса ҫӗнӗ промышлӗннӑҫ никӗсне хывӑпӑр... Пӗр пуканне те пулин лартӑпӑр. Уйӑрлӑнӑ ђухӑн ҫын малтан пӗртен пӗр шалђа кӑна лартса ҫурт-йӗр ҫавӑрма пуҫлат̆. Епӗ те ҫав пӗртен пӗр шалђана лартатӑп... технӗккӑллӑ интустри шалђине лартатӑп...



Иншенера пулӑшас тесе, ӑна хулӗнђен тытат̆ те, Хунар та лађакана путса ларат̆.

Хыҫалта иншенерсем тӑрантас ҫинђе тавлашса пыни илтӗнет. Вырӑс иншенерӗ йалан: пулмаст̆, нимӗн те тухмаст̆, кивӗ хатӗр хапрӑк-савӑтсене те ӗҫе кӳртме сирӗн вӑй ҫук, тет; ђӑваш иншенерӗ ӑна хирӗҫ: пулатех, ђӑваш автономийӗ хӑй хастарлӑхӗпе малашнэ тӗлӗнмелле ӗҫсем тӑватех, тесе пырат̆.

Малта вӑрман савӑђӗ курӑнат̆. Атӑл тӑрӑх ђаплӑ пуйан савӑђӗ пулнӑ вӑл. Йал пек пысӑк савӑт. Савӑт ӗҫпе вӗресе тӑрат̆. Хисепсӗр нумай ђӑваш хресђенӗ ҫав савӑта пӗрене турттарат̆. Лашасем, етемсем кӑткӑ йӑви пек кӗшӗлтетеҫҫӗ. Атӑл хӗрринђе сулӑсем саланкаласа лараҫҫӗ. Машшинӑ хӑвађӗпе пӗренесем умлӑхыҫлӑ йӑнӑша-йӑнӑша пӗр ҫулпа ҫӳлелле хӑпараҫҫӗ те савӑт ӑшне ђикӗнсе ҫухаласҫӗ. Савӑт шаккат̆, ҫӑтӑртатат̆, пӗтӗм таврана ђӗтӗретсе тӑрат̆. Ђӑваш савӑђӗ ӗҫлет... ђӑваш хапрӗкӗ ӗҫлет...

Хунар лаша ҫинђен аннӑ анманах ӑна ӗҫлекенсемпе хресђенсем йӗритавра ҫавӑрса илеҫҫӗ. Пурин те калас сӑмах пур: кам ӗҫ хакне ӳстерме ыйтат̆, кам технӗксемпе мастӗрсем тӗрӗс мар ӗҫленине кӑтартат̆, кам тата хӑйӗн киiти нушине каласа пама тапӑнат̆... Савӑт ӗҫӗ—пысӑк ӗҫ. Савӑт ӗҫӗ вӑл пӗр кил-ҫурт ӗҫӗ мар... Хунар йулташ темиҫе ҫултанпа фапрӑк-савӑт ӗҫӗпе пиҫнӗ. Вӑл ӗнтӗ темиҫе ҫултанпа ђӑваш ҫӗр-шывӗнђе халӑх пурлӑх тытӑмӗнђе вӗресе пурӑнат̆. Ҫапах



Выҫлӑх. Нуша. Ҫӗпӗ ҫӗре ьуҫма терт тытнӑ ҫемйесем.

та, ӑҫтан пурне те пӗлсе ҫитерейетӗн? А пӗлме кирлӗ. Шӑрпӑкпа пӑта таранђђен вӑл ӑҫта выртнине, вӑл мӗншӗн кирлине пӗлме кирлӗ. Хунар пӗтӗм савӑта тишкерсе пӑхса тухат̆. Пур ӗҫлекенсемпе курӑнӑҫса мӗн кирлине ыйтса тухат̆. Йулашкинђен вӑл иншенерсемпе кантура кӗрсе вӑраххӑн хисеплешсе ларат̆.



Уралта, Ҫӗпӗрте, Капкасра... Стантсасенђе выртакан выҫӑ ђӑваш ађи-пӑђи.

—Пурӑнӑҫи унӑн... есӗр улпут пек лаша ҫинђе кӑна ларса ҫӳрет, тетӗр пулӗ. Пӗлетре—вӑл талӑкра тӑватӑ-пилӗк сехет те ҫывӑраймаст̆, сывлӑхӗ пулсан тен ыйхӑсӑрах пурӑнађђӗ,—тет Таңук ӗҫлекен ђӑвашсемпе ђӗлӗм турткаласа ҫӳресе.

Ҫӗҫӗсем ђуна хайарран тивертсе ђанкӑртатаҫҫӗ, пӗренесем пусас вӑкӑрсем пек пырса выртса мӗкӗреҫҫӗ, хӑмасем ҫухӑрса йӗрсе ҫуралаҫҫӗ. Савӑт ӗҫлет. Етем вӑйӗ хутне кӗрекен машшинӑ ӗҫлет.

—Малашне тырӑпулла та ҫапла ӗҫлемелли мел тупсанђӗ... пулӗђђӗ те пурӑнӑҫ,—теҫҫӗ ӑлавҫӑсем.

—Комиссар пулатех тет. Машшинӑна кӳлетпӗрех



Ӗҫпе писҫнӗ, тарпа пӗвеннӗ етем пуҫне усмаст̆. Ӗҫ халӑхӗ ҫанӗсене тавӑрнӑ... Ђӑваш ҫӗр-шывӗ ҫӗнӗ пусма ҫине улӑхӗ.

тет. Пулӗ те ҫав. Вӗсем, тен, ахалех терте тытмантӑр, тет. Таӈук ђӗлӗм паклаттарса тӑрса.

Кантурта шавласа калаҫаҫҫӗ. Вырӑс иншенерӗ: пур Атӑл тӑрӑх ларакан савӑтсене ҫӗмӗрсе пӗрле пуҫтарса Куславкка таврашне куҫарса лартмалла, тет. Ђӑваш йншенерӗ: савӑтсем вырӑнӗсенђех лармалла, вӗсене ҫав вырӑнсенђех аслӑлатмалла, тет. Хунар йулташ та питӗ вӗриленсе калаҫат̆:

—Тӗрӗс — пирӗн савӑтсем нађар. Вӗсене хуҫасем хӑйсене усашӑн кӑна ђухласа лартнӑ... Вӗсене ҫӗнетес пулат̆... Вӗсем вактӗвек машшинсемпе ӗҫлесе малашне усах параймӗҫ. Вӗсене тӗнђе технӗкки картишне кӳртес пулат̆... Нумай та вӑхӑт иртмӗ — канашлӑ патшалӑх хуҫалӑхӗ тӗпӗ-йӗрӗпе интустриленсе кайӗ. Пур вак-тӗвек савӑтсемпе хапрӑксене вутта кӑна ватса салатмалла пулӗ. Малашне акӑш-макӑш хӑватлӑ савӑтсем кӑна кун курӗҫ. Ҫавӑнпа Куславкка таврашӗнђе халиђђен Атӑл тӑрӑх пулман пысӑк савӑт лартма епӗр тӑрӑшмалларан тӑрӑшмалла. Анђах ӑна пайан тӑваймӑпӑр, ыран та тӑваймӑпӑр. Пайанхи кун—хамӑр алӑри савӑстене ђӑнтан ӗҫлеттерсен те йурӗђђӗ. Унтан, ђӑнтан промышлӗннӑҫ ҫинђен калаҫас пулсан, епӗ каллех торх ҫинђен асӑнмасӑр пултараймастӑп. Пирӗн пурлӑхӑн тӗп шӑнӑрӗ ҫав лађакасенђех путса пытанса выртат̆. Ну, калаҫу ҫитеттӗр—килелле уттарас... ман пайан тата икӗ ларура пулмалла халӗ...

Пурте тӑраҫҫӗ те кантуртан хыпаланса тухаҫҫӗ.

(*Малалла пулат̆*).



ОКТӐПЕР 10 ҫул тултарнӑ тӗле ШУПАШКАРТА ҫак ҪУРТА туса ПӖТӖРМЕЛЛЕ.

**Елкер.**

# Улăп.

## Ум сăмахĕ.

«Улăп» йатне асăннине пур çĕрти ђăвашсем хушшинђе те илтме пулат̆. Анђах мĕнлескер, кам пулнă çав Улăп?—Ун çинђен никам та пат татса ăнлантарса параймаст̆. Ваттисенђен нумайĕшĕ: Улăп вăл сĕм авал, темле, тĕлĕнмелле çӳренĕ питĕ пысăк пăхаттир пулнă, теççĕ. Тепле, сайраран, хăш пĕрисем çех вăл мĕнле çӳрени çинђен калакалаççĕ. Анђах тĕрлĕ вырăнти ђăвашсем тĕрлĕ май, урăхларах калаççĕ.

Улăп йумахĕ вăл ђăваш халăхĕн сĕм авалхи пурнăçĕ çинђен пĕлтерекен йумах. Çакнашкал йумахсем вырăссен те «Иђйа Муромец», «Çваттокор» текеннисем, тата урăххисем те пур. Хусанти вилкĕ Каттанăв професссăр çырнă тăрăх, Улăп çинђен калакан йумахсем тӳрк халăхĕсем хушшинђе пуринђе те пур. Анђах ку халăхсем ăна пурте «Улăп» темеççĕ, хăшĕ—Алăп, хăшĕ—Алиф, теççĕ. Çавăннах кăркăссен «Атша» йатлă Улăпĕ çинђен çырни пур (Известия Казанск. О-ва Археологии и Этнографии, том—XIII, вып.—1). Анђах Атша—Улăп ытла та сĕм авалхи ĕмĕрсенђе пурăнат̆. Ђăвашсен «Улăпĕ»—ђăваш халăхĕн, вăл выђăх кĕтĕвĕсемпе çӳрессине пăрахса çĕр ĕçĕ çине куçас умĕнхи пурнăçĕ çинђен пĕлтерекен йумах. Ку Улăпа ватă амăшĕ калакан сăмахсенђен аван палăрат̆. Апла пулсан ђăвашсен Улăпĕ-кăркăссен Атшинђен ђылай кайран пурăннă.

Епĕ ку поемăна Улăп çинђен ђăваш хушшинђе калакан татăк-кĕсĕк халлапсене пухса, хăшне-пĕрне «Атшаран» илсе тата хамран та шухăшласа çырнă.

1927 çул, авкустăн 15-мĕшĕ.

*Автăр.*

I.

Тахçан ĕлĕк, сĕм авал,
Калама та çитмест хал,—
Аслă Атăл хĕрринђе
Тĕрлĕ халăх хунађђен,
Ирĕк ĕшне-уйсенђе
Ђухăн йалсем курнађђен,
Хусан хули ларађђен,—
Мускав ђапĕ сарлађђен—
Алтай тусем патĕнђе,
Çут çеçен-хир варринђе
Пĕр мăн ђатăр ларнă, тет,
Кунта Улăп пурăннă, тет.
Аслă пулнă ку ђатăр:
Урлăш-пирлĕш—пин çухрăм,
Çӳллĕш—пĕлĕт çӳллĕшех;
Курăннă вăл сăрт пекех.
Пурăннă Улăп пĕђђен мар,—
Ватă, шурнă амăшне,
Çĕр ĕçлесе, акса мар,—
Йăшлă выђăх кĕтĕвпе.

***

Улăп пĕвĕ ађаллах
Иртнĕ вăрман пĕвĕнђен.
Ăсне-халне çамрăклах
Палăртнă вăл пур йенђен.
Йышлă выђăх ђĕрлĕхрен
Каскăн, паттăр Улăпăн
Пулнă пĕре уйрăмах.
Çил çунатлă урхамах.
Урхамахне утланса
Улăп тăтăш çӳренĕ,
Куракла уй шыраса
Урлă-пирлĕ вĕçтернĕ.
Ђупнă ђухне урхамах
Урисене палăртман,
Улăп сасси йаланах
Ăна ывăнма паман.
Вăл пынă ђух çĕр çинђе
Йанкар-тусан хускалнă,
Çеçен хирсен варринђе
Тăвăл тухса арканнă.

***

Ак çитет вăл инçетри
Вилĕм патши çĕр шывне,
Çапат̆, çĕмрет çак çĕрти
Çын çийекен патшана;
Пырса кĕрет айакри
Хăмăшлă кӳл хĕррине,
Ђикет çакат̆ улăхри
Çиђĕ пуçлă çĕлене.
Уй-уй тăрăх пынă ђух
Арăсланасем тĕл пулат̆,
Арăслансен тĕрек çук—
Вăл пурне те лапђăтат̆.
Çамрăк Улăп пынинђен
Пурте хăрат̆, çӳçенет,
Урхамахĕ ђупнинђен
Сарлака хир кисренет;
Çӳллĕ сăртсен тăррине
Пĕр сиктерет, хăпарат̆,
Кавсăлнă вак ђулсене
Ђăл-пар, тавра салатат̆.
Çӳллĕ тусем тăррине
Йурлат̆ Улăп киленсе:
«Çӳл ту çине хăпарма
Çил çунатлă ут кирлĕ,
Ват аннеме йурама
Вут ђĕреллĕ çын кирлĕ»...
Улăп сасси аслати,—
Йантрат̆, карлат̆ çĕмĕрлсе,
Унăн йурри—хир кĕвви,
Авкаланат̆ ирĕкре.

***

Ђуллă сăртсем тăррине
Пăхат̆ Улăп тавралла,
Мĕн-мĕн курăннисенђен
Хавасланат̆ малалла.
Хăй çĕр-шывне вăл пăхат̆:
Хăйăр хирсене курат̆,
Вашлаттарса çил тухат̆.
Вĕри хăйăр алхасат̆.
Кăнтăр йенне вăл пăхат̆:
Ђуллă сăртсене курат̆,
Çӳллĕ тусем хыçăнђе—
Инти... шыв-шурлăх çинђе!
Хĕвел тухăçне пăхат̆—
Киттай çĕр-шывне курат̆:
Кăткă пекех лăнк халăх,
Йăшăлтатат̆—патшалăх;
Çурçĕр йеннелле пăхат̆:
Сĕм-сĕм вăрмансем курат̆,
Сĕм вăрмансем тăрăнђе
Йур-тăвăлĕ ахăрат̆;
Хĕвел анăçне пăхат̆—
Курнисемпе ăнтăхат̆:
Урхамахне тăратсах
Пăхат̆, ђул пек вăл хытсах:
Тикĕс, симĕс çеремсем
Айăмсенђе курнаççĕ,
Ката-ката вăрмансем
Кашăлтатса ларaççĕ;
Симĕс çеремĕсенђе
Вак çырмасем йухаççĕ,
Çăра вăрманĕсенђе
Вĕт кайăксем пăркаççĕ.
Улăх-васан тĕпсенђе
Çӳллĕ кăлкан хумханат̆,
Вак çырмаллă уйсенђе
Шевле ђупса выђанат̆.
Çаксем çинелле пăхсан
Улăп ђунĕ савăнат̆,
Пĕтĕм шухăш тăрăлсан
Çак çĕре вăл кăмăллат̆.

***

Çитет Улăп ђатăрне,
Курат̆ унта амăшне;
Тин çеç мĕн-мĕн курнине
Калат̆ ăна йĕркипе.
Тĕнђен виçĕ кĕтесне
Кала-кала вăл хурлат̆,
Хĕвел анăç çĕр шывне
Мухта-мухта пахалат̆.
Çакă тикĕс уйсене
Улăп ђунĕ туртăнат̆,
Хăйĕн ватă амăшне

Унта куҫма вăл ҫаврат̆.
Выђăх ђĕрлĕх йышлипе
Пурăнма хĕн Алтайра,
Хăш ђух кунĕ-кунĕпе
Пысăк кĕтӳ выҫлăхра.
Ҫак выҫлăхран пăрăнса
Улăп халех кайасшăн,
Хĕвел анăҫне куҫса
Канлĕ вырăн тупасшăн.
II
Йăш Улăпăн ӳснипе
Йăвăрланат̆ шăм-шакки,
Урхамахĕ майĕпе
Хăрсах пырат̆ ват пирки.
Пĕррехине ҫул ҫинђех
Хавшаса вăл такăнат̆,
Таҫти йут хир варринђех
Вилет ҫакскер, хускалмаст̆.
Урхамахне хĕрхенсе
Улăп хытă куђанат̆,
Хуйхă пирки ĕшенсе
Ђатăр умне вăл ҫыврат̆...
Каҫ та пулат̆, ир пулат̆—
Улăп паттăр хускалмаст̆,
Ҫу та иртет, хĕл каҫат̆—
Ҫавах та вăл вăранмаст̆.
Хĕрĕх те пĕр уйăх лăп,
Виҫ ҫул ҫурă йахăнах
Тапранмаст̆ те ҫак Улăп,
Ҫывăрат̆ вăл пĕр майах.
Унăн вăтă амăшĕ
Ђĕнет ăна вăранма,
Вăл шăпăртах выртнăран
Пуҫлат̆ ĕнтĕ хăрама.
Хĕрĕх те пĕр уйăхран
Улăп хăйех вăранат̆,
Ыйхи ытла йăвăртан
Иртнине ним астумаст̆.
Виҫ ҫул ыйхă хушшинђе
Унăн пĕвĕ ӳснĕ мĕн!
Патвар шăмми-шаккине
Хăватлă вăй кĕнĕ мĕн!
Ытла ҫӳллĕ ӳснипе
Ђатăрне вăл шăнăҫмаст̆
Ҫӳлĕ тусем тăррине
Тап пусат̆ те хăпарат̆.
Улăп ҫӳллĕ—ун пекки
Ним те ҫуктăр ҫĕр ҫинђе,
Вăл утнă ђух, кĕлетки
Курнат̆ тĕнђе хĕрринђен;
Тӳрех тăрса кармашсан
Пĕлĕте вăл ҫăлăхат̆,
Шыв ĕҫесшĕн ăш хыпсан
Пĕлĕтсенђен шыв ăсат̆;
Ҫиес килсен—ҫимĕҫне
Пĕр аллине вăл тытат̆,
Ăна хĕвел айĕнђе
Тытса тăрса ăшалат̆.
***
Пĕрре ђылай ҫӳресен
Утат̆ Улăп кил йенне,
Ҫитес ђухне, кил тавра,
Кĕтмесле вăл мĕн курат̆?
Кашни ик-виҫ утасра
Выђăх вилли вырткалат̆.
Йышлă выђăх куракс̆ăр
Выҫ тапраса хирĕлет,
Пурнăҫ хĕсĕк, йурăхсăр,—
Улăп каллех тĕмсĕлет.
Каллех ĕнтĕ ун пуҫне
Хĕвеланăҫ хускатат̆,
Вăйлă паттăр ĕмĕтне
Илĕртсех вăл выђатат̆.
Ђăн та Улăп мăн ĕҫне
Ђăсса пымаст̆ вăраха,
Нимшĕн те мар ку йенне,—
Тарăхат̆ вăл выҫлăха.
Пĕрре пĕтĕм выђăхне
Пĕр кĕтĕве вăл пухат̆,
Кивĕ ђатăр пурлăхне
Пухат̆, ҫыхат̆ те йăтат̆,
Тĕрлĕ хатĕр таврашне
Ҫакат̆ самăр пилĕкне,
Вăтă карђăк амăшне
Хăвма хушат̆ кĕтĕвне;
Алтай ҫĕршывне пăхса
Аллипе вăл ласт,—сулат̆,
Хăй ђи малтан ҫул тытса
Ҫĕнĕ ҫĕре хускалат̆.
Сулăнат̆ вăл виттĕрех
Хĕвел анăҫ йеннелле,
Сукмак-ҫулсăр, нимсĕрех,—
Ылтăн палан йĕррипе.
III.
Куҫнă ђухне йут йенђе
Улăп тем те тĕл пулат̆,
Хĕн хăрушлăх умĕнђе
Йалан паттăр хăтăлат̆:
Унăн ҫулне картлакан
Сĕм вăрман та тупăнат̆,
Хумханайса шавлакан
Йухăм шыв та тĕл пулат̆;
Ҫулне уҫса парађђен
Улăп ђарат̆ кĕтĕвне;
Хăш вырăнта ђылайђђен
Пӳлсе тăрат̆ хăй ҫулне.
Сĕм вăрмансем тăррипе
Йарăнса ҫеҫ вăл утат̆,
Туналлă пĕҫ хушшипе
Йăвăҫсене хăварат̆;
Вăтă ђăрăш-хырсене
Пĕрре туртат̆, кăларат̆,
«Ерĕм *) пек ҫеҫ» вĕсене
Таҫта ҫитех ывăтат̆.
Ҫав тасатнă тĕлсемпе
Пысăк ҫулсем вăл хыват̆,
Хăй кĕтĕвне вĕсемпе
Вăрман витĕр кăларат̆;
Аслă шывсем пулсассăн
Кĕрсе тăрат̆ шыв варне,
Кĕтĕвне пĕр канассăн
Каҫарат̆ ик аллипе.
***
Ђылай вăхăт иртейсен
Курат̆ Улăп Атăла,
Атăл улĕх хитререн
Кайат̆ ăна кăмăла;
Кунта йешĕл вăрмансем
Нӳрĕ ҫилпе хумханнă,
Вакă, ăшăх ҫырмасем
Шăнкăртатса йухайнă.
Атăл икĕ йеннипех
Пĕђĕк уйсем выртайнă,
Уйĕсенђе туллийех
Ҫӳллĕ курăк ђăшкканнă...
Ҫак ырлăхлă ҫĕрсенђен
Улăп иртсе кайаймаст̆;
Ҫакна Алтай сăртсенђен
Курнине вăл астăват̆.
Савăннипе вăл вара
Карат̆ кунта ђатăрне,
Атăл тăрăх улăхра,
Сарса йарат̆ кĕтĕвне;
Ывăннă ват амăшне
Вырнаҫтарат̆ ђатăра,
Куҫас, ҫĕнҫĕр шухăшне
Тин ђарат̆ ҫак ырлăхра.
***
Ҫĕнĕ ҫĕре вырнаҫсан
Улăп лăпкă пурăнат̆,
Тăтăш кăна ђатăртан
Тухайса вăл ҫаврăнат̆;
Йе хăш ђухне ђатăрне
Майлă уйа куҫарат̆,
Ирĕк Атăл улăхне
Ђунтанах вăл йуратат̆.
Пĕрре, Улăп уттарат̆
Хура тинĕс йеннелле,
Ҫите-ҫите вăл курат̆
Тĕрлĕ тĕрлĕ ҫĕрсене.
Уйсем урлă утнă ђух
Вăл вĕт ҫынсем тĕл пулат̆,
«Мĕн-ши кусем; етеђу-у-ух!..»
тесе Улăп шухăшлат̆;
Пĕђĕк ҫынсем тăрăшса
Уйĕсенђе ђупаҫҫĕ,
Кăшкăрашса айăкашса
Ҫеремсене ђаваҫҫĕ;
Лӳппер лаши хыҫĕсенђен
Купташкасем кăкарнă,
Купташкасем хыҫĕнђен
Етеммисем уртăннă.
Вĕсем уйа хуратса
Унта темскер сапаҫҫĕ,
Симĕс курăка хăртса
Пĕтĕм ҫĕре пăсаҫҫĕ.
Улăп ҫак вĕт ҫынсене
Тыта тыта пуҫтарат̆,
Кăвакарђăнсем, пуђ тесе
Илсе кайат̆ ђатăрне;
Унта амăшне курсан
Хăй ҫынсене кăтартат̆:
Пăх-ха, анне, еп пайан
Кăвакарђăнсем тытрăм, тет;
Тăшман мĕн ку кайăксем,
Уйа-хире ђаваҫҫĕ,
Вĕсем ҫинĕ ҫеремсем
Пĕр курăксăр йулаҫҫĕ.
Кусем нумай ĕрђесен
Хăрушăҫке пире те,
Пур курăка пĕтерсен
Выҫ аптратĕҫ кĕтĕве...
Йепле вĕсен купташки

*) Ерĕм – армути.

# „ЂӐВАШ ҪӖРШЫВӖ“ КИНО КАРТТИНРАН.



Ђӑваш хӗрарӑмӗн кулленхи ӗҫӗ.



1923-мӗш ҫулхи йалти шкул. (Ҫӗнйалта ӳкерне, Шуп. у.).



Ҫамрӑксем „кӑлараҫҫи-кӑлармаҫҫи“ йатлӑ вӑййӑра.



Ҫӗн Ҫырма (Ҫӗрпӳ у.) хӗрӗсем ташлаҫҫӗ.

---

Ҫӗре ҫырса шӑййӑрат̆,
Курӑксен ђи йулашки
Тымарсене кӑларат̆.
Ку инкеке сирмесен
Пире каллех мӗн кӗтет?
Хађ Алтайра тӳснӗ пек
Каллех выҫлӑх ҫитӗ, тет.
Ҫак ҫынсене курсанах
Калат̆ Улӑп амӑшӗ:
—Хађ мар вӗсем,—тахҫанах
Ҫав йеннелле пурӑнчӑ;
Кӑвакарђӑн мар вӗсем,—
Ҫӗр ӗҫлекен етемсем;
Хӑрушӑ мар пирӗншӗн,
Сийенлӗ мар кӗтӳшӗн...
Ађам! акӑ, ес ху та
Мӑшӑр тупса авлансан,
Пулӗ санӑн йӑху та,
Ађупђусем пулӗҫ сан.
Ађусенђен ӗрђесе
Тухӗ паллӑ пысӑк йӑх;
Анђах пурте вӗтелсе
Ҫак ҫынсем пек пурӑнӗҫ.
Сан йӑху та улшӑнса
Ҫак ҫынсем пек хӑтланӗ.
Вӑл кӗтӗве пӑрахса,
Ҫӗре ђавса тӑранӗ.
Ан тив, ађам, ҫӳређђӗр,
Хӑйсен ӗҫне ӗҫлеђђӗр.
Епир вилсен малашне
Ҫавсем тулӗҫ ҫӗр ҫине.

* * *

Хӑй амӑшне итлесе
Улӑп йарат̆ ҫынсене,
Ӳлӗм нихҫан тивмесse
Сӑмах парат̆ вӗсене.
Ђӑнах, вӑйлӑ пулсан та
Кайран ҫынна вӑл тивмен,
Нимскере те, нихҫан та
Ахађ ҫинђен пӗтермен.
Килӗнђен ҫеҫ тӑтӑшах
Тухайса вӑл ҫӳренӗ,
Вӑл йаранса утсанах
Атӑл шывӗ ђӳкеннӗ.
Улӑп утни таҫтанах
Уйсем урлӑ курӑннӑ.
Сасӑ парса тӑрсанах
Кӗтӗв патне пухӑннӑ.
Атӑл тавраш вӑрманлӑх,
Вӑрманлӑхра ушахлӑх*),
«Улӑп ури» йӗррисем
Путса йулнӑ ушахра.
Хӑш ђух ури тӗпсене
Пылђӑк-тӑпра ҫыпҫӑннӑ,
Урисене силлесе
Вӑл тӗмесем хӑварнӑ.
Ҫав путӑксем, тӗмесем
Йулнӑ пире тӗлӗнме,
Ӗмӗр хыҫҫӑн ӗмӗрсем
Пайӑр **) курсах ӗненме.

*) Ушах—лађака, шурлӑх.
**) Пайӑр—уйрӑм-уҫҫӑнах, пат татӑклӑнах.

**Таниле Макçăмĕ.**

# ИРĔКЛĔХШĔН ÇАПĂÇАКАНСЕМ.

Партисанта çӳренĕ ВАÇКА йулташа асăнса çыратăп.

I

Çĕпĕр йалĕсем сывламалла мар вĕри тусан ăшĕнҫе хупланса лараççĕ. Тинкерсе пăхсан анҫах, пăртак çеç, лапсăркка кетр*) тăррисем курăнаççĕ.

Хĕвел хĕртсе пăхаҭ, тӳсмелле мар шăрăх. Çилĕ урнă пек тулаҭ, такам çине çиленнĕ. Урамри тусана вĕçтерсе, пĕлĕт çумнех кайса çыпăçтараҭ. Куçа уçса пăхма та çук, хулăпа çапнă пек çапаҭ.

Йалта пурте—етемсем, выҫăх-ҫĕрлĕхсем, кайăк-кĕшсем—пурте пуçĕсене усса çӳреççĕ. Нихăçан та вĕрме ҫарăна пĕлмен Палккан та, хӳрине пĕç хушшине ҫиксе, пуçне пĕшкĕртсе, хăлхисене лашт йарса, хуллен кăна утса лăпсăркка ҫăрăш айне кĕрсе выртрĕ.

Сасҫӳ илтĕнмест. Çил анҫах шавлаҭ, урамри тусана пĕрре те вырăнта лăпланса выртма памасҭ. Тата çырма шăнкăртатса йухни йаланах илтĕнекенҫĕ, халĕ вăл та илтĕнмест; вĕри тусанпа çил айĕнҫе çухалнă.

— Вилсе пĕтнĕшим вара пурте?...

— Çук вилмен, пурте ҫĕрĕ!

— Мĕншĕн сасхура илтĕнмест, мĕн те пулин пулнăшим?..

— Çук нимĕн те пулман,—тесе икĕ çитĕннĕ хĕр, урамра пăлтăр умĕнҫе калаçса тăраççĕ. Хăйсем, куçĕсене тусан вĕçсе кĕресрен, пиҫĕсене тутăрсемпе витеççĕ.

II

Вĕри тусан айĕнҫен йалăн пĕр вĕçĕнҫе йуналутлă çынсем мĕкĕлтетни курăнаҭ.

Камсемши вĕсем?

Сунарçăсем мар пуҫ вĕт? Сунарçăсем тесен—çулла сунара çӳремеççĕ, вĕшлеке йытисем те курăнмаççĕ...

Туй халăхсем тесен—çимĕк вăхăҫĕ мар, шăпăр-сăрнай сасси илтĕнмест; тенкĕлĕ, хушпулă туй арăмĕсем те çук.

Çар халăхсем тесен—салтак тумтирĕсемпе мар: шăрăх пулсан та—хăшĕ кĕрĕкпе, хăшĕ сăкманпа, урисенҫе çăпата, çăматă, çĕтĕк-çатăк опуткасем**) тăхăна-тăхăна йанă. Çывăхарах килсен—аллисене пăшал вырăнне сенĕксем, çавасем, ҫукмарсем тытни курăнса кайрĕ; лашисем хăйсен йĕнерсĕр... Çапах та нимĕн те ăнланмалла мар. Хăйсем лашисем çинҫен анса лашисене çавăтса çӳреççĕ, ҫарăна-ҫарăна тăрса пĕр-пĕринпе калаçаççĕ, хĕвел тухăçнелле пӳрнисемпе тăса-тăса кăтартаççĕ.

Хĕвел пĕçернĕçем сывламалла та мар пĕçерет. Çилĕ те урнăçем-урса тулаҭ,—сывлăша хупласа илет.

Пĕри çĕлĕксĕр, тутăр çыхса йанă пуçне: те арçын, те сухаллă хĕрарăм; иккĕмĕшĕ кĕрĕк тăхăннă, те сивĕ ҫирпе асапланаҭ мĕскĕн; виççĕмĕшĕ—сулахай аллине алăшăлипе майĕнҫен çакса йанă: те лаши çинҫен ӳксе ыраттарнă, те ахаҫ ыратаҭ; тваттăмăшĕ кĕпесĕр-йĕмсĕр, çаппа-çарамас: пĕлме те çук, вĕри ҫирпе ҫирленĕ пуҫ? Апла тесен тата—хăйсем савăнăçлă кулкаласа калаçаççĕ.

*) Кетр—питĕ пысăк ӳсекен майăр йăвăççи.

**) Опутка — Çĕпĕрти сăран атă йеверлĕ урапа тăхăнмалли йапала.

Йал йĕритавра ик-виç мăшăр çăхансем: кр-он-к... кр-он-к.... туса вĕçсе çаврăнҫĕç. Те йалтан вилĕ тухасса сиснĕ? Никам та нимĕн те пĕлмест.

Хăйсем пĕри те ку йал çыннисем мар: те хуларан, те йут патшалăхран, те леш тĕнҫерен тухса килнĕскерсем. Пурте хура, йунпа, пылҫăкпа вараланса пĕтнĕ, пиҫĕсене нихăçан та çуман пулмалла. Сухаллисен—сухалĕсемпе майăхĕсем çăварĕсене кĕрсе тăраççĕ. Çамрăккисен çӳçĕсем—хĕрарăм çӳçĕ пек вăрăм, çилпе вĕçкелесе тăраççĕ, çуралнăранпа та тура курман пуҫ. Вăрманта пĕҫҫен курас пулсан, упăте тесе хăраса тарăн. Киттайсем тесен—киттай тĕслĕ мар, çӳçĕсене çитлемен. Вырăсла, тутарла, ҫăвашла, йеврейле, çармăсла калаçççĕ хăйсем. Те ҫăнах, те суйа: йалти пуйансем вĕсене ĕçлеме ӳркенсе, ĕçрен тарса çӳреççĕ, теççĕ. Ҫухăнсем, «ирĕклĕхшĕн» çапăçакансем теççĕ. Пуйансем кураймасăр: «поҫшевиксем—пантитсем» теççĕ. Ҫухăнсем—«пирĕн çынсем» теççĕ. Йалти çын ăçтан пĕлет... Ҫăнах та «ирĕклĕхшĕн» çапăçакансем пулĕ çав, ĕçрен тарса çӳрекенсем тесен—аллисем ĕçпе çуркаланса хытса пĕтнĕ. Ав пуйансем ĕçлемеççĕ те, аллисем вĕсенни пек çуркаланса, хытса пĕтмен: шурă, çемçе.

III

Хĕвел каçала май сулăнҫĕ. Çилĕ те пăртак лăпланҫĕ. Хура çăмăр пĕлĕҫĕ хупласа илҫĕ, çăмăр çуманни ҫылай пулаҭ.—Ку вăйлă çил хыçĕнҫен пăр çуса тырăсене пăр çапса ан кайтăр! Вара каллех выçă йулатпăр. Ăçта кĕрсе каймалла пулаҭ вара?...

Йут патшалăхран та, леш тĕнҫерен те тухса килмен вĕсем; пурте çак таврари йалсенҫен, поççолккăсенҫен, хуласенҫен пуçтарăнса пысăк мар хĕрлĕ парттисан отреҫĕ пулса кайнă. Хăшĕ Колҫҫак çарĕнҫен тарса пырса хутшăннă, хăшĕ—йалти пуйансем «поҫшевиксем» тесе Колҫҫак аллине тытса панă çĕртен тарса пынă. Киттайсем те мар вĕсем; пур те Раççейри ĕç çыннисем. Ĕçрен тарса çӳремеççĕ вĕсем, вĕсен аллисем ĕмĕр ĕçпе писнĕ. Ирĕклĕхшĕн çапăçакансĕм вĕсем, хăйсемшĕн анҫах мар—пĕтĕм ĕç халăхшĕн.

Вĕсем пуйансемпе Колҫҫак çарне пĕтересшĕн. Вĕсем амăшсене, ашшĕсене, аҫи-пăҫисене, çырла пек савнă арăмĕсене йалсене пăраха-пăраха хăварнă, хăшĕ икĕ çул, хăшĕ виç çул курман, çыру та илмен. Тен, хăйсем парттисан отретĕнҫе çӳренипе, вĕсен çемйисене йалти пуйансем Колҫҫак аллине тытса парса вĕлерсе те пĕтернĕ? Тен вĕсем выçă та, çарамас та çӳреççĕ?! Ăна никам та пĕлмест... Пĕр тума пуçланă йапалана туса пĕтересех пулаҭ. Тимĕре хĕрнĕ ҫухне шаккамасан, сивĕнсен мĕн ҫул шаккасан та тăсăлмасҭ те, авăнмасҭ те...

IV

Лаши çилхи çумне çыпăçса—çапçамрăк аҫа, майăхсăр, куçĕсем кăвак, выҫаса тăраççĕ, кĕрен лашапа сиктерсе килет; вĕри тусан—йупа пек хыçала тăрса йулаҭ, лаши кăкăрĕ тăрăх, супăҫ кăпăкĕ пек, шурă кăпăк çĕр çине татăлса ӳкет. Çитсе ҫарăннă ҫарăнманах вăл:

— Утланăр лашăрсене, шуррисем çывхараççĕ!!!... тесе

çилпе тытăннă хăрăлтатакан сассипе пĕтĕм йала йанратса йаҫĕ. Хăшĕ утланса ĕлкĕрҫĕç, хăшĕ çук...

— Та-та-та-та...—пулеметпе пăшал сасси хăлхана йанратрĕ.

— Сыхланăр кам йепле пĕлет çапла. Ҫĕрĕлле шуррисен аллине ан парăнăр!!!... терĕ кĕрен лашаллă хура сухал.

Каллех:

— Тра-та-та-та...

Аҫа-пăҫа йĕни, хĕрарăмсем кăшкăрни, ĕнесем макăрни, лашасем кĕçенни, сыснасем çухăрни, кайăк-кĕш кăкăлтатни пĕтĕм йала хупласа хуҫĕ. Лапсăркка ҫăрăш айĕнҫе выртакан Палккан та:-у-у-у... туса уласа йаҫĕ. Те кунĕпе выртса хырăмĕ выçрĕ, те йала тăшмансем çывхарнине сисрĕ.

Лашапа та, çурран та, унталла та, кунталла та, палламан çынсем çил пек ирте-ирте кайаççĕ. Йалăн леш вĕçĕнҫен те, ку вĕçĕнҫен те, урамсем, пăралуксем, çырмасем тăрăх та пĕр ҫарăнмасăр:

—Тра-та-та-та-та.-. бум-бум-бум...—туни илтĕнет.

Йал варринҫе парттисансем—пўртсем, кĕлетсем, çатансем тăрăх тăсăла-тăсăла выртса тухнă.

Йалти çынсем тĕп сакайсене, нўхрепсене, авăн вуҫаххисене ҫишса тултарнă пек кĕрсе тулнă та, пусса кĕрсе ўкнĕ мулкаҫсем пек ҫĕтресе лараççĕ.

Йала йĕри-тавра шуррисем çавăрса илнĕ. Хырăмсемпе шуса, тăват уран упаленсе йалалла кĕнĕçемĕн-кĕреççĕ. Вĕçĕмсĕр вĕсем пăшал переççĕ.

Тра-та-та-тат... Тра-та-та-та... Тра-та-та...

Кĕрен лашалли, пĕр хăрамасăр, лаши мăйĕ çумне выртса йалăн тепĕр вĕçнелле сиктерсе кайрĕ. Ун хыçĕнҫен пурте: хăшĕ утланса, хăшĕ лашисене çавăтса, хăшĕ çурран—пўртсен, кĕлетсен, çатансен хўтлĕхпе аллисенҫи ҫукмарсене ҫăмăртаса тытса пыраççĕ. Ҫасах пурте йал вĕçĕнҫи Тайка вăрманĕнҫе курăнми пулҫĕç.

V

Каç пулҫĕ, хĕвел хăй вырăнне канмашкăн анса кайрĕ. Йалан уйăх çути пулаканҫҫĕ, кĕçĕр вăл çук. Вăхăтвăхăт çеç шуса куçакан пĕлĕтсем хушшинҫен, çиҫçăлтăр курăна-курăна йулаҭ.

Пăшалсемпе пулемет сассисем те „тат-ат-ат" тума ҫарăнҫĕç.

Йала шуррисем кĕҫĕç. Выçă кашкăр пек çăварĕсене карса, мăйĕсене тăсса пыраççĕ. Сурăхсене, хурсене кăшкăрта пуçларĕç. Ăшă йунпа, ăшă аш шăрши пĕтĕм йал çине сарăлҫĕ. Вут куписем çине салтаксем коттелоксене çакса йаҫĕç.

— Хуçисем ăçта кайса пĕтнĕ?!..

— Пурте пантитсене тухса пĕтнĕ. Çамрăккинҫен пуçласа шăлсăр старикkине çитиҫен вĕлерсе тухмалла вĕсене!—терĕ шăлне шăтăртаттарса аршăн çурă мăйăхлă шурă охвитсер.

Вăл çапла калани йалăн пĕр вĕçĕнҫен пуçласа тепĕр вĕçне çитиҫҫенех: тĕпсакайĕсенҫе те, нўхрепсенҫе те, авăн вуҫаххисенҫе те, сурăхсемпе çапăçакан салтаксен хушшинҫе те илтĕнҫĕ.

— Вĕсем мар! Есĕр пантитсем!—терĕ аллисене ҫăмăртаса кăвакарнă ыраш çăкăрĕ кышласа ларакан çара йанахлă салтак. Хăй охвитсер çине ури тупанĕнҫен пуçне çитиҫҫенех пăхса тухрĕ. Охвитсер салтак мĕн каланине ăнланаймарĕ:

— Совершеннă правиҭнă, сволăҫҫи!...

Çара йанахлă салтак калани те пĕтĕм урам, пралуксем, çырмасем тăрăх, йал вĕçĕнҫи Тайка вăрманне çитиҫҫенех йанраса кайрĕ. Икĕ салтак аллисенҫе пăшалсене тытса, пĕр хĕрарăмпа утмăл çулхи старике, аллисене хыçалалла çыхса охвитсер патне илсе пыҫĕç:

— Вот поҭшевики, Вашше Пăлахароти!

Ҫăх какайне çинĕ ҫухне, аллисем вараланасран хăраса ларакан охвитсер, мăйăхсене шăлкаласа ури çине сиксе тăҫĕ те:

— Аха, поппалиç, сволоҫҫи!.... Рас-стре-ҭаҭ, их!...

— Рат стараҭса, Вашше Пăлахороти!...

Çара йанахлă салтак куçĕсене выҭантарса, сивĕ тытнă ҫухне пек ҫĕтрепсе:

— Атте!... Анне!... Есĕр им!?...—тесе ҫупса пырса иккĕшне те ыталаса ҫуптурĕ.

— В-аç-ка! Есим аҫам!...

Çисе ларакан салтаксем пурте урисем çине сике-сике тăҫĕç. Охвитсер те кутăн ҫакрĕ пăртак. Унтан çара йанахлă салтак çине пăхса:

— Вон што! И ты поҭшевик?!. Рас-стре-ҭаҭ его, как сопаку!

Çара йанахлă салтак хĕрарăмпа старикрен уйăрлҫĕ те, вăрахҫен пĕр-пĕрин çине куçĕсене илмесĕр пăхса тăҫĕç. Унтан сасартăк çавăрăнса пăшал йарса тытрĕ те, хыçалта тăракан пĕр салтакăн кăкăрне пăшал пуҭĕпе ҫиштарса, охвитсер май сулăнҫĕ. Пăшалĕн хура сăнни охвитсер кăкăрĕнҫен кĕрсе кайса, çурăм шăмми витĕр курăнҫĕ. Леш çавăнтах хĕрлĕ сăр тĕслĕ йун йухтарса, çĕр çине йупа пек йăванса кайрĕ.

— Çапла кирлĕ йытта!!...—тенĕ сасă купаланса тăракан салтаксен хушшинҫе йантраса кайрĕ.

Йун йухтарса выртакан охвитсер урлă каҫака сухаллă типшĕм салтак сиксе каçрĕ те, пыр шăтăкĕ çурăлас пек, çуркаланса пĕтнĕ тутисене сарса йарса, ҫукмар пек аллисене ҫăмăртаса:

— Т-о-л-о-й в-о-й-н-у!!... тесе ахăрса йаҫĕ.

Ун хыçĕнҫен пур те:

— То-лой!... То-лой!!.

Шурăмпуçпе пуçланса хĕвел тухиҫҫен пĕтĕм йал йанраса тăҫĕ. Йал вĕçĕнҫи Тайка вăрманĕнҫе те:

— Ой-ой-ой!?...—тени илтĕне пуçларĕ.

Ҫасах, Тайка вăрманĕнҫе пытаннă кĕрен лашалли те, хăйĕн отретне йала илсе тухрĕ.

VI

Хĕвел хĕрелсе тухрĕ. Кетр йывăççисем тавра çавăрăнса, урнă кашкăр пек тулакан çилĕ те сасартăках ҫарăнҫĕ. Урамри тусан та хăй вырăнне лăпланса выртрĕ. Çырма шăнкăртатса йухни илтĕнҫĕ. Вĕрмесĕр выртакан Палккан та хўрине пĕкĕ пек авса хурса урама сиксе тухрĕ. Кĕтўçĕсем кĕтĕвĕсене сарлака урам тăрăх уйалла хуса тухса кайрĕç. Кайăккĕш те çырма тăрăх саланҫĕ.

Пуриншĕн те савăнăç çитрĕ. Пăшалсен сăннисем çине хĕрлĕ йалав çакса салтаксемпе партисансем, хăйсем килĕсене май тĕрлĕ йенелле саланҫĕç.

Вĕсемпе пĕрле йал тăрăх савăнăç йурри йантрарĕ:

. . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . .

«Çакă пирĕн йулашки  
Татăклă çапăçу:  
Интернатсионалпа  
Етем йăхĕ ҫĕрĕлет!»

**Тӳмĕр Виктăрĕ.**

# Октăпĕр револђутси вырăнсенђе.

## Шупашкарта тата унăн уйесĕнђе Октăпĕр револђутсийĕ йепле пулса иртни.

(Аса илнисем).

Октăпĕр револђутси вунă кун хушшинђе хăйĕн хăвађĕпе пĕтĕм тĕнђене пигĕ хытă кисретрĕ. Октăпĕр револђутси хумĕ пĕђĕк хуласенђе те, йал-вулăс хушшинђе те хăйĕн хăватне кăтартмасăр иртсе каймарĕ. Вăл ĕҫлекенсемпе хресђенсене—пĕтĕм ĕҫхалăхне хăйсен тăшманĕсемпе лайăх паллаштарђĕ. Ҫак Октăпĕр револђутси хумĕ ђăвашсем хушшинђе те ытти ҫĕрти пекех пĕр пек ĕҫсем турĕ: влаҫшăн ђăваш хушшинђи контрреволђутсионерсем те ђăмăртанса ҫапăҫу туса илђĕҫ. Епĕ ҫав ĕҫсем ҫинђен, ҫапăҫусем ҫинђен Шупашкарта тата унăн уйесĕнђе пулса иртни ҫинђен ҫакăнта паллă туса хăварас тетĕп.

Питĕрте Октăпĕр револђутси пулни вырăнсене ђасах ҫитмерĕ. Епĕ ун ђухне йалтађђĕ. Пĕр виҫĕ-тăватă кунтан ҫеҫ ессерсем*) кăларакан Хусанти „Хресђен хаҫађĕ“ текен хаҫатран пĕлтĕм. Ҫак вăхăтра йал хушшинђи потăсем те хупăнса ларђĕҫ. Потăра слушит тăвакан ђинавниксем Октăпĕр револђутсине хирĕҫ пастовкка опйавит турĕҫ. Вĕсемшĕн рапођђисемпе хресђенсен влаҫĕ паха пулман, вĕсем ун ђухне Вăхăтлăх правиттĕлствăшăн питĕ ҫунђĕҫ, ҫине тађĕҫ. Пирĕн Аккоҫинă потинђе ларакан пуҫлăх Петр Каврилăђ Кортиппа унăн помошнĕкĕ Михаил Йуруссăв (усламăҫ ывăлĕ) ҫав самана улшăнни ҫинђен мĕн пур ҫилĕпе манпа тăвлашађђĕҫ. Пирĕн Раҫҫейă ĕнтĕ пĕтĕмпех пĕтсе ларат: уппа пĕрле Раҫҫейри револђутси те пĕтсе ларат, тесе ҫĕмĕрлеђђĕҫ. Анђах вĕсене хирĕҫ ҫав сăмахсем тĕрĕс марриие каласа тавлашу тăваттăм, итлесе тăракан хресђенсене тăнлантараттăм. Тата „Хресђен хаҫађĕ“ ретактăрĕпе хаҫат тăрăх ҫырупа ҫапăҫса илтĕм. Ҫав Хусанта тухакан „Хресђен хаҫађĕ“ текен хаҫатра (ун ђухне вăл хаҫат йалсем хушшинђе питĕ нумай саралађђĕ) болђевиксене хирĕҫ суйа статйасем нумай сарађђĕҫ. Епĕ ҫав статйасене ђăтаймасăр „Знамя Революции“ йатлă хаҫата акă ҫакăн пек ҫыру ҫаптартăм.

(„Зн. Рев.“ 23-мĕш №-рĕ, 30/XI—1917 ҫ.).

*„Хресђен хаҫађĕ“ ретактăрне.*

**Коспотин ретактăр!**

Есĕ мана ђăрмантарнăшăн ан ҫилен. Октăпĕр уйăхĕнђен пуҫласа епĕ есĕ кăларакан хаҫата илсе тăратăп, ҫав хаҫат ĕҫлекенсемпе хресђенсен инттересĕсемшĕн тăрат пулĕ терĕм. Вăл хаҫата епĕ 73-мĕш №-тен пуҫласа илсе тăратăп. Анђах, питĕ хурланмалла, хаҫатăнта хама килĕшми статйасем пурри, ҫав тери кăмăла каймн пулђĕ.—Вăл хаҫатпа мана хресђенсем ушкăнĕнђен хăваласа кăларса йараҫҫĕ: кун пек „Хресђен хаҫатне“ пирĕн итлес килмест, теҫҫĕ. Ҫавăнпа епĕ ҫав хаҫата малалла илсе тăма пăрахас терĕм.

Шухăшласа илĕрха хăвăрах—хаҫат вулакансене кирлĕ мар фелйеттонсемпе тăрантма пĕре те май килмест, сăмахран: „Турă милăҫтпе епир, иккĕмĕш Мукула“,...—тенинех илер, йе тата „Вĕҫĕ-хĕрисĕр йумах“... тенине илсе пăхар. Мĕне кирлĕ вăл хресђене?

Раҫҫейре пысăк сопытисем пулаҫҫĕ—„Хресђен хаҫађĕ“ вĕсем ҫинђен пĕрре те шарламаст. Вĕсем ҫакăнтан паллах ĕнтĕ—„Хресђен хаҫађĕ“ пĕлсех пире, хресђенсене, рапођђисемпе хресђенсен ҫĕнĕ влаҫĕ ҫинђен пĕлтересшĕн мар. Ҫав ҫĕнĕ влаҫ тӳрех, суйа питсĕр, тĕнђери вăрҫăна пĕтересшĕн хирĕҫ таđĕ. Вăрҫа ĕҫхалăхне лугăркас тесе, пуршуйсем хăйсем пуйма пуҫланă, терĕ.

Коспотин „Хресђен хаҫађĕн“ ретактăрĕ, есĕ ан ҫилен ман ҫине, сана тӳррипех каланăшăн. Сан хаҫатна малалла илес мар тетĕп, мĕншĕнне хаҫатра пĕлтеретĕп. Ҫак ҫырура асăннă моттивсем сан хаҫатна малалла илсе тăма мана пăрахтарђĕҫ. Хаҫатшăн тӳленĕ укҫа йулашкине калла ҫак атрĕспа йарăр: ст. Аккоҫинă,.... т. ыт.

Хресђен **В. Тӳмерăв.**

Нойапĕрĕн 22-мĕшĕ, 1917 ҫ.

Ҫак ҫыру ратактăрăн ђĕрине ҫĕҫĕпе касса кайнă пекех касса кайрĕ пулмалла. Ман ҫырăва хирĕҫ вăл питĕ ҫиленсе хăй хаҫађĕ ҫине пысăк статйа ҫаптарђĕ. Есĕ, тет, укҫуна калла тавăрасшăн мар, ху суккăрупа болђевиксем хыҫҫăн аташнипе, ман хаҫата муталан есĕ, тет. Ҫав ҫырушăнах манпа йалти уђђитлĕсем те ђылайĕшĕ хытă йатласа илђĕҫ.

Октăпĕр револђутси хыҫҫăн пĕр ернерен Шупашкарти Совет, Шупашкар уйесĕнђи вăхăтлăх Правиттĕлствă камиссарне Марк Алексеевиђа влаҫа болђевиксем аллине паманшăн арĕслерĕ. Тата уппа пĕрле ĕҫлекен пуҫлăхсене: Ҫемен Николайевиђа, Трофим Проххăрăва арĕслеме постановленисем йышăннă. Ку ĕҫпе Пĕтĕм Раҫҫейри Ђăваш Натси Опшђĕствин вырăнти тата Тĕп Правленийĕ хытă проттестăсем сайавит туса ирте рђĕҫ.

Теккапĕр уйăхĕнђе Шупашкарти Совет ĕҫĕсем мĕнле пынисене пĕлме епĕ Шупашкар хулине пырса карăм. Епĕ кунта Совет ĕҫпе паллашрăм. Советăн претҫетаттĕлĕ Смолђенкăв текенни ҫемҫерех ĕҫленĕ майĕпе улăшнă. Ун вырăнне **Катыкков** йулташа суйласа лартнă. Катыкков йулташ питĕ вирлĕ ĕҫлесе тăраđђĕ. Вăл Шупашкарти пуршуйсене хытă алăра тыткаласа, вĕсенђен нумай контрипутси ҫĕмĕрсе илђĕ. Ун ĕҫне муталама, ђăрмантарма Уйесри Ҫемски Управăн претҫетаттĕлĕ Иван Ҫеркейĕв тем пек тăпăннă. Анђах Катыкков йулташ вĕсене ирĕк паман, ҫирĕп алăра тыткаланă. Ҫакăн пек хытă тыткалани мана питĕ кăмăла кайрĕ. Киле тавăрăнсан епĕ те ҫакăн пек ĕҫлеме тытăнатăп, тесе Совет ҫуртĕнђен тухрăм.

Йалсенђе вăл вăхăтра фронтран таврăннă салтаксем хутшăнма пуҫларĕҫ. Ҫак салтаксем хушшинђе акитатси ĕҫĕ лайăх ăнса пыма пуҫларĕ. Салтаксемпе йалти хресђенсем те пĕрлешме пуҫларĕҫ, ђухăнсем пушшех болђевиксен ĕҫне килĕштерђĕҫ.

Йалта пуйансемпе кĕрешме арман хуҫинђен пуҫларăмăр. Арман хуҫине Михаил Лосанăва мĕн пур йапалисене тытса илсе армантан хăваласа кăларса йатăмăр. Армана тытса тăма ђухăнсем хушшинђен Алексҫей Фетăрăва лартрăмăр. Тата шутласа ĕҫе йĕрлесе пыракансене—ревиҫи комиҫҫи пекки суйласа лартрăмăр. Ҫак ĕҫсене туса пĕтерсен пĕр-ик кунтанах Кĕђкей вулăсĕнђи Ҫемски Управăн претҫетаттĕлĕ Сапошников Михаил Лосанăвпа армана пырса кĕрсе йапаласене ҫырма пуҫланă; «епĕ сире ҫакăн пек ĕҫсем тунăшăн лайăхах хĕстеретĕп-ха», тесе йатласса Алексҫей Фетăрăва армантан хăвалама тытăннă. Алексҫей Фетăрăв хăвăртрах мана пĕлтерет. Епĕ хăвăртрах килтен сиксе тухрăм та, пĕр-ик сынна ђухăнсене пуҫтарма хушрăм. Пилĕк минут та иртмерĕ пулĕ, мĕн пур ђухăнсем, салтаксем кĕпĕр пуҫтарăнса анса армантан Сапошникăва, Лосанăва

*) Сотсиалист—револђутсионерсем.

# 1917-мĕш ÇУЛ ШУПАШКАРТА.



**Çемствăн темократтиллĕ (халăх претставиттĕлĕсемпе пĕрле пулнă) I-мĕш пухăвĕ. Ку пухăва С.-Р-сем, меншевиксем йертсе пынă (варринђе ларакан ĕрет). Хыçалта икĕ ĕрет—катетсем, малта лараканнисем—пољшевиксем майлă ушкăн (унта пĕри çеç—çут çамка, поттиккăпа—хыçалти ĕретрен) ун ђавси тĕлĕнђи Тўмĕр Виктăрĕ.**

тата йалти претçетаттĕле Маçтанккова арĕслесе, Маçтанккков килне илсе пырса лартрĕç. Кунта питĕ нумай халăх пуçтарăнђĕ. Пурте: «Ислетес ку пуршуйсен тарçисене», тесе кăшкăраççĕ. Хĕнесе тăкасран çил-тăвăллă çынсене аран-аран ђаркаласа, Сапошникăвсене кăларса йатăмăр. Халăхĕ хыçалтан вĕсене темскер пек йунаса, йатлаçса йулђĕ: кунта сирĕн пек таврашсем нихçан та ура йарса пуснă ан пултăр, теççĕ. Теккапĕрĕн 30-мĕшĕнђе çак арманта фронтран килнĕ салтаксене пуçтарса, Совет орканисоваĭ туса лартрăмăр, çав арман пўртĕнђе пиплиотеккă уçрăмăр. Çак пухурах тата вулăссенђе Советсем орканисоваĭ тума постановлени йышăнтăмăр. Çак решшени тăрăх Кĕђкей вулăсĕнђе Йанварĕн 5-мĕшĕнђе пуху турăмăр. Пуху претçетаттĕлне мана суйларĕç. Пуху ĕçне пуçланă ђухпе йалсенђен пуçтарăнса пынă кулаксем, тата временнăй правиттĕлствăн тарçисем пулнă Проххăрăв, Ротков пађăшкăсем питĕ ђăрмантарма пуçларĕç: есĕр, теççĕ, нийепле права та имет тумастăр кун пек пухусем туса вулăсри çемски влаçне ватма, нийепле права та имет тумастăр! теççĕ. Анђах пĕр-икĕ арттилерис, хаљ çеç фронтран килнĕскерсем, сиксе тăђĕç те, права çинђен çатăлтатса тăракан мăн сухаллă кулаксене сухаллисенђен йара-йара илсе тĕпеле сĕтĕрсе кĕђĕç те, каларĕç: «лараттăр-тăк ларăр шăппăн итлесе, атту кантăкран сирпĕтсе кăларса йаратпăр», терĕç. Тин хайхисем хăлхисене мулкађăсем пек тăратса шăппăн ларђĕç.

Çак сопранире вулăсри Çемски Управа суйласа лартнисене сирпĕтсе кăларса йамалла туса, урăххисене суйласа лартрĕç, претçетаттĕлне мана суйларĕç. Тата пилĕк çынна (класнăйсене): Покатырев пупа, вăрманпа сут тăвакан—Ефрем хуçана, хăмлапа сутуилў тăвакан—Керойĕва, Сапошниккăв—маклĕра, тата Проххăрава Уйесри Çемски сопранине каймалла мар турĕç, вĕсен суйлав прависене калла туртса илсе, пољшевиксем манерлĕ ĕçлекенсене пилĕк çын суйларĕç: мана, Никит Васçилйĕва, Иван Сокколова, Емељйан Миловитăва тата тепĕрне Кĕђкей ађине (анђах вăл сопранипе пымарĕ) суйларĕç.

Йанварĕн 7-мĕшĕнђе Шупашкар Уйес Çемски сопранийĕ (ессерсем ăна „темократтиђески“, теђђĕç) уçăлђĕ. Епĕр те Кĕђкей вулăсĕнђи çĕнĕрен суйланнă класнăйсем, пырса кĕтĕмĕр. Анђах сопрани уçсассăн, Рупађђăва (Хусана шурисенђен тытса илсен ăна контр-револљутси ĕçне ĕçленĕшĕн Ђека (Ч. К.) 1918 ç. перре вĕлерне) претçетаттĕле суйласа лартсан пире, Кĕђкей вулăсĕнђе класнăйсене саккун тăрăх суйламан тесе, сопранирен кăларса йама тăђĕç. Çапла каласан епĕ сиксе тăтăм та, хĕрўллĕ сăмах каларăм: Есĕр Совнаркомăн текретне (суйлавсенђен калла сирме пултараççĕ тесе кăларнă текрет) йышăнмастăр терĕм. Ман сăмах хыççăн Ђерњакков йулташ сиксе тухрĕ, тата ыттисем те, пĕр пилĕк çын пулаĭ пулĕ, урăх вулăссенђен пољшевиксем манерлĕ ĕçлекенсем тухса каларĕç. Çакăн пек хĕрўллĕ

сăмахсем тăрăх „правилăпа“ суйланисем хăраса ӳкеççĕ те, Рупаҫҫов сопранине пилĕк минутлăх хупаҫ. Ессерсен фраксипе катетсен фракси пĕрле канашласа илеççĕ те, сопранине уçаççĕ. Претçетаттĕл калаҫ: Кĕҫкей вулăсĕнҫи çĕнĕрен улăштарса суйланă класнăйсене çак сопранине хăварас, анҫах ӳлĕмрен вĕсем пирĕн „правилă“ тăрăх суйланса килҫҫĕр, терĕ. (Кĕтсе ларăр ӳлĕмне, урăх сирĕн пуçтаранасси те пулаймарĕ!..) Çак сопранисенҫе ĕçленĕ ҫухнех епĕр, поҫшевиксен йĕркипе ĕçлекенсем, пĕрле ҫăмăртанса фракси турăмăр. Сопранинҫе мана ревиçи комиççин претçетаттĕлне суйларĕç. Çемски Управăн ĕçĕсене ревиçи тунă ҫухне парăмсем питĕ нумай тупăнҫĕç. Çемски Управă текенни пуршуйсенҫен çуртсем илсе парăма кĕрсе, пысăк проҫҫăнсем тӳлесе ларнă. Çак тăкаксем пирки ревиçи комиççин претлошенисенҫе „анулироваҫ“ тесе анҫах çырса лартрăмăр. Вăл претлошенисене, ĕнсисене хыçа-хыçа Петров тухтăрсем, Соçнин хуçасем, Караҫури Оçарăв хуçасем йышăнкалас пек пулкалаçа лараççĕ. Анҫах хăйсен: «ку сирĕн „анулироваҫ“ тăвас ĕç вăхăтлăха анҫах», тенĕ пек шухăшĕсем те палăраççĕ. Ревиçире ҫылай ирсĕрлĕх ĕçсем тупăнҫĕç. Ессер Проххăрăв хăй претçетаттĕл пулнă вăхăтра Управăн укçине те салатнă, тата хăй килне Управăн кирпĕҫисене те турттарнă. Тимофей Николайĕвăн портретне тума пуçтарнă 40 тенкĕ укçана та хăйĕн кăсйине ҫикнĕ. Проххăрăв хыççăнхи претçетаттĕл Иван Çеркейĕв та кайах йулман, Управăн тĕрлĕ çимĕçĕсене хăй патне çĕкленĕ. Тата ревиçи тунă ҫухне ĕçре пĕр телекрам йанă хут тупрăмăр. Унта Çеркейĕв Ҫăвашăн Вăрçă Ĕç Комитетне акă çапла çырнă:

> Пĕр Тӳмер йатлă çын Çемствăна суйланă çынсене калла ҫĕнсе, вулăссенҫе тепĕр хут пуху пухса, поҫшевиксем манерлисене суйлаттараҫ. Çавăн пек ĕç Кĕҫкей вулăсĕнҫе тунă. Сирĕнтен пулăшу ыйтатăп, тенĕ.

Кĕҫкей вулăсĕнҫи пухура йышăннă постанавлени ӳкерҫĕкне, ҫăнах та, хамăр Шупашкарти Севетра машшинăпа çаптарса, постановлени çинҫи пек решшенисем йышăнма пĕтĕм уйесри вулăссене йатăмăр.

Кунтан кунах Совет влаçĕ çирĕпленсе пыраҫ. Вак пуршуаллă парттисен ĕмĕҫĕ çитмерĕ — поҫшевиксем пайан ыран йăваланса кайаççĕ, тени пурнăçра пулмарĕ. Шупашкарти Çемски сопрани те, темĕн ҫухлĕ кĕтсе ларнă пулин те, хăйне ваҫҫи ыррипех нимĕн те кĕтсе илеймерĕ. Йанварĕн 23-мĕшĕнҫе, каçхи саççетанире, сисмен-хутран йаштак аҫасем — офитсерсем йапăрт пырса кĕҫĕç. Хăш-хăшин хушамаҫĕсене халĕ те астăватăп: **Муришкин, Айтак, Оссанăв, Меркурйĕв, Тиххăнăв Иван** т. ыт. Офитсерĕсем ҫăвашла шăрантараççĕ кăна:

> «Ҫăваш халăхĕн ҫăвашла пулмалла, ăçта кирлĕ унта ҫăвашсене лартас пулаҫ, ҫăвашсен пурин те Натсиллĕ Опҫĕствăна çырăнас пулаҫ, теççĕ.

Сăмаххисем йака. Питĕ ĕненмелле. Совет влаçĕ натси тăрăх кăларнă текретпа пекех. Çемски класнăйсем пурте çав опҫĕствăна çырăнҫĕç. Саççетанине хупсан, пурне те претçетаттĕл пӳлĕмне устав йышăнма ҫĕнҫĕç. Уставĕн малти строҫкинҫех уҫретиттĕлнăй сопранине поттершаҫ тумалла, тенĕ сăмах сиксе тухаҫ. Вара епĕ: Уҫретилăвккăна Совет влаçне хирĕç тăнăшăн хăваласа йанă вĕт? Мĕнле уҫретилăвкка? Çук, йулташсем, пире кунта улталаса çырăнтараççĕ!.. тесе каларăм. Çак сăмахсем хыççăн поҫшевиксем манерлисем пур те сиксе тăҫĕç те, списăкран хураттарҫĕç, каснаҫҫей патне пуçтаранса 3-шер тенкĕ ҫлен укçине калла тăпăлтарса илҫĕç. Çапла ессерсен ĕçне пăсса лартрăмăр.

Çемски сопранине пуçтаранна çынсем хаҫхи типпокрафи çуртĕнҫе пурăнаттăмăр. Çак çурта ессерсен пуçлăхĕсем çӳресе Шупашкарти Совет çинҫен тата контрипутси пуçтарни çинҫен суйа акитатси сараҫҫĕç. Пирĕн пӳлĕме анҫах пымасҫĕç, мĕншĕн тесен унта поҫшевиксен политтĕкки майлă çине тăрса калаçаҫҫĕç. Анҫах епĕр йумахланине итлеме шпийонсем йараҫҫĕç.

Йанварĕн 24-мĕшĕнҫе ирпе ирех класнăйсене çĕнĕ хыпар калама тухрĕç. Тиххăнăв офитсер кĕҫĕ те: Кĕçĕр çĕрле Шупашкарта переворот пулҫĕ, Катыкков влаçне пĕтертĕмĕр терĕ. Мĕнле переворот, камсем кăна турĕçши, тесе илтĕмĕр епĕр те хамăр хушăра. Ку ĕç мĕнле пулнине ҫасах ăнланса илтĕмĕр. Вăрттăн çынсем, йаштака офитсерсем, Шупашкарти пуршуйсем калла-малла çав Çемски сопрани патĕнҫе çӳреҫҫĕç. Вĕсем переворот тума хатĕрленнĕ.

Çемски сопранине пырса кĕтĕмĕр те, малтанхи вопросрах çак переворот пулни çинҫен кăна йышăнас тесе, шарпа колосоваҫ тутарҫĕç. Йышăнас текенсем нумай, йышăнас мар текенсем (поҫшевиксем манерлĕ ĕçлекен фраксин) çиҫĕ сас кăна. Çак колосовани хыççăнах саççетанине хупса лартрĕç. Унҫен те пулмарĕ Совет урамĕпе рапоҫҫисен темонстратси хĕрлĕ йалавсемпе, йурласа тĕрме патнелле улăхаҫ. Çакна кура, хăш-пĕр класнăйсем пытана пуçларĕç. Претçетаттĕл Çеркейĕв, тата Саххарăвпа тепĕр ҫлен сисмен-хутран тухса та тарнă. Темонстратси тĕрме хапхи патне пырса тăҫĕ те, Катыкков йулташа ирĕке кăларма хушрĕ. Катыкков йулташ тĕрмерен тухсан, мĕн пур рапоҫҫисем „урра!“ тесе кăшкăрса йаҫĕç. Катыккова алă çине тытса çӳлелле ывăтаççĕ. Катыквов çакăнта сăмах каларĕ. «Пайан-кĕçĕр пирĕн Совета шурквартейтсăсем тапăнса, алăксене ватса кĕрсе, мана çакăнта тĕрменехупрĕç, мана хытăхĕнерĕç, Советăн ĕçĕсене шкапсенҫен туртса кăларса салатса пĕтерҫĕç. Çак отрет—пуршуйсен укçипе ĕçлет, вĕсене хирĕç тăрса хăваласа йамалла. Тав сире, рапоҫҫисем, есĕр органисоватсă туса Совета калла тытса илме пулăшрăр», терĕ. Çак сăмахсем хыççăн пурте револютсиллĕ йурăсем йурласа Совет çуртне (халĕ „Ĕç Твореҫĕ“) кайрĕç. Урамсенҫе хĕрлĕквартейтсăсем пăшалсемпе калла-малла ҫупкаласа анҫах çӳреççĕ, арĕсленĕ çынсене илсе пыраççĕ. Шурквартейтсă офитсерĕсене Совет çуртне пырса хупрĕç. Катыкков йулташ пӳрте кĕҫĕ те, Меркурйĕв офитсер патне пырса: есĕ иçменник, терĕ. Çав вăхăтрах Меркурйĕв револьвĕр туртса кăларҫĕ те, Катыккова пеҫĕ. Катыкков йулташ пăрăнма ĕлкĕрҫĕ. Тепĕр пуҫҫипе Меркурйĕв хăйне-хăй перĕнсе вилҫĕ.

Перĕнсе вилнĕ Меркурйĕвăн çумĕнҫе памĕтнăй книшкă шыраса тупрăмăр. Кĕнеки варĕнҫе çак Шупашкара тытса илсе Совета çĕмĕрсе пăрахас план тупăнҫĕ. Кĕнеки çине тата Советпа кĕрешме пуйансенҫен укçа пуçтарнине те çырнă: 1. Йехрем хуçасенҫен 5000 тенкĕ, Çеливан Тимахвейĕнҫен 2000, Оççипăвран 1000, Тимитрийĕвран 1000 илнĕ, тенĕ. Тата çак офитсерсем йертсе килекен 50 салтаклă отрет хăш хăш йалта выртса çывăрни те паллă пулҫĕ. Çемски Управă прет çетаттĕлĕ Çеркейĕв çырса панă мантат тупăнҫĕ. Çак мантат çинҫе йалти старăстăсене отрет ваҫҫи лавсем пама каланă, вĕсене çитерсе тăратма хушнă. Ку ĕçсене пуçтарса илсе арĕсленĕ офитсерсене тĕрмене хупрĕç. Салтакĕсене (ҫăвашсене) пăшалĕсене тытса илсе Хусана йаҫĕç. Çак салтаксеҫен пĕри: епĕр ку ĕçпе винаватлă мар, пире кунта улталаса илсе килҫĕç, тесе сăмах каларĕ.

Çакăн хыççăн Çемски сопрани вăхăтсăрах саланҫĕ.

(*Малалла мĕн пулнине урăх ҫух çапăпăр*).

# „ХУРА ЙУПА“ КИНО КАРТТИНРАН.



1. Сахма—(Макҫимӑв-Кошкински).
2. Кӗвӗ калани.
3. Тевлетпе Уркка (Оҫиппӑвпа Тађи-Йун).
4. Уретник ђӑваша хӗнет.
5. Уркка, упӑшки хӗненӗ хыҫҫӑн (Тађи-Йун).

# КУРАК САВВИСЕМ.

## Комсомола.

(*Октава*).

Шурăмпуçĕ тухаспа
Ес, йулташăм, ан çывăр,
Тутлă ăйхăна татса
Вырăнтан сиксе тăр;
Лаша кӳлсе тăратсан—
Хĕрлĕ хĕвел тухмасăр
Ĕç пуçлама ан хăра!
Ес уйра.

Сан умăнта уй хура:
Акапуçĕ пулмасан—
Ана пахса ан хурлан,
Сухапуçпе сухала;
Çавах çумлă куракна
Ес тасата пуçласан—
Ĕç пуçлама ан хăра!
Ес уйра.

Курăк пусса çĕнтерсен—
Варлăх сайа йамалла,
Пĕр йĕркесĕр ĕçлесе
Кил парахса каймалла:
Çав куп патна çитеђђен
Çум-курăкран тасалма—
Ĕç пуçлама ан хăра!
Ес уйра.

Ирĕк ӳссе çитеспе
Ес, йулташăм, ан çывăр,
Вăй çитнипе, йеррипе
Куç умĕнђе ĕçе тăр;
Халăха ĕнептерсен—
Пулăшувĕ пулмасăр
Ĕç пуçлама ан хăра!
Ес уйра.

Сан умăнти çул—çыран:
Каçнă ђухне çын пӳлсен—
Пăшал тавраш ан шыра,
Çул кăтартса пар куллен;
Курмасан вăл—тăшманран
Пăрăнасах-и тесен
Ĕç пуçлама ан хăра!
Ес уйра.

Тăшман пусса çĕнтерсен—
Ирĕк сӳнсе каймалла,
Авалхилле ĕçлесе
Мул «шампине» сармалла:
Вилĕм патне çитеђђен
Тăшмансенђен тасалма—
Ĕç пуçлама ан хăра!
Ес уйра.

## Ăс пĕлекен çынсенђе...

(*Каптиппитђĕски сăвă.*)

Ăс пĕлекен çынсенђе
Хаклă сăмах каланат̆,
Тĕттĕм халăх хушшинђе
Пулас ĕçĕ тăлланат̆.
Ĕçне туса кăтартсак
Пур шухăш тĕрĕсленет,
Хура халăх ĕненсе
Çĕн йĕркепе ĕç ĕçлет.
Çĕн йĕркепе ĕçлесен
Пурнăçĕ те йусанат̆,
Çуллен çула ĕстенсе
Пĕтми пурлăх пухăнат̆.

Пĕтми пурлăх пухăнат̆
Çуллен çула ĕстенсе,
Пурнăçĕ те йусанат̆
Çĕн йĕркепе ĕçлесен.
Çĕн йĕркепе ĕç ĕçлет
Хура халăх ĕненсе,
Пур шухăш тĕрĕсленет
Ĕçне туса кăтартсан.
Пулас ĕçе тăлланат̆
Тĕттĕм халăх хушшинђе,
Хаклă сăмах каланат̆
Ăс пĕлекен çынсенђе.



К ĕ с к е  п и о к р а ф и.

Курак йулташ 1889 çулта Кăлаткă йалĕнђе [Воԓски у., Саратту кĕп.] çуралнă. Вăл пĕр класлă шкул анђах пĕтернĕ. 13 çултан пуçласа йут çĕршывра, хуласенђе пурăннă. Револԓутси вăхăтĕнђе Итĕм-Курара [Куçнетски у., Сурат. к.] тата Туркестанра тĕрлĕ политпросвет ĕçĕсенђе ĕçленĕ.

## Иван пиђђе, тăм сăмса...

Иван пиђђе, тăм сăмса,
Ат̆а кăмăс йухтарар!
Кăмăс пулат̆ тырăран,
Йулашки пăт çăнăхран.

Ĕçĕпĕр те, йурлăпăр,
Çĕр çĕмĕрсе çӳрĕпĕр;
Тĕл пуланпа çапăçса—
Милитсине çитĕпĕр.

Пуç ыратсан мухмăра—
Пĕр витре шыв ыйтăпăр.
Пĕђђен-пĕђђен хупăнса
«Тăри çури» тытăпăр.

Ир тăрсассăн ађа-пăђа
Çăкăр ыйтса макăрĕç,
Çăкăр тупас хуйхăна
Урăх çĕрте пусарĕç:

Çапăçнăшĕн тĕрмере
Хăнтăла çитерĕпĕр—
Кăмăс ĕçсен ĕмĕрне
Çавăнта иртерĕпĕр.

## Çĕнĕ кĕвĕсем.

Ман йуратни хулара
Икĕ çула вĕренђĕ.
Трахтăр винђĕ пушансан
Пĕр самантра тӳрлетрĕ.

Эрттелсемпе ĕç лесе
Халăх пуйа пуçларĕ.
Халăх пуйса çитнĕ çем
Çукпа кулак çухалђĕç.

Çăтти-çатти çатăрка
Çил вĕрнипе хуçалђĕ.
Йал пуйнипе кулакĕ
Çăпата пек çĕтĕлђĕç.

Хир ĕçсене машшина
Виç-тăват çынна пĕтерђĕ.
Йал халăхĕ йурласа
Ĕç вăхăтне иртterђĕ.

Пирĕн йал çамрăкĕсем
Кăмсамула çырăнђĕç.
Пур ĕçе те ĕçлесе,
Хайсем туса кăтартрĕç.

Кĕркуннене кĕрсессĕн
Хирсем ĕçрен пушанђĕç.
Çапма вăхăт çитсессĕн
Аштармалли туйанђĕç.

Ӳсе пĕлмен йăвăçсем
Çитĕнмесĕр касăлђĕç.
Авалхи йĕркелисем
Пĕр ырлăхсăр ватăлђĕç.

Пуп хырăмĕ шăранђĕ.
Вăл мĕнеши пĕлтерђĕ?
Хут вĕренсе çĕр килĕ
Сĕрĕмĕнђен уралђĕ.

Вată-вĕтĕ йăвăçсем
Çĕре-çĕре йăванђĕç.
Ђиркӳ ăшне тасатса
Паԓнитсăна çавăрђĕç.

Пĕр-иик-виçĕ тенкĕпе
Коппературси çавăртăм.
Тавар—улшу тунипе
Хĕрлĕн-хĕрле йусантăм.

Кăраççин пиђĕкипе
Çӳретме те ђаранђĕç.
Електритсă çутисем
Вăл хисеппе туйанђĕç.

Пашарнине çамрăксем
Прулăкпа каркаларĕç.
Мускавра калаçнисем
Пирĕн йала илтĕнеç.

Виçĕ пусă пĕтсессĕн
Усал çумсем тасалђĕç.
Çакна тăвас текенсем
Октăпĕрте çуралђĕç.

# ПИРӖН ВИЛНӖ ПОЕТСЕМ.

Ђава П.

## Ахах (И. Е. Ундрицов) поет ҫинђен.

„Канашӑн“ 1922 ҫулхи 54 (801)-мӗш номӗрӗнђе Александр Петровиђ Лпов пирӗн ҫамрӑк поет Унтритсов вилнине асӑнса ҫапла ҫырнӑђђӗ:

«Пуш уйӑхӗн 13-мӗшӗ пирӗншӗн пит хуйхӑллӑ кун. Ђӑваш ҫамрӑк литтераттурӗ вӑл кун хӑйӗн хаклӑ ҫынне ҫухатрӗ. Ђӑваш поеђӗ Ахах вилђӗ. Ирхи ђеђек сарӑлса ҫитиђђенех шанса ларнӑ пек, вӑхӑтсӑр, ҫамрӑкла вӑл вилђӗ. Вӑл ҫук ӗнтӗ, анђах пирӗн пуҫран унӑн илемлӗ сӑввисем тухас ҫук:

—Туспа курас килнӗ ђух, ҫак ҫырӑва вула тӑр— тесе хӑварђӗ пире Ахах йулташ. Епӗр унӑн сӑмахӗсене вуласа хамӑр ђеђек йевӗрлӗ ҫамрӑк поета асӑнӑпӑр» — тенӗђђӗ. Ҫак сӑмахсем ҫине текех нимӗн те хушса каламалли ҫук. Кунта пурне те каланӑ. Ђӑнах та, ҫамрӑкран та ҫамрӑк тӑван поетӑн талантсӑр пурнӑҫӗ сӳнсе ларни кам-мур кӑмӑлӗшӗн ђӳк парни пулђӗ-ши? Унӑн пултарӑвӗ ҫитӗнсе ҫитиђђенех сӳнсе ларса ҫухалнишӗн кам йӑвӑр шухӑша каймасӑр пулӗ-ши?

— Ҫыннӑн пурӑнӑҫӗнђе епӗр ҫынна сисейместпӗр, унӑн ӗҫне хисеплесе илейместпӗр, малашне ҫын мӗн ђухлӗ усӑллӑ, кирлӗ пулассине епӗр ђухласа илейместпӗр. Ҫавӑн пек курӑнаҭ пӗтӗм тӗнђипе те. Ҫын вилсен вара, ахлататпӑр, шеллетпӗр, ӑна мӗнле ҫӑлма майсем пулни ҫинђен шухӑшлатпӑр—тесе калас килет кун пек ђухне А. П. Лпов сӑмахӗсемпех.

* * *

Иван Йевкрафовиђ епӗр пӑха пӗлмен пирки те вилђӗ пулӗ. Вӑл ҫамрӑк, тӗрекленсе ҫитеймен хулпуҫҫийӗсем ҫинђе ытла та йӑвӑр йӑтӑм йӑтса тӑђӗ. Вунсакӑр ҫулхи ађа, пӗрмай шухӑшра, пӗр май тӑван тӗттӗм ђӑваш халӑхӗн пурӑнӑҫне кӑшт та пулин ҫӑмӑллатас, тесе ҫуннӑ вутра, килти пурӑнӑҫӑн ҫитменлӗхӗсем, кӑлтӑкӗсем — ђӑнах та кам ҫамрӑк ђунне ыраттармӗ, хӗрлӗ йунне пӑсмӗ:

—Хӗвел тухаҭ, сыллӑм типет,
Ҫынсем хӗрсе тыр выраҫ,
Анђах, ман вырас килмест
Ђун хурланаҭ, куҫ-ҫуђ тухаҭ.

Атте, кайам еп киле
Анне панђе никам ҫук
Йепле вуртаҭ пуђ пӳртре
Ниҫтан та ҫӑмӑллӑх ҫук.

Ӑшшӑн каланӑ ман сӑмах
Ман аттене вӑрғаҭ... Ах...
Ҫилленет, кӑшкӑраҭ
Мана сӑнсӑрӑн пӑхаҭ.

—Пӗр ҫын выртни ҫитменђђӗ,
Тата уйӑрӑл ӗҫрен ес,
Вытма еп ҫын кӗтменђђӗ
Унта пӗђђен те канлӗ—тет.

(„Тӑван анне“)

Ҫапла, вилекен амӑшӗ пирки хыпса-ҫунса, ӑна пулӑшса унӑн амӑшне лӑплантарма пултармасси те ҫамрӑк Иванӑн кӑмӑлне хуҫаҭ.



Ашшӗ килӗ — вӑтам хресђен килӗ, Иваншӑн питех те кирлӗ мар, вӑл вилес пек выртакан амӑшӗн хӗн-хурпе хӑй хулпуҫҫи ҫине илесшӗн. Ашшӗ—хыт кукар, нушталанса кайасран ӗмӗр хӑранипе пурлӑх тесен, етемӗн кӑмӑлне касса татма та туртӑнса тӑмаскер—Ивана та сиввӗн пӑхсах, йатлаҫсах ӗҫлеттерет. Миҫе ҫулта пулнӑ-ши ун ђухне Иван? Вуннӑра-ши, вуниккӗреши? Сакӑр ҫулхи ђӑваш ађи тыр вырнине такам та курнӑ пулӗ. Иван та ҫапла ашшӗ ырлӑх-пурлӑхӗшӗн ҫамрӑк пуҫӑнах ӗҫлеме тапратнӑ. Анђах, пӗђӗкренпех шухӑшлама вӗреннӗскер, вӑл пӗр хырӑмшӑн кӑна пурӑнас пурӑнаҫа йуратман; пӗђӗкренех вӗренес те тӑнлӑ-пуҫлӑ ҫын пулас, пӗрмай хырӑмшӑн хыпаланасса пӑрахас тесе тапаланнӑ. Вӑл ҫамрӑклах, малтан Йуманай Йалтрари пӗр класлӑ, унтан Хӗрлӗ Ђутайри второкласни шкулсенђе вӗренсе тухаҭ те ӑҫта та пулсан малалла вӗренес тесе, май килнӗ ҫемӗн Хусанти Тухховни Ҫеминарине кӗрет. Унта вӗренсе пӗтермесӗрех 18 ҫулхи ҫамрӑк ҫеҫке ӗҫе пикенсе тытӑнаҭ: килелле тавӑрӑнма унӑн пӗрт те ђун туртмаҭ.

Малтанлӑха вӑл „Канаш“ експетитсине кӗрет, ҫак вӑхӑтрах, тата, «Канаша» та ҫырса тӑраҭ. Нумайах та пулмаҭ, Хусана ђехсем илеҫҫӗ. Ҫамрӑк Иван малтан пытанса пурӑнаҭ, анђах, шуррисем ӑна, ыттисемпе пӗрле, мопилисатсилеҫҫӗ. Ӑна ҫвеҫ комантине тӑратаҫҫӗ, пӑшал параҫҫӗ. Иванӑн ӑш ҫунаҭ: йепле-ха вӑл, хӑй тинех ҫеҫ кӗнӗ сулахай сотсиалиссен-револютсионерсен парттине улталаса, ӗҫхурахалӑхне хирӗҫ тӑрӗ. Йепле-ха ђипер ӗҫхурахалӑхне пулӑшас вырӑнне вӑл унӑн претаттӗлӗ пулса тӑрӗ? Хӑйӗн камантипе Услон йенелле иккӗ кайса килсенех вӑл тарас шухӑш тытаҭ,

анђах ниçта та тармалли çук, шуррисем хӑйсен кранитсисене хытӑ сыхлаççӗ... Иван шуррисем Хусантан тухса тарасса сисет те, пӑшалне Уçпенски урамри „Канаш“ ретакси çуртӗнђи кӑмака хыçне пытарса, хӑй те пытанат̆. Çав каçах шуррисем Хусантан тараççӗ. Çӗрле Унтритсов пытаннӑ хваттерти хӗр патне унӑн йеркӗнӗ офитсер кӗрсе тухат̆, анђах Унтритсова палӑртмаççӗ, вӑл пытанса, ирхине Хӗрлӗ Çара кӗтсе илет.

Иван, ӗçхурахалӑхне хирӗç хӑйне ирӗксӗр мопилисатсилесе те пулин хӗç-пӑшал тыттарнӑшӑн, хӑй шуђӗпе револютсийе хирӗç питӗ пысӑк айӑпланнӑ шухӑшлат̆. Ерне, вӑл 5—6 кун шур çарта тӑнӑ вӑхӑтра пӗрре те пӑшалпе ан пенӗ пултӑр, ан тив, вӑл кашни каçах çартан тарса Хусанта йулташӗсем патӗнђе çӗр каçнӑ пултӑр, çапах та хӑйне хӑй питӗ айӑплӑн шутласа хыпса-çунат̆. Вӑл хӑйне-хӑй айӑпласа тем туиа та хатӗр. Вӑл, Хусана Хӗрлӗ Çар килсе кӗрсенех, ытти ђӑваш револютсионерсемпе пӗтӗçсе „Канаш“ кӑларма тапратат̆, хӑй Комуниссен парттине кӗрет. Çак вӑхӑталла хӗвелтухаçӗнђи фронтри 5-мӗш армийӗн политтӗк пайӗ „Ђухӑнсен сасси“ йатлӑ хаçат кӑларма тапратат̆. Çав хаçатра Иван Йевкрафовиђ орканисатси ӗçне тӑват̆, тата çырса та тӑрат̆. Тата нумайрах вӗренес тесе, çак вӑхӑтрах Хусанти Аслӑ Петакокик Инçтитутне кӗрет. Унта та, кунта та вӑл, канма пӗлмесӗр, выçӑлла-тутӑллӑ пурӑнӑçа пӑхмасӑр, пур вӑйне хурса ӗçлет. „Ђухӑнсен сасси“ фронтри хаçат пулнӑ пирки ӑна вакунран тухмасӑр кӑларса çӳремелле пулат̆. Ђехсем Çӗпӗрелле тарса пынӑ майӗпе ӑна кӑларма Унтритсов Ӗпху хулине çитет. Анђах, çак вӑхӑтра Колђђак сиксе тухат̆. Ӗпхӳрен тармалла пулат̆. Унтритсов йулташӗсемпе ђӑваш типокрафине аран-аран çӑлса тухат̆. Колђђак Хусан патнех çитет. Çав майпа Унтритсов йулташӗсемпе каллех Хусаналла ђакат̆... Кашни кун „Ђухӑнсен сасси“ тухса тӑрса ђӑваш хӗрлӗсалтаксене вӗсем мӗншӗн тӑшмана хирӗç тӑрасси çинђен, кам ӗçхурахалӑхӗн ђӑн тусӗ пулса тӑни çинђен ӑнлантарса тӑнӑ. Унтритсовпа йулташӗсен тепӗр ђухне хаçата пӑрахса аллисене пӑшал тытса та тӑшмана хирӗç тӑмалла пулнӑ. Вӗсем хӑйсен пуçӗсене шеллемен:

Хӗн хур курнӑ куп иртрӗ...
Пӗр пӗринпе пӗрлешсе
Тӑђӗç „Çӗрпе ирӗкшӗн“
Çӗр хаљ пире тухрӗ...
  Пуриншӗн те пуç çине
  Хӗрлӗ йалав çӗкленђӗ
  Пирӗн йунпа хӗрелђӗ
  Куççулсемпе çӑвӑнђӗ...
Хӑпса, йалав хыçӗнђен
Џысӑк ӗçе пӗтерме
Ӗçлӗ халӑх ерттелӗ
Пысӑк вӑрçалла утрӗ...
  Хамӑр тӑвас ӗç патне
  Епӗр хамӑр çитрӗмӗр;
  Ку ӗç пире йӑвӑр пулђӗ—
  Çырманалла йун йухрӗ...
Пит çирӗппӗн пӗрлешер,
Шур усала пӗтерер,
Хамӑр ўснӗ çӗр-шыва
Кӑларӑпӑр çуталла—
  Йалавне те çўлелле
  Çӗклӗр! Йулташ, малалла!

[„Малалла“]

—тесе çырат̆ ку вӑхӑтра Унтритсов. Унпа пӗрле пур ӗçхалӑхӗ тӑшмана хирӗç пикенсе тӑрат̆. Колђђака кайакла, Çӗпӗрелле ўпӗнтерет, Колђђак куса-тӑран урапана кустарса йанӑ пек кайалла ђакат̆. Ӑна хӑваласа ђӑвашсем «Ђухӑнсен сасси» хаçата та йараççӗ. Унтритсовӑн каллех вакун çинђе хаçат кӑларса пырса Çӗпӗрелле каймалла тивет. Тулта ку вӑхӑтра çуркунне тӑрат̆. Уйсем шӗлкӗшленме тапратнӑ. Кам вӑрçӑра пулнах çуркуннепе кӗркунне вӑрçӑ ӗçне тума йепле кансӗррине пӗлет. Ку вӑхӑтра салтакӑн шӑнасси те, шыва кӗрсе ўкесси те пур.

Ӗпхӳрен типокрафи çӑлса тухнӑ ђухнех вӗрилле пулса пӑсӑлнӑ Унтритсов кунран кун нађарланса пырса ӗçе йурӑхсӑрах тухат̆ те ирӗксӗрех ӗçе пӑрахса киле Уйпуç Йалтрана (Йетӗрне у.) тавӑрӑнат̆, вырӑн çинех выртат̆. Анђах, темӗн ђул ђирлӗ пулсан та унӑн, хӑй йуратнӑ ӗç — çырасси — асран каймаст̆; вӑл „Канаша“ та çырса тӑрат̆, тата çырма тапратнӑ траммӑсене çырса пӗтерет; çӗнӗрен савӑсем те çырат̆.

Çамрӑк кӗлетке ђирпе тӗреклӗ вӑрçаймаст̆, Иван çамрӑк пуçӑнах (вӑл 1900 ç. раштавӑн 31 çур.) хавшаlса çитет те 1920-мӗш çулхи пуш уйӑхӗн 13-мӗшӗнђе вилсе те выртат̆.

* * *

Хӑй вилессипе Иван тахçанах сисет. Вӑл çырат̆:

Сыв пул, йуратнӑ ђунӑм,
Ман пек пурнӑçран хӑтӑл:—
Манран пурӑнӑç кулђӗ,
Савӑнӑçне пытарђӗ...
  Тетен епӗ çук пулсан
  Хайар йатпа ан асӑн,
  Лере, апла, ўлӗмрен
  Манӑн ӑша çунтарӑн...
...Мана ун ђух курайманӑн:
Епӗ инçе пулӑп.
Шухӑшпа та çитеймӗн:
Урӑх тӗнђене куçӑп...
Тӑшман çитет... Инçе мар...
Манӑн кунçул вӑрӑм мар...

(„Савни вађђи йулашки сӑмахсем“)

Хӑйӗн тусӗсем патне те вӑл «çыру» çырса хӑварат̆:

Ӑш пўлмӗкре ларнӑ ђух,
Тусӑм, маншӑн ан хуйхӑр,
Тусна курас килнӗ ђух
Куçна хуп та ална сул!
  Санӑн тусу айакра
  Сывмарланса вӑл выртат̆,
  Выçӑ пирки куç хупса
  Ђунне парас шухӑшлат̆.
Хађхи Канаш ирӗкне
Вӑл ђунӗпе йуратрӗ,
Çавна пулӑшас тесе
Кунӗн-çӗрӗн ӗçлерӗ...
  Анђах, ђунӑм, йулташсем
  Тусна манђӗç çав вӗсем:
  Татӑк çӑкӑр ламарӗç
  Ун ӗçсене пӗлмерӗç.
Ђунӑм, тусун йулташсем
Унран татӑк хӗрхенђӗç,
Ун кун-çулне кӗскетрӗç,
Ӑна вӗсем пӑрахрӗç.
  Кун-çул кӗскелсе килет
  Ӑш-ђик çунса пӗтерет,
  Мӗншӗн маншӑн хуйхӑ-ши?
  Тусӑм мана манђӗ-ши?
. . . . . . . . . . .
Ӑш пўлмӗкре ларнӑ ђух
Тусӑм маншӑн ан хуйхӑр,
Тусна курас килнӗ ђух
Куçна уç та ална сул!

Çапла хӑй вилессипе катаранах сиссе, вилессине кӗретӗнех пӗлсе тӑрса çӗр çинђи пурӑнӑçӗн пӗр минутне те усӑсӑр иртерес мар тесе, вӑл сӑвӑсем çырат̆, ӗçлет. Ђунӗ темӗн ђул хурлансан та, аллисене усса лармаст̆, вӑл хӑй мӗнле талансӑр пурӑнса, мӗншӗн вилнине çӗр çинђе йулакансене пӗлтерсе хӑварас шутпа, ун çинђен çтихсем çырса хӑварат̆.

Çапла пурӑнса, çамрӑк пуçӑнах вилет Иван Йевкрафовиђ Ахах.

* * *

Ахах... Ахах вӑл ман ратне пулнӑ, анҭах ратне пулнӑшӑн мар вӑл ман тӑван, — ман пекех ҭӑваш пулнӑшӑн, ман пекех вӑл пурӑнӑҫӑн тӗрӗс ҫулне пикенсе шыранӑшӑн, ман пекех, айван пирки, йӑнӑшсем тунӑшӑн, ман пекех ҭӑваша ҫунса йуратнӑшӑн, ҫапах та—ман пек мар вара—ҭӑваш поеҭӗ пулнӑшӑн — вӑл ман тӑван. Манпа ҫеҫ мар вӑл пӗр тӑван — пӗтӗм шухӑшлама пӗлекен, ӗҫе йуратакан ҭӑваш ӗҫхурахалӑхӗпе вӑл пӗр тӑван, пур ҭӑваш халӑхӗн вӑл ҭӑн, ахах пек хаклӑ тӑван ывӑлӗ.

Ахаҭрен мар вӑл виҫӗ сӑмах ҫырсан та виҫҫӗшӗнҭен пӗр сӑмахне тӑван ҫӗр-шыва, тӑван ҭӑваша асӑнса ҫыраҭ.

Еп ҫуралнӑ ҫӗр-шывӑм,
Ӗмӗр ӗмӗрӗпелех
Сана тӗттӗм хуплаймӗ,
Сана усал ҫийеймӗ.
Ҫук, ҫуралнӑ ҫӗр-шывӑм,
Нумай тӑмӗ, Шурӑм-пуҫ
Сана ҫутатса йарӗ;
Сан ҫунату ҫитӗнӗ,
Ҫӗнӗ вӑхӑт ҭас ҫитӗ...

Ахаҭ мар ҫав вӑл, кирек ӑҫта пулсан та тӑван ҫӗр-шыва таврӑнассине питӗ паха шутлат̆:

Ҫуралнӑ ҫӗр-шыври йала
Ҫитсе кӗтӗм васкаса
Ҫуртсем йурпа витӗннӗ
Йӑвӑр пирки лапҭӑннӑ.
[„Тӑлӑх турат“]

Ку та сахал: унӑн тӑван ҫӗр-шывшӑн хӑйсен пурӑнӑҫӗсене паракан керойсем те пур:

Питӗ хытӑ ӗненсе
Аслӑ ҫын пек вӑрҫӑра
Пӗр хӑрамасӑр вӑл вилҭӗ...
Хӑй ҫуралнӑ ҫӗр-шывшӑн
Хӑй пурӑнӑҫне вӑл паҭӗ...
(„Амӑшне“)

Ахаҭрен мар ҫав вӑл, хӑйӗн ҫамрӑк ҫеҫке пурӑнӑҫӗ кӗскелсе ҫитнине сиссенех вилме килелле (Йалтрана) таврӑнат̆. Ҫав тери вӑл хӑйӗн тӑван ҫӗр-шывне ытараймаст̆.

Вӑл пӗрмай ах тӑван ҫӗр-шыва асӑннине кура, вӑл ӑна йуратнине кура, епӗр вӑл натсионалист пулнӑ пуҭ, теме те пултаратпӑр. Анҭах, ку апла мар: вӑл натсионалист мар, вӑл ҫамрӑк пулсан та, вӗренсе пиҫмен пулсан та — хӑйӗн кайас ҫулне инттернатсионалисӑм, комунисӑм ҫулӗпе ҫирӗп ҫыхса тӑрат̆. Унӑн «тӑван ҫӗр-шывӗ» урӑхла каласан пӗтӗм ӗҫхурахалӑхӗн сотсиалисӑмпа Канаш Совет Респуплӗкӗ тени пулат̆:

Вара ун ҭух, ҫав ҫут кун,
Пирӗн йӑхсем пӗрлешӗҫ...

тет вӑл. Унҭҭен, тӑван ҫӗр-шыва ӗҫхурахалӑхӗн пур тӑшмансенҭен те питӗ пикенсе, питӗ ҫивӗт сыхласа тӑмалла:

Пит̆ӗ кансӗр ҫанталӑк...
Ҫил вӗрнипе йур вӗҫет...
Лере, картасем панҭе,
Пӗр ҫын такама кӗтет.
Калпак... ҫӗнӗ шур кӗрӗк...
Ӑш ҫӑматӑ уринҭе—
Патронсемпе ҫыхнӑ пилӗк,
Ҫӗнӗ пӑшал аллинҭе.
Пирӗн Хӗрлӗ Салтак вӑл,
Хуралта, иккен, тӑрат̆.
Таса... Харсӑр... Лӑпкӑ вӑл
Шур тӑшмансенҭ̈ен сыхлат̆.

Кирлӗ пулин, тӑван ҫӗр-шывшӑн вӑрҫа та кӗрсе каймалла:

Акӑ аслати авӑтрӗ
Савнӑ килне пӑрахса
Тӗрӗслӗхшӗн ҫапӑҫма
Вӑл ӗненсе вӑрҫа кӗҭ.
(„Амӑшне“)

Тӑван ҫӗр-шывшӑн кирек хӑҫан та вилме те хатӗр пулмалла

Акӑ ӗнтӗ вӑл ӳкрӗ
Йулташсемшӗн вӑл вилҭӗ...

Мӗншӗн тесен:

Канаш ывӑлӗ вӑл пулҭӗ.

* * *

Ахах ҫамрӑк пуҫӑнах вилнӗ. Унӑн пурӑнӑҫӗ ытла та кӗске пулнӑ. Хӑйӗн кӗске ӗмӗрӗнҭе вӑл нумайах ҫырса хӑварайман. Анҭах, ҫак сахал наҫлетствӑ та пире вӑл питӗ ҭаплӑ поет пулни ҫинҭенех калат̆. Ерне, унӑн темиҫе ҫул пӗр канмасӑр ҫтихсем ҫырса майланӑ хӑйӗн школӗ ҫук, вӑл кашни ҫырмассерен йе Пушкӗн ҫтихсене, йе Плок ҫтихӗсене йе Орешшӗн ҫтихӗсене кура ҫырнӑ. Кашни ҫырмассеренех вӑл такам сӑввисен кӗввисене парӑнса ҫырнӑ. Унӑн Йеҫҫенӗн кӗввисем те сахал мар. Ҫапах та, унӑн йуррисем шӑрҫа пек шӑрапса тухнӑ: вулама та ҫӑмӑл, асран та каймаҫҫӗ, шухӑшӗ те вӑйлӑ. Унӑн сӑввисене пахаласа тухса хак хуракансем пулӗҫ, тесе шанатпӑр.

Ахах хӑйӗн кӗске ӗмӗрӗнҭе темӗн ҭул та феҭйеттонсем ҫырнӑ. Вӗсене халӗ пахаламастпӑр та. Вӑл мӗнле шурналист пулнине халӗ тӗпҭеместпӗр те, мӗншӗн тесен ун ҭухне унпа пӗрле ӗҫлекенсем Унтритсовӑн ку ӗҫӗ ҫинҭен лайӑхрах, тӗплӗрех каласа пама пултарасса шанатпӑр. Епӗр пӗлекен сӑвӑсен йаҭӗсем ҫапла:

Амӑшне, Ҫуралнӑ ҫӗр-шыва, Хуралта, Купӑс сасси, Малалла, Тӑван анне, Савнӑ хӗр, Сарӑ хӗр, тата урӑххисем те.

Сӑвӑсемсӗр пуҫне тата вӑл темиҫе трамӑ ҫырнӑ. Вӗсем: Тайка шавлат̆, Тӑвана йуратни, Марине тата поемӑсем те ҫырнӑ.

Вӑл мӗн-мӗн йапала ҫырса хӑварнине халӗ тӗрӗслесе те ҫитерес ҫук, мӗншӗн тесен Ахахӑн сӑввисем нумайӗшӗ ҫынсем аллине лексе, пытанса вӑртаҫҫӗ. Унӑн сӑввисем ӑҫта выртнине пӗлекен пулсан, вӗсене «Канаш» сойуса йама тӑрӑшмалла.



# КРИТТĔК ПАЙĔ.

**Патман.**

## Йурату ыйтăвĕ ҫăваш литтераттурĕнҫе.

**(Хумма Ҫеменĕн „Хĕр хăйуллăхĕ“, М. Иссайăвăн „Рапфак хĕрĕ“ калавсене криттĕкленĕ май).**

I.

„Сунталăн“ 7—8-мĕш номĕрĕнҫе Хумма Ҫеменĕпе Исайĕвăн калавĕсене вуласа тухсан мана пĕр иртнĕ йапала аса килсе кайрĕ. Хăҫанне астăваймастăп,—пĕрре, „Канаш“ сойусĕн пуххинҫе темле ыйту сӳтсе йавнă ҫухне, хĕрсе кайса тавлашнă вăхăтра, пĕр совпартшкулра вĕренекен курсант пирĕн поетсем ҫинҫен ҫапла каласа хуҫĕ: —«Мĕнле-ха вăл пирĕн поетсем—мĕн йапала ҫинҫен ҫырма тытăнаççĕ, ҫиҫҫас йурату ҫине кĕрсе кайаççĕ. Ниушлĕ йуратусăр пуçне ҫырмалли урăх ним йапала та ҫук?! терĕ. Пирĕн поетсем йурату йуррипе антратса ҫитернĕ курсанта ун ҫухне пухура мĕнле ответ панине астăваймастăп, анҫах хаҫхи шухăшпа ҫав курсанта манăн ҫакăн пек ответ парас килет:

Йурату ыйтăвĕ, ҫăнах та ,литтераттурăра питĕ пысăк вырăн йышăнса тăрай. Курттăмăн каласан—писсаттĕлсемпе поетсенҫен ҫылайĕшĕ ҫак ыйту ҫине пырса тăрăнаççех. Анҫах вăл йапала пур поетсемпе писсаттĕлсемшĕн те правĕлă вырăнҫе пулма пултараймасй. Кашни правĕлăнах искҫуҫҫени тени пур, вăл правĕлĕнҫен пĕҫĕкрех, анҫах правĕлă мар йапалан искҫуҫҫенийĕ тĕп йапалинҫен пысăкрах та пулма пултарай. Ҫавăнпа йурату ыйтăвĕ ҫинҫен ҫырасси те правĕлă мар пулсан, вăл литтераттурăра ытти ыйтусенҫен пĕҫĕкрех вырăн йышăнса тăма пултарай. Ку ҫăнах та тĕрĕс пулмалла, мĕншĕн тесен литтераттурă етем опҫĕствин пурнăҫне ҫутатса тăрай,—опҫĕства пурнăҫĕ, ун ҫине ылмашса кайнă куҫпа пăхмасан, йурату ыйтăвĕпе кăна тытăнса тăмасй,—унăн тата кирлĕрех те пысăкрах та ыйтусем пур: економĕкă, классен кĕрешĕвĕ, куҫттурă, т. ыт. те. Ҫавăнпа йурату ыйтăвĕ литтераттурăра ҫи пысăк вырăн йышăнса тăрай пулсан, вăл вăхăтри опҫĕства пурнăҫĕ, вырăсла каласан, нормаҫнă пурнăç мар, вăл вăхăтри литтераттурă та тĕрĕс литтераттурă мар.

Тепĕр йенҫен, ман шухăшпа, ҫак тарăхса ҫитнĕ курсант хăй те питех тĕрĕсех калайман пек туйăнай. Пирĕн ҫăваш литтераттуринҫе халиҫҫен ун пекех тарăхса ҫитме сăлтав пулман пулмалла. Ҫăваш литтераттури, „Канаш“ Сойусĕ йертсе пынипе, тĕрĕс ҫул ҫинҫе пырай. Вăл вăхăтри ыйтусене ҫутатса пырай. Хăйĕн талккишĕпе пысăках пулмасассăн та, вăл вăхăтран иртсе, ҫăваш халăхĕн пайан кунхи ыйтăвĕсенҫен уйăрăлса каймасй, вĕсемпе тан пырай. Калăпăр, ҫăвашсен 1920-мĕш ҫулта автономлă оплăç пулҫĕ. Ҫак политтĕклă фактпа ытти ыйтусем темĕн ҫухлех сыхăнса тăраççĕ: куҫттурă, йăла (быт) т. ыт. те. Ҫаксене пирĕн литтераттурă вăхăтра ҫутатса тăҫĕ. Илĕпĕр ҫамрăксене, йе хĕрарăмсене орканисатсилес ĕçе. Ҫăваш литтераттури вăл ĕçе те нумай пулăшрĕ. Ҫамрăксем тĕлĕшĕнҫен—пирĕн комсомол поеҫĕсем, писсаттĕлĕсем пур. Хĕрарăмсен тĕлĕшĕнҫен те пирĕн ҫылай ҫитĕнсе ҫитнĕ, ҫасах манмалла мар опрăссем пур: „Пуштă“, „Наçтук“ т. ыт. те. Ытти ыйтусем ҫинҫен те ҫавнах калама пулай—ҫăваш литтераттури ҫăваш пурнăҫĕ улшăнса пынă май пырай, вăл опҫĕства пурнăҫĕн саккунĕсне пăхăнса пырай. Ҫакна аса илсен, ҫӳлте асăннă курсант сăмахĕ пĕртте тĕрĕс пек туйăнмасй, мĕншĕн тесен ҫăваш пурнăҫĕнҫе, ҫăваш литтераттури пуçланнăранпа, нихăш вăхăтра та йурату ыйтăвĕ пуç пулса тăракан ыйту пулман.

Ҫапла ĕнтĕ, ман шухăшпа, ҫăваш писсаттĕлĕсемпе поеҫĕсем, пĕр йурату ҫинҫен кăна мар, ытти йапаласем ҫинҫен те ҫыраççĕ. Ку та сахал—вĕсен творҫĕствинҫе йурату ыйтăвĕ питĕ сахал вырăн йышăнса тăнă—пирĕн писсаттĕлсем халиҫҫен хăйсен творҫĕствинҫе йурату ыйтăвĕнҫен актуаҫнăрах ыйтусене ҫутатса пынă.

Малашне мĕнле пулас пек? Ку ыйтăва хирĕç каласа пама йавăр, мĕншĕн тесен литтераттурăри темăсем улшăнасси халăх пурнăҫĕн ытти условисем улшăннинҫен килет. Ҫавăнпа ҫӳлте лартнă ыйтăва татса парас пулсан, ҫав ытти условисен улшăнăвĕсене те пăхса тухас пулай.

Илер економĕкă улшăнуне. Ҫăваш халăхĕн економĕкки тĕрекленсех пырай. Ун пирки епĕр иккĕленме пултараймастпăр. Ҫăваш ĕçхалăхĕ пĕр пайан пурăнмаллăх ҫăкăршăн анҫах тăрăшни ҫулран ҫул ҫакса пырай. Економĕкă улшăннă май халăх итеолокийĕпе, пçихолокийĕ те улшăнай. Кун пирки те епĕр иккĕленме пултараймастпăр. Илĕпĕр тĕслĕхе ҫăваш пурăнăçнех Выçлăх ҫулсенҫе пирĕн пçихолокинҫе тутă хырăм итеалĕ пуç пулса тăраҫҫĕ. Анҫах выçлăх ҫулсем иртсенех, хуçайства хăпара пуçласанах пирĕн пçихолоки те паллах улшăна пуçларĕ: тутă хырăм итеалĕ хăй сăнне ҫухатнăçем ҫухатса пыҫĕ, ун вырăнне пирĕн пçихолокине ҫылай ытти йапаласем кĕрсе пыҫĕç. Ку мĕне пĕлтерет? Вăл халăх пçихолокийĕ улшăннине пĕлтерет. Вăлах тата пирĕн литтераттурăри темăсем те улшăннине пĕлтерет, мĕншĕн тесен литтераттурă халăх пçихолокине ҫутатса пырай. Ҫак улшăнакан темăсем хушшинҫе епĕр йурату ыйтăвĕсем пулас ҫук тесе нийепле те калама пултараймастпăр. Вĕсем пулаççех, пулма мар кунран кун ӳссе пыма пултараççĕ, мĕншĕн тесен економĕкă йенҫен халăх тĕрекленнĕ май, унăн пурнăҫĕ сарăлса, илемленсе пыма тивĕçлĕ.

Тепĕр ыйту. Ку йавлени ҫине мĕнле пăхмалла? Литтераттурăра йурату кирлĕ-и, кирлĕ мари? Вăл ĕçсĕр аптăранă ҫынсене вуласа савăнтармалла йапала анҫах мари? Ман шухăшпа, йурату ыйтуне литтераттурăран кăларса пăрахма май ҫук. Ун пек тентентсисем пулас пулсан та, вĕсем йанăш пулассăн туйăнай. Мĕншĕн? Мĕншĕн тесен литтераттурă халăхăн пĕтĕм пурнăҫне ҫутатса тăрай. Йурату ыйтуне литтераттурăран кăларса пăрахас тени, вăл халăх пурнăҫĕнҫе йурату тавраш ҫук тенипе пĕрех пулай. Паллах, епĕр апла калама пултараймастпăр.

Анҫах вăл ыйтăва поетсемпе писсаттĕлсем мĕнле ҫутатма кирлине калама пултаратпăр. Вăл кирлĕ те, мĕншĕн тесен йурату ыйтуне поетсемпе писсаттĕлсем ĕçхалăх пçихолокийĕпе ҫыхăнтарса пымасан, вăл литтераттурăра питĕ пысăк йавăш пулма пултарай. Вăл йанăша кайран тӳрлетме йавăртарах пулĕ. Йанăш тăвас мар тесен пирĕн, тен иртерех пулсан та, ку ыйтăва хатĕр пулса кĕтсе илмелле. Пирĕн пахҫтерех ăна пур йенҫен те ҫавăрса пăхса тĕрĕслемелле. Вара вăл пирĕншĕн ҫĕнĕ йапала пулмĕ, ăна епĕр мĕнле ăнланмаллине, мĕнле ҫутатмаллине пĕлĕпĕр.

## II.

Хумма Çеменӗ, вырӑс литтераттурӗнҭе мӗнле формӑ пулнӑ, çавсене ним тишкӗрмесӗр ҭӑваш литтераттурӗне кӗртме тӑрӑшакансkер, новеллӑ çырнӑ. Новелли „Хӗр хӑйуллӑхӗ“ йатлӑ. Ҭӑваш литтераттурине новеллӑ кўртиине епӗ пӗртте хирӗç мар, вӑл аван йапала. Пысӑках та мар калавсем, вӗсен сотершанийӗсем те ӑнланма йӑвӑр пулмасан, пирӗн ҭӑвашсене вулама вӗсем питӗ те çӑмӑл пулмалла. Анҭах новеллӑна Хумма Çеменӗ пек ӑнланни, пуринҭен ытла тата литтераттурӑна та Хумма Çеменӗ пек пӗлӗтпе çӗр хушшинҭе тӗреклӗ, паллӑ вырӑн тупса пама пӗлменни, тўрех калас, ниӑçта йурӑхсӑр йапала.

Хумма Çеменӗ литтераттурӑра ҭылайтанпа ӗçлет. Окт̆апӗр хыççӑнхи çамрӑк писсаттӗлсенҭен Хумма Çеменӗ ҭи аслӑраххисенҭен пӗри. Укӑн çырнисем те нумай—сӑвӑсем, калавсем, трамӑсем. Çапах та Хумма Çеменӗ литтераттурӑра тӗрӗс лини тупаймаст̆. Хумма Çеменӗ новеллӑ çырат̆. Новеллӑ çӑмӑл сотершаниллӗ пӗҭӗк калав иккенне пӗлет вӑл. Çавӑнпа та вӑл ним сотершанисӗр салакайӑк сӑмсинҭен те кӗске калав çырат̆. Ку—пӗрре. Тепри—новеллӑ сӑмах питӗ илемлӗн илтӗнет, çавӑнпа та вӑл хӑй калавне тем пек аҭаш, тем пек илемлӗ çырма тӑрӑшат̆. Хумма Çемен ҭӗлхине пӗлетнӗр епӗр. Унӑн литтераттурлӑ прийомӗсене те пӗлетпӗр,—ҭӗлхи унӑн—халӑх ҭӗлхи, çӑмӑл, ӑнланмалла; прийомӗсем—пӗрин хыççӑн тепри илӗрте илӗрте систермесӗрех малалла вулаттарса пыраççӗ. Анҭах ыйтас килет—мӗн шухӑшпа Хумма Çеменӗ çук йапала çинҭен çав тӗрлӗ лайӑх çырат̆-ши? Ма ниме йурӑхсӑр сӑвва илемлӗ кӗьӗсемпе шӑрантарса йурлат̆-ши?

Ман шухӑшпа, ку йӑнӑш литтераттурӑна хӑй майлӑ ӑнланнӑран килет. Хумма Çеменӗ шухӑшӗпе литтераттурӑ—илемлӗ сӑмах анҭах, ӑна тутлӑ апат çинӗ хыççӑн хырӑмсене шӑлкаласа вуланӑ ҭух ҭуна савӑнтарат̆ пулсан, илемлӗ литтераттурӑ теме пулат̆. Хумма Çеменӗ литтераттурӑран урӑх нимӗн те кӗтмест те шырамаст̆ те.

Илӗпӗр унӑн новеллин тӗп шухӑшне. Тӗп шухӑшӗ унӑн çакӑ: йурату вӑйлӑ йапала, вӑл тем тутарма та пултарӗ (новеллӑра автӑр уҭҭиттӗлнитсӑна хӗр пуçпа йуратнӑ çынна хӑйне каҭҭа илме пуççаптарат̆). Ҭӑн, йурату вӑйлӑ, вӑл хӑшне хӑшне пуçне те çухаттарат̆, анҭах мӗнле инттересши ҭӑваш ӗçхалӑхне уйрӑм уҭҭиттӗлнитсӑ вулӑс претçетаттӗлӗ патне каҭҭа ил тесе çыру çырни? Пӗртте инттереснӑ мар. Мӗншӗн? Мӗншӗн тесен калаври уҭҭиттӗлнитсӑ ҭӑваш халӑхӗпе нимӗнпе те çыхӑнса тӑмаст̆, мӗншӗн тесен вӑл ӗçхалӑх хушшинҭи тип мар, мӗншӗн тесен унӑн йуратӑвӗ те типлӑ йурату мар, автӑр шухӑшласа кӑларнӑ йурату.

Ҭӑнах та, кама инттереслӑ пулӗши уҭҭиттӗлнитсӑ, (сӑмах май калас,—уҭҭиттӗлнитси те ӗретлӗскер мар тата: аҭисем паçӑрах вӗренме килнӗ, вӑл вӗсем çине çаврӑнса та пӑхмаст̆, аҭисене çырупа виçшер çухрӑм ҭуптарат̆; униӑн, хӑйӗнҭен мар, каçуннӑй йапаласенҭен тўлет. Ун пек уҭҭиттӗлнитсӑсем халҭхи вӑхӑтра типсем пулма пултараççӗши вара?), кама инттереслӑ пулӗши çак уҭҭиттӗлнитсӑ хӑй пўртӗнҭе уткаласа çўрени, çемçе крават̆ӗ çинҭе маҭҭа çине пӑхса выртни, йе тата хӑйӗн таҭка ўҭӗсене сӑтӑркаласа хӑйне хӑй кӑмӑллӑ йулни? Пирӗн шухӑшпа, никама та инттереснӑ мар, никама та усӑллӑ мар. Ку йурату ӗçхалӑхӗнҭен, хӑй класӗнҭен, катӑлса ўкнӗ уйрӑм уҭҭиттӗлнитсӑ йуратувӗ. Ӗççӗр аптӑранӑ, йе ӑна йуратман çын йуратувӗ. Паллах, ун çинҭен çырни ӗçхалӑхне ним усӑ та памаст̆. Çавӑнпа, çак новеллӑпа, Хумма Çеменӗ йурату ыйтуне ҭӑваш ӗçхалӑхӗшӗн мар, унтан уйрӑм тӑракан, уйрӑм çынсемшӗн анҭах çутатма тӑрӑшат̆. Ку литтераттурӑра тӗрӗс мар утӑм тунине кӑтартат̆.

Тепӗр йенҭен Хумма Çеменӗ новеллинҭи йурату мӗнле йурат/ вӑл? Вӑл етем пурнӑçӗнҭи ытти йавленисемпе çыхӑнса тӑрат̆и? Сук, Хумма Çеменӗ куракан йурату вӑл опҭӗствӑ пурнӑçӗнҭи йавленисемпе пӗрре те çыхӑнса тӑмаст̆. Автӑр шухӑшӗпе, опҭӗствӑ пурнӑçӗ—пӗр йапала, йурату тепӗр йапала. Пурнӑç саккунӗсем пӗр йеннелле туртаççӗ, йурату йӗркисем тепӗр йеннелле. Вӗсем хушшинҭе ним çыхӑну та çук. Çапла ӑнланат̆ йуратува Хумма Çеменӗ. Ку, паллах, тӗрӗс мар.

* * *

„Сунталӑн“ çав номӗрӗнҭех йурату çинҭен тепӗр калав пур. Ку—Исайӗвӑн „Рапфак хӗрӗ“. Ман шутпа, çак калав Хумма Çеменӗсен куçӗсене ҭылай уçмалла йапала пек туйӑнат̆. Исайӗв—литтераттурӑра хӑйне ҭапа кӑларма ӗлкӗреймен-ха. Унӑн мӗн пур çырни те „Сунтал“ çинҭи криттӗккӑллӑ саметкӑсем анҭах. „Сунтала“ вулакансем Исайӗва çав саметкӑсӑм тӑрӑх анҭах паллама пултараççӗ. Анҭах Исайӗв—литтераттурӑна ӑнланат̆, вӑл опҭӗствӑ пурнӑçӗнҭе мӗнле вырӑн йышӑнса тӑнине те пӗлет. Исайӗв—писсаттӗл-опщественнӗк. Çавӑнпа та вӑл йурату ыйтуне те опҭӗствӑ пурнӑçӗн саккунӗсемпе çыхӑнтарса пырат̆.

Ҭӑн малтан Исайӗв ӑнланакан йурату клас хушшинҭи, ӑшӗнҭи йавлени. Хумма Çеменӗ новеллинҭи тӗп керойӗ клас тӗлӗшӗнҭен паллах мар. Кӑтеринӑ Иванӑвнӑ

> «иккӗмӗш çул ӗнтӗ çак йала вӗрентме килни. Тӑван йалӗ, таван уй-хирсем унӑн таçта лере, уйес урлӑ тӑрса йулнӑ... Çамрӑк уҭҭиттӗлнитсӑ хӑй кил шухӑшне пӑрахнӑ пекех пурӑнат̆ йулашки вӑхӑтра».

Паллах, Кӑтеринӑ Иванӑвнӑ, тен хресҭен хӗрӗ пулнӑ пулсан та, хресҭен массинҭен уйӑрӑлнӑ çын. Вӑл хресҭен хӗрарӑмсем çине те çўлтерехрен пӑхат̆.

— Ну, мӗншӗн çилленес-ха, тет вӑл тӗттӗм, култтурлӑ мар ҭӑваш хӗрарӑмсем çине пӑхса.

Тепӗр йенҭен, Кӑтеринӑ Иванӑвнӑ ӗç инттеликентси çемйине те хутшӑнаймаст̆. Вӑл происвотствӑна ҭунӗпе çыпçӑнаймаст̆, унӑн „решимне“ анҭах „тўссе“ пурӑнат̆. Аҭасене те йепле лайӑхрах вӗрентес шухӑш, класа кӗриҭҭен мӗн çинҭен вӗрентес шухӑш çук унӑн. Ун çинҭен автӑр çапла калат̆:

> «Аҭасем килесси тепӗр сехет çурӑ йахӑнах пурха. Кӑтеринӑ Иванӑвнӑ кӗске, шалпар çаннисене тавӑркаласа, алӑ ўҭӗсене пӗрпӗрин çумне сӗртӗнтеркелесе пӑхрӗ. Таса, таҭка ўҭӗсем. Хуçийӗ вӗсемпе кӑмӑллӑ йулҭӗ».

Çапла майлӑ çын новеллӑри тӗп керой. Кама йуратат̆-ши вӑл? Вулӑс претçетаттӗлне, комуниса. Новеллӑра ун çинҭен нумай каламан, кӗскен кӑна:

> «Петӗр Митриҭ—вулӗçтӑвком претçетаттӗлӗ, кимнаçийе кӑшт кӑна вӗренсе пӗтереймен, вӗреннӗ çӗртенех вӑрçа илсе кайнӑ, комунис, халӑх хушшинҭе пит йатлӑскер, ҭипер арçын», 'тет.

Ман шухӑшпа, ку та ҭӑваш ӗçхалӑхӗ типӗ мар, мӗншӗн тесен ӗлӗкхи вӑхӑтра ҭӑвашсене кимнаçисене, вӗренме мар, ьурса çўреме те кӗртмен. Автӑрӗ ӑна «халӑх хушшинҭе пит йатлӑскер», тет. Ман шухӑшпа, «хисеплӗскер» тенӗ пулсан, урӑхларах çын пулнӑ пулӗҭҭӗ вӑл. Анҭах автӑр вӑл тӗлӗшрен уççӑн калама тытӑнарах тӑнӑ. Ахӑртне „ҭипер арçынӑн“ йатлӑ вырӑнта ларнӑ йаҭӗ анҭах пулнӑ пулмалла.

Илӗпӗр Иссайӗвӑн керойӗсене. Çемен—калавӑн тӗп

керойӗ—ђӑваш ађи, хӗрлӗ салтак. Хӗрлӗ ҫара кайиђђен типпокрафинђе ӗҫлекен напоршђӗк. Клас тӗлӗшӗнђен уҫҫӑн паллӑ керой. Рапфак хӗрӗ—Ђӑваш рапфакӗнђе вӗренет. Клас тӗлӗшӗнђен каллех паллӑ керой, мӗншӗн тесен рапфаксене ӗҫлекенсемпе ђухӑн хресђен ађисене анђах илеҫҫӗ. Пӗр сӑмахпа каласан, Иссайӗвӑн керойӗсем ӗҫхалӑх массинђен илнӗ типсем. Ку пӗрре. Кунта автӑрӑн литтераттурӑ ҫине клас куҫӗпе пӑхни уҫҫӑнах курӑнат̆.

Малалла ҫак керойсен йуратувӗ ҫинђен. Хумма Ҫеменӗн йурату хӑйне уйрӑм йапала, вӑл пурнӑҫри ытти йавленисемпе пӗртте ҫыхӑнмаст̆. Хумма Ҫеменӗ уђђиттӗлнитсӑн мӗн пур йуратуне те ҫак майсемпе анђах кӑтартат̆:

«Кӑтеринӑ Иванӑвнӑ унпа кӑҫал хӗлле, вулӑса ҫпектаккӑђ курма кайсан, унти шкул ҫуртӗнђе паллашнӑ. Ҫпектаккӑђ умӗн Митриђ халӑха вулӑсри ӗҫсем ҫинђен токлат туса пађӗ. Вара тӳрех Кӑтеринӑ Иванӑвнӑ ҫумне пырса ларђӗ. Ђасах ђунтан халапласа карӗҫ кусем. Пӑртак тӑрсанах, сисмен те, пӗр-пӗрин алӑ пӳрнисемпе выђама тапратнӑ. Ҫавӑнтанпа ҫамрӑк уђђиттӗлнитсӑ ӑшне Митриђ кӗмеллех кӗрсе вырнаҫрӗ».

Малалла Кӑтеринӑ Иванӑвнӑ, йурату антратнипе, пӗр вырӑнтан тепӗр вырӑна сулланса ҫӳреме тытӑнат̆. Акӑ вӑл ђӳређе умне пырса ларат̆. Анђах,

«Тем, ђӳређерен пӑхмашкӑн питех майлӑ мар пек туйӑнса кайрӗ ӑна. Вара венски пуканне илсе пырса лартрӗ. Хӗрлӗ сӑнлӑ та тађка ӳтлӗ, пӗр ђӑлха пуҫӗ пекки ҫеҫ тӑхӑнса йанӑ ҫара урисене пукан ҫине хурса, ђӳређе йанаххи ҫине тепӗр хут тайӗнђӗ вӑл».

Малалла: «Вара, ђеђеклӗ ӑшӑ шалӗпе йепле пӳркеннӗ ҫаплипех, хӑй вырӑнӗ ҫине айӑккӑн ђӑсӑлса выртрӗ».

Унтан: «Ђеђеклӗ ӑшӑ шалне ђасрах ура вӗҫнелле сирсе пӑрахрӗ те, айалти пӗр хут кӗпе вӗҫҫӗнех, кроваҭӗ хӗррине тӑрса ларђӗ»...

Кун хыҫҫӑн Кӑтеринӑ Иванӑвнӑ хӑйӗн тађка ӳђӗсене сӗртӗнтеркелесе пӑхат̆. Тађка ӳђӗсемпе кӑмӑллӑ йулат̆.

Кӗскен каласан, автӑр ҫак карттинсемпе хӑй керойӗн пҫихолокиллӗ моментсене кӑтартасшӑн пулнӑ. Кӑтартнӑ та. Анђах новеллӑри уђђиттӗлнитсӑ пҫихолокийӗ ӗҫхалӑх пҫихолокийӗпе пӗртте ҫыхӑнмаст̆, пађах урӑхла—вӑл карттинсем творен типсене килӗшӳллӗрех.

Иссайӗв керойӗсем мӗнле йуратаҫҫӗ-ши? Вӗсем те, новеллӑри пекех, ҫпектаккӑђте тӗл пулнӑ.

«Парттипе Канаш шкулӗнђе веђђӗр пулђӗ... Хађхи пек астӑватӑп—йулташ: ђӑваш хорӗ пулат̆ пайан, тесессӗн—ђӗрем кӑрт сиксе кайрӗ... Хор йурланӑ ђухне ђӑваш ӗҫхалӑхӗ темиҫе ӗмӗрхи пусмӑр сӑнђӑрне татса хӑватлӑн „Инттернатсионал“ йурланӑ пек пулђӗ. Ђӗрем кӑкӑртан тапса тухнӑ пек тапрӗ».

Автӑр ђӑн малтанах хӑй керойӗн настроенине, унӑн ђӗри мӗншӗн хытӑрах тапма пуҫланине кӑтартат̆. Ҫемене епӗр вӑл пӗр пӗђђӗн уйрӑм ҫын мар иккенне, унӑн ђӗри пӗтӗм ђӑваш ӗҫхалӑхӗпе пӗрле тапнине калав пуҫламӑшӗнђех куратпӑр. Рапфак хӗрӗн те ђӗри Ҫеменӗнни пекех тапнӑ пулмалла. Автӑр ун ҫинђен тӳрех каласа памаст̆, анђах вӑл паллӑ:

«Темшӗн, хам та калама пӗлместӗп, пирӗн куҫсем пӗрне пӗри тӗл пулса хире-хирӗҫ пӑхса тађӗҫ», тет ҫеҫ автӑр Ҫемен ђӗлхипе.

Ҫеменпе Рапфак хӗрӗ паллашсах паллашаҫҫӗ.

«Кашни кунах ӗҫ хыҫӗнђен урама уҫӑлма тухсан ӑна куратӑм...

Атӑл тӑрӑх тӑван кӗвӗ шӑранађђӗ... Хитре кӗвӗ, тӑван йурӑ кӑмӑла ҫӗклеђђӗ, ђӗре те савӑнсах хытӑрах тапађђӗ»...

Малалла Иссайӗв йурату ыйтӑвӗ ҫине ђӑн-ђӑн пролеттари куҫӗпе пӑхнине кӑтартат̆. Иссайӗв йуратувӗ пурнӑҫран уйрӑм йапала мар, вӑл пурнӑҫ условисемпе ҫыхӑнса пырат̆. Пуринђен ытла вӑл опђӑ пурнӑҫӗн условисенђен килет. Пӗр-пӗрне йепле хытӑ йуратаҫҫӗ пулсан та, малтан опђӑ пурнӑҫӗн инттересӗсем, ун хыҫҫӑн тин уйрӑм ҫыннӑн инттересӗ.

Кӑна кӑтартма автӑр Ҫемене йала, амӑшӗ патне, илсе кайат̆. Амӑшӗн хуҫайстви нађарланса ҫитнӗ, ҫурт-йӗрӗсем ишӗлеҫҫӗ. Ҫемҫе ђӗреллӗ Ҫемен амӑшне пулӑшса хӑй укҫипе пӗрле комсомол йађђейкки укҫине те 30 тенкӗ парса хӑварат̆. Формађнӑ шухӑшласан, ку Ҫеменӗн ђи пысӑк айӑпӗ. Анђах Ҫеменӗн ӑшӗнђе ҫунакан вуткӑвара аса илсен, вулакансен Ҫемене айӑплама хӑйуллӑх ҫитес ҫук.

Ҫеменӗн ӑшӗнђе темиҫе тӗрлӗ хирӗҫӳ—пӗр йенђен Ҫемен, комсомол йађђейккин ҫекреттарӗ, ђлен укҫине пуринђен те пухасшӑн тӑрӑшат̆,—тепӗр йенђен тӑван амӑшӗн йӑвӑр пурнӑҫне курса кӑмӑл хуҫӑлнипе пухнӑ укҫине те уйрӑм хуҫайства пулӑшма парса хӑварат̆. Ку та ҫитмест, Ҫемене ҫав вӑхӑтрах хӑйӗн ҫамрӑк пурнӑҫӗнђи вӑйлӑ ыйтусем те (йурату) аптӑратаҫҫӗ. Ҫапла вара автӑр, пӗр пӗђӗк калаврах вулакасен умне виҫӗ пысӑк ыйту пырса тӑратат̆.

**Пӗрремӗш ыйтӑвӗ:** Ҫемен ватӑ амӑшне киле пӗђђен пӑрахса хӑварса айӑпа кӗмест-ши?—вӗт кашни ывӑлхӗрӗнех хӑйӗн ашшӗпе амӑшне тӑрантарса усрас пулат̆.

**Иккӗмӗшӗ:** Ҫемен орканисатси укҫине уйрӑм хуҫайствӑ инттересӗсемшӗн салатни айӑплӑ йапала мар-ши?—вӗт комсомолӗсӑн малтан опђӗствӑ инттересӗ пулмалла, кайран тин уйрӑм ҫын инттересӗ.

**Виҫҫӗмӗшӗ:** Йулашки ыйтупа Ҫемене айӑплас пулсан та, ҫапах ӑна каҫарма ҫук-ши?—вӗт Ҫемен ӗҫсе, ҫисе йарса растраттӑ туман, вӑл амӑшне, хӑйне хӑй ӗҫлесе тӑрантарма пултарайман ҫынна, пулӑшса панӑ.

Ҫавӑн пек пысӑк ыйтусем лартат̆ Иссайӗв йурату ҫинђен ҫырнӑ май. Вулакансем, паллах, вӗсене кашни хӑй майлӑ татса пама пултараҫҫӗ, анђах автӑр та, хӑй Ҫемен айӑпӗ ҫине мӗнле пӑхнине кӑтартат̆—Рапфак хӗрӗ ӑна пӑрахат̆, мӗншӗн тесен ун куҫӗнђе Ҫемен опђӗствӑ инттересӗсене уйрӑм ҫын инттересне маларах хуни ытла та тивӗҫсӗр ӗҫ:

— Йутӑ есӗ, Йутӑ! Комсомола вӑтӑр кӗмӗл тенкӗлле сутакан мана текех йулташ мар, тет те Ҫеменрен уйӑрлат̆ вӑл.

Автӑр Ҫемене комсомолтан та кӑларса пӑрахтарат̆, мӗншӗн тесен унӑн айӑпӗ ђӑнах та пысӑк. Анђах ӑна Мускава илсе кайса каллех комсомола кӗрттерет, мӗншӗн тесен Ҫемен хутне кӗмеллӗх сӑлтавсем пур. Ҫемене кайран партти кӑнтитатне те илеҫҫӗ. Ҫеменӗн йађӗ тасалат̆, анђах ҫапах та вӑл Рапфак хӗрне ҫухатат̆.

Йурату ыйтӑвӗ Иссайӗв калавӗнђе ҫавӑн пек.

Ҫапла татса параҫҫӗ икӗ писсаттӗл йурату ыйтуне. Кирек кама та паллӑ, икӗ писсаттӗл йурату ҫине икӗ тӗрлӗ пӑхаҫҫӗ—пӗри йуратува хӑйне уйрӑм йапала тет, тепри—ҫук, йурату та опђӗствӑ пурнӑҫӗн инттересӗсемпе ҫыхӑнса пырат̆, ӑна пӑхӑнат̆ тет. Хӑшӗ тӗрӗс, хӑшӗ йӑнӑшне епӗ хам йенђен кӑтартма тӑрӑшрӑм. Ђӑваш пролеттари писсаттӗлӗсем ман шухӑша хӑйсен малашнехи творђӗствинђе ҫирӗплетӗҫ тесе ӗмӗтленетӗп.

Шупуççынни.

# Окт̆апĕрпе ђăваш литтераттури çинђен.

Илемлĕ литтераттурă кĕрикĕш халăхăн та халăх пурнăçĕнђен кайа йулса пырат̆, çавăнпа ăна хăш ђух, еккономикпа политтĕкĕн йухăмĕсем сасартăк улшăннă вăхăтра, хыпаласа пахалама йăвăр пулкалат̆. Револђутси кунĕсенђе илемлĕ литтераттурă йурăсен, пĕђĕк стихотворенисен формине тăхăнса револђутси ĕçĕсене тума пулăшат̆ пулсан та, çапах та вăл вăхăтрах револђутси сăнне кирлĕ таран çутатса параймаст̆. Ку шухăша вырăс литтераттурине илсен те тĕплеме пулат̆.

Пур те лайăх астăваççĕ, йепле Йупари револђутси хыççăн вырăс литтераттурĕ пĕр вăхăта йăлтах ђаранса тăнине: хăш хăш писсаттĕлсене Револђутси лапђăтсах лартрĕ те вĕсем çырмалли тăнĕ пуçĕсене çухатрĕç, хăшне револђутсин вайлă кĕрлен хумĕсем хăйсемпе пĕрле çавăрса револђутсин политтĕкĕпе еккономикне тума илсе кĕђĕç те, вĕсем те вăхăтлăха Парнас*) тăвĕ çинђен анђĕç: кĕслисене аллисенђен пăрахса хĕçпăшалпа револђутси йуррине йурларĕç. Çавăнпа вăл вăхăтсенђе вулакансем те кĕввисене вуласа вăхăт иртеређђĕç, йе çĕнĕ происветенисем сахал пирки револђутси искуствăна лапђăтса анђах лартат̆, тесе лăкăртатма йуратађђĕç. Ку тепĕр йенђен «опђествă» револђутсирен кайа йулнине те пĕлтерет. Ђăнах та пăртак кайалла çаврăнса пăхарха.

Пирĕн 1917—1920 çулсенђе «Канаш» çинђе, малтанах «Хыпар» çинђе, пĕђĕк стихотворенисемсĕр пуçне нимех те тухмасђĕ, вĕсенђен те хăшĕ хăшĕ кивĕ кĕвĕсенђен çапнисем пулнă. Епĕ астăвап: 1919 çулта Канашра манăн 1911 çулта Хусанта çапăнса тухнă кĕнекерен Ентип Антри Михађи «Пĕђђен» тата «Пирĕн çул» йатлă стихотворенисене «хăйĕн» туса çапнăђђĕ. Ку сăмахран кăна, анђах ку та пирĕн литтераттурă малтанах питĕ имшеркке пулнине, вăл револђутси кĕрленине сăн хурайманнине пĕлтерет.

Çавăнпах та темелле 1920 çулта Хусанта пит нађарăн, анĕш-тĕнĕш «Ђăваш халапĕсем» (Ђĕмпĕрте 1908 çулта тухнăскерне) пухрĕç. Пушкĕнăн «Полтав»не те çаплах кăларнă, тата уйрăмăн «Нарспи»пе «Хитре Ђĕкеç» çапăнса тухни те литтераттурă пурнăçран йулса пынинех пĕлтерет. Ку ĕнтĕ маркçисăм вĕрентнипе литтераттурă пурнăçăн тĕп никĕсĕ маррипе, вăл пурнăçа тăрласа пынине (надстройка) пĕлтерет, çавăнпа та пирĕн револђутси пулсанах ђăваш леттераттурĕ нађар пулнă пирки питех пăшăрханмасан та йурат̆. Вăл вăхăтра пирĕн йулташсен пăшалпа тупă кĕмсĕртетнине ытларах итлеме килнĕ, çавăнпа та нумайĕшĕ хĕçпăшал айĕнђе те çÿренисем пулнă, çырассипе йурлас вырăнне хĕрсе тăшмансене хăйсен йунĕсене тăксах хирнĕ.

Çапах та револђутси пуçламĕшĕнђех пирĕн ђăвашăн литтераттурĕ хăйĕн сăнсăпатне çĕнĕ сывлăш кĕнипе улшăнтарма тытăнђĕ, тесе вирлех калама йурат̆. Ку ђăн малтанах «Канаш»ра тухакан йурăсемпе сăвăсенђе анђах мар, уйрăмăн тухнă театтăрсенђе лартмалли траммăлла çырнă йапаласенђе те палăрђĕ.

Кунта малтанах ак мĕн каламалла: револђутси халăха нимрен ытла урама ђĕнсе те хăваласа кăларат̆, халăх пурнăçĕ хăвăрт улшăнса пынă вăхăтра ĕççынни питĕ ÿрĕкленсе çитет те вăрçăсăр пуçне тата, авалхи римђансем калана пек, çăкăрпа танах «курмалли» (зрелища) ыйтат̆. Çавăнпа пирĕн ђăваш литтераттуринђе те малтанах «курмалли» валли траммăллă йапала нумайрах тухат̆. Кунта тÿрех «малтан траммăллă йапаласем çĕнтерсе илђĕç» тесен те килĕшет. Пăртак хушăран вайлă йурăсем, сăвăсем пулнă пулсан та вĕсем асран çухалнă теме те йурат̆, анђах кам Акимăвăн «Вăхăтсăр вилĕм», Н. Йефремăвăн «Пуйан Карук», Ф. П. Павăлăвăн «Сутра» тата «Йалта» курнисем—вĕсене манма пултараймаççĕ. Вĕсенђе—империалисăм вăрçин хăрушă тискер «тăкакне», (вилле парнине) револђутси кантăкĕ витĕр çутă ÿкерсе питĕ йăмăх хĕрлĕ сăрпа сăрланă. Вĕсем çавăнпа ђăвашсен револђутсиллĕ литтераттурă хушшине малтанах кĕреççĕ.

„Сутра"на илсен ку ђăвашсен малтанхи фелйеттонĕ теме йурат̆. Ку вăхăталлах, 1922 çул., Шупашкарта А. Т. Красновăн „Пурнăç тумкати" йатлă револђутсиллĕ калав (ђехсем Хусана туртса илнĕ кунсенђе пулнă ĕçтем çинђен) тухат̆. Ку калав тепĕр писсаттĕлшĕн лайăх роман никĕсĕх пулма пултарат̆.

Ку йапаласем револђутсиллĕ литтераттурăра малтан килнĕ „ђĕкеçсем" пулаççĕ, мĕншĕн тесен вăл вăхăталлах илемлĕ те вирлĕ çырнă поемăсем йе повĕçсем пирĕн пулман, текламатси тумалли йапаласем те сахал пулнă, çавăнпа та вĕсемпе хутăш „Нарспи"рен трамăлласа Н. Оççипăв çырнăскерне театтăрта ђас-ђасах ларткалађђĕç. Çавăнпа та ђăвашсен пăллă арттисĕсемех „Ђĕлем"е текламатси тума йуратађђĕç.

Кунта çакна та каламалла: Револђутси пуçламĕшĕнђех пирĕн хађхи пек „Сунтал" шурнал пулман пирки ђи паха йапаласенех епĕр курмасăр йулма пултарнă, курнă пулсан та манма та пит çăмăл, мĕншĕн тесен вĕсене пуçтарса пыман пирки пахалакан та пулман. Ку ĕç—пирĕн тишкерÿ тăрах ĕçлекен йулташсен, йе ђăваш литтераттурĕн историне çыракансен—пикенсе ĕçлемелли ĕç. Çавăнпа та епĕ ун ђухне хăйсен йађĕсемпе пăллă вырăн йышăннă йулташсене асăнмасăр хăварнăшăн вулакантан каçару ыйтатăп.

Пирĕн поетсем хушшинђе ун ђухнех ĕçлекенсем сахал пулнă, теççĕ пулсан та, епĕ хамăн асра тăракансен йађĕсене асăнсан—сахалах мар, тесшĕн. Ак астăвăрха: Лăпсăркка, Ђавук, Илтиван, Йут, Ахах, Тал-Марса, Çеçпĕл Мишши, Хумма Çеменĕ, Тăхти, т. ыт. Кусен йађĕсем ун ђухнех халăх хушшине сарăлмани вара?!

Ку вăхăтрах пирĕн сума тивĕçлĕ ђаплă ђăваш арттисĕ М.-Кошкински те поеçишĕн нумай тăрăшнă, Н. Оççипăв та ун ђухнех хăй пăллă траматурк пулассине кăтартнă. Кунта Иван Муђипе К. Екорова манса хăвармалла мар: кусем пупсен ултавлă тĕнне, унăн сĕрĕмне пайтах çĕмĕрме пулăшнă. Ку тĕлĕшрен Лашман та питĕ хастар ĕçленĕ.

Çак асăннă çынсем халĕ те литтераттурăра пит пăллă вырăн йышăнса ăна малалла йертсе пыраççĕ, анђах вĕсем ун ђухне çырнисене (каллех калап) пахалама, тишкерсе тухма хĕнтерех. Ку „Сунтал" умĕнхи периат. Ку периат çинђен асăннă ђухне „Сунтал" умĕн 1923 ç. Окт̆апĕр уйавне уйавланă май тухнă „Окт̆апĕр çуламне" асăнмасăр иртмелле мар. Ак мĕншĕн вăл пирĕн асра пулмалла: ун ђухне пирĕн писсаттĕлсене пĕрлештерекен Сойус тавращĕ пулман, çавăнпа вĕсем çырни „Канаш" хаçат тавра анђах пухăнкаласа пынă, анђах „Канаш" литтераттурăпах тулса тухма пултарайман,

*) Парнас тăвĕ—Авалхи крек халăхсен мусăсем (поетсен хутошниксен туррисем) пурăнакан ту.

# ХУТОШНĔК М. СПИРИТОНАВ.

Хутошнĕк Спиритонав ĕçĕсене курнă хыççăн, çав ђăваш шивоппиçĕсенђен (сăрăпа ӳкерекенсенђен) хăйне палăртма пултарнă пĕртен пĕр хутошнĕк çинђен вулакансене çырса пĕлтерес тетĕп. Анђах, ман шутпа, ђăваш çыннисем, ђăваш хаçат-шурналĕсем хăйсен талантлă хутошнĕкĕ йепле утăмсем туса пынисене питех асăрхамаççĕ. — Хăй çĕрĕнђе пророксем çук, тенĕ пек тăваççĕ пулмалла. Ђăваш хутошнĕкĕсен ĕçĕ нимле криттĕккăсăрах иртет. Çĕнĕрен тума тытăннă творђĕствă ĕçĕсене пулăшасси сайра кăна пулкалать. Тĕп хуларан таçта айакра пурнакансккерсем, ђас-ђасах хăйсен сĕткенĕ ăшĕнђе кăна пиçсе тухаççĕ. Карттинсем ӳкерме те пăрахаççĕ... Çав вăхăтрах ђăваш хутошнĕкĕсем умĕнђе йепле пуйăн, пĕртте тĕкĕнмен çеçен хир сарăлса выртать. Çавăнпа ман пушшех те çырмасăр ђăтма пулмарĕ.

Ђăваш пурнăçне пĕлсе ӳкерекенсем халиђен питех те сахал пулнă. Ђăваш пурнăçне кăтартма тăнă хутошнĕксене епĕр 5—6 çын кăна пĕлетпĕр. Çавсенђен те 4-шĕ вырăс хутошнĕкĕсем пулаççĕ (Пайпарышшĕвăн «Ђăваш пасарĕ» йатлă карттинĕ, Похорититскин «Ђăваш етнокрафи компоçитсийĕ», Ротимăвăн «Ђăваш еттутĕсем», тата çак статйана çыракан хăйĕн хăш-хăш карттинĕсене ђăваш пурнăçĕнђен илсе ӳкерме тăрăшнă). Анђах вырăс хутошнĕкĕсем ђĕрене çыпăçакан карттинсемех парайман, вĕсем, сăмахран хутошнĕк Похоротитскийех, ђăваш семйисене ӳкерме анђах хăтланнă. (Кун çинђен 1926 çулта «Новый мир» шурналра çапăннă Й. Тукенхоçтăн «Хаљхи вăхăтри шивоппиç» статйине тупса вулама пулать). Çамрăк ђăваш хутошнĕк К. Васçилййева илес тĕк, вăл пĕр теккоратсисем çырас искуствăпа кăна иртерет.

М. Спиритонав, хăй çĕрне, унăн пурнăçне, йăлисене аван пĕлекенскер, тата хăй çĕршывĕн илемлĕхне те аван ђухласа плекенскер, хăй карттинĕсенђе йапалана тĕрĕс кăтартнине ђылайах палăрать. Кашни карттинĕнђех вăл хăйне кирлине, хăй çĕрне ђи сывăххине тупма пĕлет.

Пейсаша (çĕршыв илемĕшсене) аван ӳкерекенскер, вăл шанр, (кулленхи пурнăç) карттинĕсене ӳкерес тĕлĕшпе те ĕçлет. Ку тĕлĕшрен пит майлă ӳкерђĕксемех ӳкерсе парать.

Ђи паллă йапалисенђен унăнне çаксене кăтартма йурать: «Станок хушшинђе» йатлă карттин, «Вăђах умĕнђе», «Кĕтӳ», «Пахђа ĕçĕсем», тата «Хĕр» портређĕ. Малтанхи 4 карттинĕнђе Спиритонав кулленхи ђăваш пурнăçне (шанр) кăтартать.

«Станок хушшинђе» карттинĕнђе пир йепле тĕртнине кăтартнă. Пир тĕртмелли станок кашни ђăваш килĕнђех кирлĕ йапала. Пирне тĕртиђђен малтан ђăваш хĕрарăмĕн нумай çĕрсем çипне арласа иртерес пулать. Вара тин станок виттĕр йарса çемйе çипуçĕ ваљђи пир-авăр хатĕрлеме ӳкет. Карттинра ђи тĕпри вырăнĕнђе пир тĕртекен хĕрарăма куратпăр, ун тавра пĕр хĕр, пĕр старик, тата кӳршĕ арăмĕ — куммийĕ аван ӳкнĕ. Йалта ĕнтĕ куммасăр пулмасть. Кумма карттинра пуринђен те аван тухнă. Карттин çырмалли майне (компотçитсине) пĕлсе çырнă. Карттинри çынĕсене те ђунтан тăрăшса ӳкернĕ. Сăрĕсем те кăмăла хăпартлаççĕ. Анђах сĕрмеллине хăйулăрах тытса ĕçленĕ пулсан, карттин тата усăрах тухмалла пек.

Ытти карттинĕсем: «Вăђах умĕнђе», „Кĕтӳ", «Пахђа ĕçĕсем», — йепле ӳкермелли пирки профессăр Самоккиш калантисене аса илтереççĕ пулсассăн та, нумай малта тăраççĕ. Ку карттинсенђе ӳкерес ĕçе Спиритонав хăйĕнђен хушнă, хăй тăрăшни те нумай. Сăрăсене (красксене) хăрамасăр хурса пыни мĕн çинђен ӳкермелли тĕп шухăшпа аван çыпăçса тухать.

Портретсенђен «Хĕр» портређĕ паллă йапала. Ђăваш хĕрне пит аван илсе кăтартнă. Кунта хутошнĕк ваљђи маттериал çителĕклĕ пулнă. Шупка ăшă кĕпи ӳте кăтартас шухăшпа лайăх çыпăçать. Анђах ăшђиккине çителĕклех кăтартайман. Портретра пĕр тулашĕнђине анђах, тата ăшри пурнăçне те кăтартни кирлĕ.

Мусейе кăларса тăратнă тата урăх карттинсенђен çаксене кăтартма йурать: „Шупашкар сăнĕ", еттутсем: „Пăравус", «Хĕрлĕ плошђĕтри миттĕнк», „Пасар", «Стантсăра», тата кулленхи пурнăçран илсе ӳкернĕ ытти йапаласем те пур. Еттутсене пит ђĕрĕ, усă ӳкернĕ. Хутошнĕк пĕр çаврашкара хупăрланса лармасть.

Хутошнĕк çĕнĕ, револђутсилле йапаласенђен илсе те карттинсем çырасшăн. Ку пуринђен ытла „Хĕрлĕ плошђĕтри миттĕнка", „Канаш стантсинђе Улатăр пăравусне йепле хирĕç тухса илнĕ", еттутсенђен пит курăнать. Халăха хастарлăх сăрĕсемпе ӳкернĕ, ђи кирлине кирлĕ мартараххисенђен уйăрса кăтартма пĕлнĕ.

Малалла туна утăмĕсене кăтартнă хыççăн, епĕр хамăр хутошнĕке хăй технĕккине аванлатас тĕлĕшпе хытăрах ĕçлеме канаш парасшăн. Сăрă йепле çыпăçса пыни карттинри пурнăçран уйрăм таталса курăнмалла мар. Çакна астуса ĕçлесен М. Спиритонавран пурнăçа тĕрĕс кăтартакан инттереслă маçтăр (реалист) тухасси курăнсах тăрать. Ăна епĕр шансах тăратпăр.

Хутошнĕк **Ник. Латвиненккă.**

---

**Митта Ваçлейĕ.**

* * *

Тăван çĕршыв пайан хĕрелнĕ,
Тăван ђĕлхе—кĕмĕл кĕсле!..
Пайан поет кранат ђĕреллĕ,
Ђĕлхи касать çап-çут хĕçле!

Ђеђен Ђĕлхе—ђăн аслă Улăп,
Поет ђунне пăхăнтарать;
Ђеђен Ђĕлхе—йем-йешĕл улăх,
Поет унта хаљ хăнара.

—Йурла, поет, ташла ес, çуйăх,
Йăпат хăватлă Улăпа!
Сĕтĕрĕнет аманнă уйăх,—
Çапса ӳкер ăна ђулпа!

Мĕне йурать хаљ çавă уйăх,
Тăвас унтан ђасрах сăрнай!
Ташша кĕтет çĕршывăн уйĕ—
Мĕљйун етемлĕ касарма.—

Поет ђăнах çапса антарђĕ,
Йĕрет леш уйăх—ђĕр найан!
(Усалласа хаљ тин ан та ђĕн),—
Тăвать поет ак сăрнайа.

Ђасах туса вăл ак пĕтерђĕ,
Сăрнай кайать вăйлă туйа!..
Тăван çĕршыв хурать икерђĕ,—
Пулас туйа вăл ђас туйать!..

Ĕнтĕ ташла, çĕршывăн уйĕ,
Сăрнай выђать пит аванах!...
Пайан сикет ђăн Паттăр туйĕ,
Хастарлă Улăп авланать!!!

# ЛИТТЕРАТТУРӐ ШКУЛӖ ВЫРӐННЕ.

**Кели.**

## Поеҫин формисем ҫинђен.

*(АЂПП Шупашкарти тӗп крушокӗнђе ҫенттӑпӗрӗн 3-мӗшӗнђе тунӑ токлатран).*

(Пуҫламӑшӗ иртнӗ №-те.)

### Формӑ йенђен мӗнле поеҫи кирлӗ пире.

«Ҫотершани формӑран хаклӑрах темелли вӑхӑт иртрӗ. Хаљ сотершани тӑрӑх ун формине куљттурлатмалли ҫинђен шухӑшламалла, сотершанине формӑн теорийӗпе килӗшсе тумлантармалла. Ђӑваш ђӗлхипе „ҫиллӗ-тӑвӑллӑ, хумханса, ҫын ђунне ҫӗмӗрмелли йапаласем ҫырма йӑвӑр“ тени, ђӑваш куљттурӗн малаллӑхне шанманни пулат̆. Ҫиллапӗккӑпа кӑна усӑллансан вӗсем пулмӗҫ те. Пире пурнӑҫ ритмипе килӗшсе пулакан формӑ кирлӗ. Формӑсем тӗрлӗленнипе «ӑшђике вутхӗм тивертмелли литтераттурӑ» та пулӗ. Епӗр вӑл йенне туртӑнмалла. Пирӗн криттӗксем: сӑвӑсене тоникӑпа метрлама та май ҫук, теҫҫӗ, мӗншӗн тесен „ђаваш самахӗсенђи утаренисем каласнӑ ђух та пӗр слокран теприн ҫине куҫса ҫӳреҫҫӗ“ иккен. Епӗр кашни ђӑваш сӑмахӗнђи утарени выранне пӗлетпӗр, „Сунталӑ“, „Сӳнтал“ тесе вуламаспӑр.

Пире ҫинттаксӗс пӑравӗлисемпе ҫырнӑ йапаласем кирлӗ. Пирӗн поетсенђен нумайӗшӗ, ђӑваш ђӗлхи, ҫинттаксӗс саккунӗсене пӑрӑнмаст̆, тен пуљ, хӑйсене манер, йӗркe слокӗ пултӑр тесе, сӑмахсене ҫӗмӗреҫҫӗ. Веттеран—поетсем хушшинђе вӑл сахалтарах, анђах пурах. Акӑ **Шупуҫынни** ҫырат̆:

(Вӗсем) п у п л е с илђӗҫ самантрах...

«пуплесе» выранне. Кун пек сӑмах ҫаврӑнӑҫӗсемпе ђӑваш ђӗлхине пуйтармалли ҫук, лайӑх сӑввӑн илемӗ те ҫухалат̆. Пирӗн литтераттур ђӗлхи пултӑр тесен, сӑмах пӗлтерӗвне пӗр саспах хытарас пулат̆. Малашне, ҫырӑнакан пултарулӑхра «п а ђ ӗ ҫ ӗ» тесе те («пађӗҫ» выранне) ҫырмӗҫ. Ак выраҫсемех «с о б и р а й т е с я» тесе ҫырнипе килӗшмеҫҫӗ (йурӑра ҫеҫ ҫыркалаҫҫӗ). Ђӑваш ђӗлхине ҫаврӑнӑҫлӑлантарас тесен, пирӗн, ђӑваш ђӗлхири «выранти» сӑмахсене литтераттурлатас пулат̆. Сӑмах ҫитменнипе аптӑрасан йутран илмелле, пур суффикӑссене усӑллӑ тумалла. Ахалех, хӑшӗ-хӑшӗ, ђӑваш ђӗлхи ҫаврӑнӑҫсӑр, теҫҫӗ. Ҫук, вӑл пит аванђӑклӑ, тӗрлӗ саслӑ, илемлӗ: унпа кирек мӗнле шухӑша та сасӑлатма пулат̆, ҫинттаксҫисри ҫаврӑнӑҫсен саккунӗсене кӑна асӑрхаса тӑмалла.

Сӑввӑн технӗккӑлӑ ырлӑхӗ ҫинђен сӑмах тапратни пит вӑхӑтлӑ: ђӑвашӑн поетӗсем нумайланаҫҫӗ, анђах вӗсен ҫырӑвӗсам формӑсӑррипе усӑсӑрланаҫҫӗ. Ҫав шутпа епӗр поетсенђен ҫӳлырлӑхлӑ протуктси, квалиффикатси ыйтма пултаратпӑр.

Пирӗн поетсене ђи малтан, поеҫийӗн технӗккипе паллашни кирлӗ. Ђӑваш сӑввисене, ҫинттаксҫиспе килӗшмен ҫакӑн пек сӑмах ҫаврӑнӑҫӗсенђен хӑтӑлма тӑрӑшмалла:

Ҫӗр пиђ ҫинђен мул ҫухалсан.... (Таљков)

„пиђӗ“ выранне. Хутарӑн «Тӑван ҫӗр шыва» йатлӑ сӑвӑ тулнӑ «вӑлӑ» сӑмахпа, тӗл пулӑнат̆ «ҫӑлатӗ» манерлӗ сӑмах—провинтсиалисӑм. Литтераттурӑ ђӗлхипе ҫырмасан малашне май килмӗ. Пирӗн пурне те кӑмӑллӑ тӗп ђӗлхе тумаллине манас пулмаст̆. Пӗр тӗп литтераттурӑ ђӗлхи кирлӗ.

Рифмӑ тӗлӗшпе те пире тӗплӗх кирлӗ. Нумайӗшӗ пирӗн, „ҫук“па „ҫук“а рифмӑлаҫҫӗ, йе тата ытти ун йевӗрлӗ сӑмахпа. «Ассонанспа» рифмӑлама пӗлменнипе те сӑвӑсене пӑсаҫҫӗ.

**Полоруссӑвӑн** та ҫакӑн пек рифмӑланӑ выраҫсем пур:

Пахђасенђи тӗрлӗрен
Ҫимӗҫсене пуҫтарђӗҫ (!)
Ҫӑмӗсене таптарђӗҫ (!)
Тӑлисене пустарђӗҫ (!)

Кун пек йапала пултарулӑха кӑтартмаст̆. Кун пек рифмӑланакансем пирӗн пит нумай.

Пирӗн поетсен, хӑйсене тивӗҫлӗ формӑ тупас тесен, пур формӑсене те пӗлес пулат̆. Сӑвва сасӑ та ритмӑ йенђен те тирпейлӗ кипкепе кипкелеме тӑрӑшас пулат̆. Ҫавӑнпа класҫикӑлӑ метрӑсене те, улшӑнакан ритмӑ—метрӑсене те, «и р ӗ к с ӑ в в ӑ н» йухӑнакан ритмине те, кирлӗ ҫӗрте усӑлантарас пулат̆, пурне те сотершанипе килӗшсе илмелле.

«С ӑ н л а в с е н ҫ ӗ н л ӗ х ӗ ҫ у к ҫ ӗ р т е поеҫиллӗ п у л т а р у л л ӑ х та ҫук» теҫҫӗ, ҫавӑнпа сӑвӑ сӑнланмалла. Лосункcемпе, ҫара, сӑнланман шухӑшсен сӑвӑри ӗмӗрӗ иртрӗ. Пирӗн просветенисене тӗрлӗ хутошӗствӑлӑ ҫавӑрнӑҫсемпе илемлетмелле. **Пушкинтан**, унӑн халӑха ӑнланмалла ђӗлхе ҫаврӑнӑҫне пӑхса илмелле, анђах ун формине епӗр йӑшӑнас тесех тӑмӑпӑр. Н а т с о н п а П а љ м ӑ н т а н сас илемлӗхне итлемелле, анђах вӗсен сотершанине пӑрахӑҫламалла. **Йеҫҫенин, Майаковски, Песыменски** пире хутошӗствӑлла ӗнтерӳ, сӑнлӑх формисене мӗнле пурнӑҫтармаллине каласа параҫҫӗ. Вӗсен майӗпе пирӗн, хаљхи пурнӑҫӑн сотершанине, мӗнле ӑсталаса кӗртмеллине вӗрентеҫҫӗ. Халӑхшӑн ӑнланмалла ҫыратпӑр тесе ҫакӑн пек ҫырни те май килмест:

Штикпе тирсе, тӳртӗн ҫавӑрса
Суйлӑпӑр унне пурнӑҫ тӗввине...
(Митта Ваҫ. «Ӑсату сӑмахӗ»)

Кунта вӑл тӑшман ҫинђен ҫырат̆, анђах Митта Ваҫ. унпа мӗн тума шухӑшлани вулаканшӑн тӗтреллӗ.

**Ретаксирен:** Кели токлатне ЂППА тӗп крушокӗ кӑмӑлласа йышӑнђӗ. Анђах, хӑш-пӗр выранђи шухӑшӗсене (тоникӑ форми ҫинђен) тискуҫҫи йӗркипе ҫеҫ йышӑнмалла, терӗ.

Поеҫи формисемпе инттересленекенсем вӗсем пирки сӑмах вакламаллах. „Сунталӑн“ ку №-нех акӑ Кели пӗр шухӑшӗ пирки **Ли** йулташ ҫырнине ҫапатпӑр. Писсаттӗлсемпе литтераттурӑ туса тӑракансем те кун пирки хӑйсен сӑмахне калас пек туйӑнат̆.

Кели токлађӗн II-мӗш пайӗ—выраҫ поеҫин хаљхи йухӑмӗсем: ҫимволӗккӑ, футтурисӑм, т. ыт. ҫинђен вӗренсе пынӑ май вулакансене унпа та паллаштарӑпӑр.

# Ђăваш поеçин формисем çинђенех.

**Ли.**

„Пролетарская культура социалистическая по своему содержанию принимает различные формы и способы выражения у различных народов, втянутых в социалистическое строительство, в зависимости от различия, языка, быта и т. д. **Пролетарская по своему содержанию, национальная по форме,** такова вообще человеческая культура; к которой идет социализм".(Курçив ман:Ли.)(И. Сталин. „О полит. задачах Университета Нар. Востока").

«Натсиллĕ форма!» Урăхла пулма та пултараймастĭ, мĕншĕн тĕсен натси пур пулсан, вĕсем (натсисем) пĕрре анђах мар пулсан, Çиновйев К. (оппоçитсионер) каланă тăрăхах интернатсионаљни кулЂттурă пулаймĕ. Тĕрлĕрен халăхăн тĕрлĕрен йĕрке пурнăç майĕпе пулса пынă пулсан, ђĕлхе те кашни халăхăнах уйрăм, хăйне тивĕçлĕ ђĕлхе йĕркисемпе пыраĭ. Ђĕлхен тĕп йĕркисене, ђĕлхен никĕсне нийепле вăй та (револђутси те) пĕр 10—20 çул хушшинђе улăштарма пултараймасĭ, улăштарас пулсан вара—натсин хăйĕн малтан улшăнмалла, унсăрăн унăн ђĕлхин тĕп тымарĕсем улшăнаймĕç.

Ђăваш поеçин формисене тĕрĕслес тĕлте те пирĕн çав кăтартнă йĕркесене пĕртте манма йурамасĭ; поеçин формисене тишкернĕ ђух ђăваш ђĕлхин тĕп саккунĕсене пĕлсе тăрса формăсене çав саккун хисепне пăхăнтармалла. Вырăс ђĕлхине, полђак ђĕлхине, йе хрантсус ђĕлхине йепле пĕрле хутшăнтармалла мар. çавăн пекех вăл ђĕлхесемпе çырнă поеçин формине пĕр килĕ çине хурса пĕр кисеппе ђыхса пусмалла мар.

Вырăс поеçи пуçланса кайас умĕн, ђăнах та, вырăс ђĕлхипе поеçиллĕ йапаласем çырма пуçлакансем малтанах ку тĕлĕшрен çул ширанă майĕпе, арпашкаласа пăхнă, хăшĕ вырăс поеçи формине те хрантсус ђĕлхинђи формăпа (силлапĕк) пĕр çул çине тăратасшăн тăрăшни пулнă. Тŷрех Пушкин çырнă пек питĕ лайăх татса йанратакан „тонически" ритмăпа вырăсла çырмаллине пĕлеймен.

Вырăссен малтанхи вĕреннĕ çынĕсем хушшинђе те крексен „Одиссей" „Иллиада" пек йапаласем тăрăх поеçипе паллашнă пирки вырăс поеçине те крексен «кексаметрăллă» çиçтемă тăрăх çырнă çулпа йарасшăн пулнисем пулнă. Анђах вырăс халăхĕн ђĕлхи уйрăм çынсен кăтартнă çула пăхăнман, вăл хăй ђĕрĕ пулнă, вăл хăйĕн тĕп никĕсĕнђен ŷксе çухаласшăн пулман, çавăнпа та халăх творђђĕствине вĕренсе çыракан поеђĕсем çийеле тухнă, çавăнпа та Пушкин, Лермăнттăв, т. ыт. ђаплă поетсем „я памятник себе воздвиг нерукотворный" тесе çырма пултарнă. Вĕсем вырăс ђĕлхинђе нимĕçсен майлă тониђђески формă кирлине ђухласа илнĕ те хрантсуссен пек «силлапиккă» формипе çырма пăрахнă.

Пирĕн ђăваш ђĕлхи пултарайĕши вырăс формисене пăхăнма? Кам та пулсан ђăваш поеђĕсенђен вырăсăн „тониккă" формипе çырма хăтланса ђăнах тониккă саккунне пăхса мĕн те пулсан çырнă-и? Епĕ калап татса: **никам та пĕр путлĕ йапала та çырман, çырма та пултарайман, темле тапаланса муталансан та!**

Ђăнах тă епĕ илтсеђђĕ хăшĕнђен: Çеçпĕл Мишши ђăваш поеçинђе «тониђђески» формăпа çырнă йапаласем „çуратнă" тенине. Ун пек халĕ Кели йатлă çĕнĕрен çуралнă ђăваш поеçин теореттикĕ те сăмсасене каçартсах Сунталăн 9-мĕш нумĕрĕнђе çыраĭ: «Пирĕн поетсем хушшинђе формăсене тĕрлĕлетесси çинђен шухăшлакансем пит сахал. Ђăваш поеçин веттеранĕсем хушшинђе ун пеккисем çук. Вĕсем пурнăçăн пур йенĕсене те çилапиккă çиçтемипе сăнаса парасшăн.» Унтан вăл çамрăк поетсем ку тĕлĕшпе ĕçлени пур тет те çапла примерсем илет;

«Кусса кайрĕ вăл уй-хирсем тăрăх,
Пĕшкĕнсе илет есрĕл хурами,
Шартлатаĭ кăна хăрăк туратти»

Епĕ вулаканшăн лайăх курăнса тăмашкăн йури „тониккă" саккунĕ тăрăх ђăваш поеçинђе утарени лартса пытăм. Ентĕ, куратăри? Пури кунта утаренисен йĕрки? Танлаштарма Пушкинĕнпе „Эхо" илер:

„Ревет ли зверь в лесу глухом,
Трубит ли рог, гремит ли гром,
Поет ли дева за холмом—
На всякий звук
Свой отклик в воздухе пустом
Родишь ты вдруг."

Куртăри, йепле саккуна тĕппипе сыхланă. Унтан вилнĕ поет Çеçпĕл Мишши çырнине илер. Кунта та утарени саккунне тупăпăр. Тен кунта „тониккă" Кели тупса памĕи?

«Тăван çĕр-шыв кала, пĕлтер—
Санăн йатна кăларма,
Сан ђĕлхŷне хăват кŷртме
Пултаракан ăçта пулаĭ?»

Малалла кăтартмасан та йураĭ. Хăвăрах ĕнтĕ йепле пирĕн ђăваш ђĕлхинђе „тониккă" формипе „хорей" „йамп" тата ытти вырăс ђиперлĕхĕсене асăнма май пуррине?!

Кам ђăваш ђĕлхи тымаррисем çинђен пĕртте пĕлмест, çав анђах ку тĕлĕшрен виçĕ йуман хушшинђе çĕтсе кайса çынсене те çухалса çŷреме ђĕнет. Кели пеккисем анђах «Çирĕм улттă» па Хусанкайа „квинт еççентси" ĕçтереççĕ. Анђах еççентсин хăйĕн (дози) виçи пулмасан ђасах антăхтарса йарса ĕçекене ураран кайса ŷкерет те ĕмĕрлĕхе çывăрттараĭ. Ăçта кунта «анапест»? Илер малтанхи йĕркисенех:

„Çирĕм ултăн вĕсем,
Çирĕм ултăн,...
Унтан: Каçпала ес итлеха
Сăна:"

Йепле ђăваш ђĕлхине вырăс сăнђăрĕпе тăлламалла мар! Пĕр тухăмĕнђе «вĕтĕр вĕтĕр пустараĭ, халăхсенђен култараĭ!..» Формăна тĕрлĕлентерессн „тониккă" хыççăн кайнипе пулаймĕ. Вăл çамрăк поетсене мăшкăла çеç хăвараĭ, мĕншĕн тесен «тониккă» та «тониккă» тейĕç, анђах никам та тониккă йĕркипе çыраймĕ. Çавал шывĕ Атăл çине кĕнĕ çĕрти ђăвашсем утарениллĕ пек пуплеççĕ те, анђах вĕсене çапла мăшкăлаççĕ: «Сысна пуснă, мулта хутнă, йашка пĕçернĕ, сăра тунă, хăнана пыр». Вуласа пăхăр,—мĕнле илем шăрши кĕрет!

Ку тĕлĕшпе „веттерансем" хăтланнине астуса пăхăр. Вĕсем пĕр 7 слоклă стихпа анђах çырман, вĕсем те формăсем «ширанă.»

Ку тĕлĕшрен çамрăксем Крыловăн «Шăнапа вăкăр» йатлă паçнинђи пек «епĕр те сухаланă» теме пултарĕç.

Ак илер К. В. Иванов вырăсларан куçарса ђăваш ђĕлхине вырăс форми майлă (асту: майлă анђах!) çавăраĭ.

«Ылттăн тăрлă аслă Мускав çине,
Кремĕл шурă ђуллă хŷмисем çине,

Айакри вăрмансен, çӳл тусен йенђен,
Çурт йĕрсен тăррипе выђаса-кулса,
Хуп-хура пĕлĕте салатса йарса,
Хĕп хĕрлех çурăм-пуç çутăлса килет»...

Йе тата:

«Пĕђђен парăс шуррăн курăнаĭ
Кăвак тинĕс тĕтри ăшĕнђе...
Мĕн инçе, йут çĕрте вăл ыраĭ?
Мĕн хăварнă вăл хăй килĕнђе?

Кусенђен паллă: йепле 1908 çулсенђех çынсем 7 слоклă йухан йурăпах тăранайман. Акă тата Н. В. çырнине илер:

«Хĕрĕх çул хушши»
Ĕнер-пайан пулнă пек
Куçăм умĕнђе
Иртет йĕрки йĕркипе
Авалхи тĕнђе»...

Йе:

„Тĕтĕм ашшĕ,
Ырă ђĕлĕм,
Мухтав сана
Кукăр пуç.

Йе тата: «Итлĕрха, итлĕрха пурăнакансем,
Уçăрха куçăрсене, халăхсем.» (Хунар çутти)

Йе тата: «Йупари»не илсен:..
Хĕрлĕ йалав, йалкăш!
Ирĕклĕхшĕн вађкăш!
Пĕтĕм çутă тĕнђери
Пролеттаре пĕрлештер»!

Акă кусем мĕне пĕлтереçĕ. Кусем йăлтах та шăлтах формă шыраса ђупнине пĕлтереççĕи? Кусенђе «тоникă» тесе каппайса кăçкăрни çук пирки кăна «Кели» пек теореттĕксем вĕсене курмасăрах йулаççĕ.

Çапах та веттерансем те формă шыранă пулсан та çамрăксем пек ђăваш ђĕлхин тымарĕсене пăтратса йама тăрăшман пулас. Тăрăшнă-та-и тен? анђах пытараççĕ пулĕ? Туй ађисем пек: «киле пырсан мĕн тăвас, атте апайа мĕн калас» тенĕ пулĕ тетĕп.

Апла тунă тăк лайăх ĕнтĕ! Ђăваш формине çухатса интернастıонађнăй формăна куçас текенсем пек пĕлĕт çинђен çакăнман пулсан, оппоçитси пек шутламан пулсан, пит-те йураĭ. Ĕнене йĕнерленипех лаша тесе утланаймăн.

Ђăваш поеçинђе хăйне майлă формăсем пулĕç. Вырăс хушшинђе пурнатпăр тесех вырăссен «тоникă» йĕрне кĕреймен ђăвашсен хрантсуссен пек çемçе ђĕлхи, вĕсен пекех «силлапикă» системипе пырĕ, анђах 7 слокпа çеç тăранаймĕ те, пулмĕ те. Ку тĕлĕшрен „ăшђиккĭ“ (содержание) «тулашне» (формине) пăхăнтарĕ те:

«Хум çине хум
Илсе килĕ штурм»...

Ие: «вăраххăн сăнне сăнасран
тĕсне улшăнтарĕ сăртан пуйанран»...

Пирĕн ђăваш ђĕлхинђе креқсен «гекзаметр» тенĕ ђаранăва йĕрке хушшинђе кĕртсе пырсан пит илемлĕ сасă вăйлă илтĕнет. Ăна К. В. Иванов «Калашник хуçана» куçăрнă ђухнех тупнă, унпала Рсай та хăш хăш йурринђе усă кураĭ; ăна Йеркĕн çинђе те курма пулаĭ.

«Силлапикă» ђăваш поеçине саламлĕ «тоникă» ăна лупашканалла тӳнтерсе йарса натси куђтуринђен кăларса пăрахса Çиновйĕв каланă йăнăш çулпа йарĕ те кайран ђасах пĕтерсе те лартĕ.

—oo—

# САТАЂЂĂСЕМ*)

**Пĕр çын çырнă-и çак икĕ сăвва? Кам сăввисем пек вĕсем?**

* * *

Шăршлă каç йăвăрри,
Кивĕ çĕр кăкарри
Вут хыпса, кĕл пулса вĕртĕри.

Çĕр çунса çĕнелсен,
Çĕр çине мал йенђен
Çĕнĕ Сăн çиçĕмлĕ çиттĕри.

Çĕнĕ сăн йăлтăри
Ун кăвар çăмăри
Ђĕрере Вут Сăмах ђĕрттĕри.

Шупашкарăн вăрри
Çиçĕм çутлăн—вĕри
Çĕн Сăмах вуђаххи пултăри.

Çĕн тĕнђеп кăварне
Çĕнĕ Сăн Çутипе
Тĕллесе пăхайман куçсене—

Çĕнĕ Çăн кăварри
Çĕн хĕвелĕн ури
Пĕр ђиксе шăтарса илтĕри.

Камăн нишлĕ ђĕри,
Пур нишли, халсăрри—
Ленђĕрти шапасем пулђђăри.

Ей, шевле, Сар шевле,
Çĕр çине çул тĕрле
Çул çине йарапан сар силле.

Çав çулпа мал йенђен,—
Çĕн Тĕнђе умĕнђен
Çĕнĕ сăн вĕç килет инђетрен.

Ей, вĕре, вутлă йун!
Ей, Çĕн Кун, йăлтăр кун
Кив çĕре Çунтарса, Çун! Çун! Çун!

## Пурнăç—хыпаланђăк.

Ту çинђе йуртаĭ шур уйăх—анђăк,
Акă хађ пытанђĕ сăрт хыçне.
Хађхи пурнăç питĕ хыпаланђăк,
Пăрахсах хăварђĕ ывăлне...

Ĕнер çеç унпа еп хам калаçрăм,
Ĕнер çеç пĕрлеђђĕ унпала.
Пайан ир еп уйсем урлă каçрăм,
Пайан ир тупмарăм еп ăна...

Ывăнсах еп çитрĕм, хыт тарларăм,
Урасем утмаççĕ малалла.
Хурама, хĕрхен ес, пул-ха арăм,—
Ирĕк пар выртма ес хăвпала.

Ирĕк пар, канам выртса, еп ырнă
Ирĕк пар, канам тепĕр ирђен.
Тен ыран еп пулăп çил пек вăйлă,
Тен ыран еп ырмăп çитиђђен...

Тен ыран ăна еп хуса çитĕп,
Тен ыран еп пулăп унпалах.
Тен ыранах çутă сасă илтĕп,
Йе выртса ак вилĕп çак уйрах...

Ывăнсах еп çитрĕм, хыт тарларăм,
Урасем утмаççĕ малалла.
Хурама, хĕрхен ес, пул-ха арăм,
Ирĕк пар канма ес хăвпала!

---

*) Литтераттурă шкулĕ йатлă уйрăмĕнђе „Сунтал“ ретакси малашне вулакансене тĕрлĕ сатађђăсем парса, вĕсем тăрăх илнĕ çырусене пухса, хамăр литтераттурă ĕçне вĕренсе пынине сăнама тытăнасшăн. Пайанхи сатађђăсем пирки çакна каламалла: тăтăшах хаçат-шурнал вулакансем илемлĕ литтераттурăна йуратакансем автăр йатне кăтартмасăрах, формă тăрăхах кам çырнине пĕлеççĕ. „Сунтал“ вулакансем те пĕлме кирлĕ. Миçе çын ответ панине, кам-камăн тĕрĕс иккенне тепĕр ик уйăхран çырса пĕлтерĕпĕр.

# ХАЛĂХ ТВОРЂЕСТВИ.

## ХАЛĂХ ЙУРРИСЕМ*).

(*Вантер К. И. маттерйалĕсенђен илнĕ*).

### Каска йуррисем.

(*Йăвăр йапалана туртнă, йе хăпартнă, йе кустарнă ђухне йурламалли*).

Мишер кăкшăм вăрланă та—
Хай ишша!
Пĕђĕкçеççĕ Микишша та—
Хай ишша!
Çĕтĕк-çатăк çăпатапа та—
Хай ишша!

**Астутарни:** Йуррипе Патĕрйел уйесĕнђе çырса илнĕ. —Вăрăм йĕркине пĕри каласа йурлаҭ, „Хай ишша“ тесе пурте кăшкăраççĕ те çав хушăра каскине туртаççĕ.

### 2. Каска йурри.

Аҭăр тăрăр, вĕрен тытăр
Хай ишша!
Вĕрен тытар, кўлĕнер те
Хай ишша!
Харăс туртар, йăвантарар
Хай ишша!
Ĕçĕ пĕтсен, канма ларар!
Хай ишша!
Пăтă пĕçерер, апат тăвар
Хай ишша!
Ђĕлĕм ђĕртер, тапак туртар
Хай ишша!
Аҭăр туртар, тус-хăтасем,
Хай ишша!
Пăтти пиçсе çитет тет мĕн
Хай ишша!
Сăри йўçсе çитнĕ тет мĕн
Хай ишша!
Аҭăр ђасрах ĕçме утар
Хай ишша!
Харс!

**Астутарни:** „Вĕрен“ тенĕ сăмах вырăнне урăх сăмах та (мĕнпе ĕçленине кура) лартма йураҭ („канат“, „рыђак“ йе тата урăх сăмах). „Хай ишша!“ вырăнне пĕрре „Хăвăртрах“, тепре „Васкарах“ тесе йурлама йураҭ.

### 3. Каска йурри.

(*Тепĕр йышши*).

Пўп çанниҭĕ мĕн сарлакăш?
Ха-ха-ха!
Аршăн çуръ пулаҭ пуђ те
Хи-хи-хи!
Тăйаккăн çўçĕ меттăр çур та
Ха-ха-ха!
Тийеђукăн куç ђармак та
Хи-хи-хи!
Улпут алли çеп-çемçе те
Ха-ха-ха!
Куппис хырăмĕ пиђке пек те
Хи-хи-хи!
Куштан ђышки ђукмар пек те
Ха-ха-ха!
Пĕрре çапсан ванмала та
Хи-хи-хи!
Пĕђĕкçеççĕ Микишша та
Ха-ха-ха!
Çĕтĕк-çатăк çăпатапа та
Хи-хи-хи!
Хура халăх вăй-хăвађĕ
Охо-хох!
Улăпран та иртерет те
Ой-ой-ой!
Камран епĕр хăрас пур та
Ак йепле!
Пĕрре туртрăн – ђуптартăн та
Пăх та кур!
Тепре çапрăн—ыстăнтартăн
Вăт çапла!
Вăй та пĕтрĕ, канас пул те
Çитĕçке!

**Вантер К.**

### Авалхи ђăваш йуррисем.

Воник сысна пор çинђе-те
Воник сысна пор çинђе,
Çĕролми кăларас хойхи çок-та
Çĕролми кăларас хойхи çок.

* * *

Воник кошак пор çинђе-те
Воник кошак пор çинђе,
Хоран сăвас хойхи çок-та
Хоран сăвас хойхи çок.

* * *

Тевонђушка, тевонђушка,
Тише молотая,
Тише молотая.
Тевонђушка, тевонђушка,
Тише пуховая,
Тише пуховая.
Кому люпђю, кому люпђю,
Тово потселую,
Тово потселую.

* * *

Йăри тавра тантăшсем,
Йăри тавра тантăшсем.,
Шатах тапак туртаççĕ.
Пуйан Митрин тапак нăмай,
Пуйан Митрин тапак нумай.

**Çиçĕм.**

Çак йурăсене 70 çулхи карђăк йурласа панă. Вăл мĕнле йурланине пĕрине те улăштарман. Çаплипех çапатпăр.

## Асамăç ђĕлхисем.

### Тытаканлă ђĕлхи.

Çитмĕл те çиђĕ çул кĕтессинђе — çитмĕл те çиђĕ ылтăм йупа; çитмĕл те çиђĕ ылтăм йупана хăçан çавра çил çапса ўкерет, çавăн ђухне тит çак çын (*йатне калаççĕ*) тытаканлă пултăр. Турăран ырлăх, етемрен сиплĕх. (*Виçĕ хут*).

Çитмĕл те çиђĕ вар пуçĕнђе—çитмĕл те çиђĕ кĕмĕл йупа; çитмĕл те çиђĕ кĕмĕл йупана хăçан усал ађисем ђышкисемпе çапса ўкерĕç, çавăн ђухне тин çак çын (*йатне калаççĕ*) тытаканлă пултăр. Турăран ырлăх, етемрен сиплĕх. (*Виçĕ хут калаççĕ*).

Çитмĕл те çиђĕ тинĕс хĕрринђе — çитмĕл те çиђĕ пăхăр йупа; çитмĕл те çиђĕ пăхăр йупана хăçан тинĕс тĕпĕнђисем тухса шулĕшпе вăрсе ўкерĕç, çавăн ђухне тин, çак çын (*йатне калаççĕ*) тытаканлă пултăр. Турăран ырлăх, етемрен çиплĕх. (*Виçĕ хут*).

### Çынна хытарса лартмалли ђĕлхе.

Çитмĕл те сиђĕ ыллăм ту çинђе—çитмĕл те çиђĕ ылтăм прушин, çакăнса тăраҭ; çав прушинтан епĕр тытрăмăр; çитмĕл те çиђĕ прушина хăçанта хăçан хăйĕн аллипе (*йатне калаççĕ*) тытĕ, çавăн ђухне тин халăх хушшинђе тухтăр. Турăран ырлăх, етемрен сиплĕх. (*Виçĕ хут калаççĕ*).

Çитмĕл те çиђĕ кĕмĕл ту çинђе—çитмĕл те çиђĕ кĕмĕл прушин, çитмĕл те çиђĕ кĕмĕл прушина хăçан хăйĕн аллипе тытĕ, çавăн ђухне тин халăх хушшине тухтăр. Турăран ырлăх, етемрен сиплĕх. (*Виçĕ хут*).

Çитмĕл те çиђĕ пăхăр ту çинђе—çитмĕл те çиђĕ пăхăр прушин: çитмĕл те çиђĕ пăхăр прушина хăçан хăйĕн аллипе тытĕ, çавăн ђухне тин халăх хушшине тухтăр. Турăран ырлăх, етемрен сиплĕх. (*Виçĕ хут*).

### Хурах ђĕлхи.

Çитмĕл те çиђĕ сăрт вĕçĕнђе — çитмĕл те çиђĕ вар вĕç; çитмĕл те çиђĕ вар вĕçне хăçан кайса тĕлĕк тĕллесе килĕ, çавăн ђухне тин çак йапала хуçи (*кĕлет пулсан—кĕлет хуçи, лаша пулсан—лаша хуçи, çавăн пек ыт. те.*) ăйăхран вăрантăр. Турăран ырлăх, етемрен сиплĕх. (*Виçĕ хут калаççĕ*).

Çитмĕл те çиђĕ улăх вĕçĕнђе—çитмĕл те çиђĕ тинĕс вĕç; çитмĕл те çиђĕ тинĕс вĕçне хăçан кайса тĕлĕк тĕллесе килĕ, çавăн ђухне тин мана килсе тыттăр. Турăран ырлăх, етемрен сиплĕх. (*Виçĕ хут калаççĕ*).

Çитмĕл те çиђĕ вăрман вĕçĕнђе — çвтмĕл те çиђĕ atăл вĕç; çитмĕл те çиђĕ атăл вĕçне хăçан кайса -- тĕлĕк тĕллеce килĕ, çавăн ђухне тин мана килсе тыттăр. Турăран ырлăх, етемрен сиплĕх. (*Виçĕ хут*).

*] Ку йурăсене Вачтер йулт. халăх йуррисенђен илсе хĕрлĕ салтаксене, комсомолĕссене тата ĕç ушкăнĕсене (ерттелсене) йурăхлă туса çырнă.

# ШАХМӐТ ПАЙӖ

**Ретактӑрӗ Ç. М. МАКÇИМӐВ.**

### Тӗнђери шахмӑт ӗçӗсем.

*** Сунталăн 5 (35)-мӗш №-ђе тӗнђеређи вăй ла шахмăтçăн Каппапланккăн кăçал вырăс шахмăтçӗпе Ађохинпа ăмăртуллă выђав (матђ) пулаť, тесе пӗлтернӗђђӗ. Çенťапӗр вӗçӗнђе вăл матђ Кăнтăрти Америккăра Пуенос-Айрес хулинђе пуçланђӗ. Ку таранђђен вӗсем 21 выђав выђанă, вӗсенђен 4-шӗнђе Ађохин çӗнтернӗ, 2-шӗнђе Каппапланкă çӗнтернӗ, ыттисенђе никам та çӗнтереймен пулнă. Выђав умӗнђен калаçнипе, вӗсенђен кам маларах 6 çӗнтерет, çав матђра çӗнтерекен пулаť. Матђ пуçланиђђен пурте: Ађохин Каппапланкăна çӗнтерес çук, тетђӗç. Матђ Ађохин пит ăста выђанине кăтартрӗ, çӗнтерме те пултараť пулмалла.

*** Мускавра окťапӗр уйăхӗнђе пӗтӗм Сойусри Шахмăт пухăвӗ пулса иртрӗ. Унта 4 турнир пулса иртрӗ: Сойусра ђи ăста шахмăтçăсен турнирӗ, унтан тӗрлӗ хуласен, красноармеӥтсăсен, хӗрарăмсен турнирӗсем.

Вăл турнирсенђен ђи инттересли шахмăт ăстисен турнирӗ пулђӗ. Унта мӗн пурӗ 21 çын выђарӗ. 25-мӗш окťапӗрте вăл турнир пӗтрӗ. Çӗнтерекенсем çаксем пулђӗç: 1-мӗшпе 2-мӗш приса Похаттырђукпа Романовски илђӗç, 3-мӗшпе 4-мӗшне — Тус-Хоттимирскипе Мотеђ, унтан Потвинник, Маккаконов, Ненароков. Вӗсенђен 3-шӗ: Мотеђ, Потвинник, Маккаконов маестро (ăста выђакан) шутӗнђе тăмансксерсем. çав маестро йатне илђӗç...

*** Лонтонра 24-мӗш окťапӗрте тӗнђе шахмă ттурнирӗ пӗтрӗ. 1-мӗш вырăна Тарттаковерпа Нимтсовиђ тухрӗç, унтан Маршалл, Витмар, Похођупăв.

### Шашкăлла выђаççӗ.

Нӗркеçри (Курнавăш вул.) пионерсем шашкă вăййипе инттереслерӗç. Вӗсем асса çӳрес вырăнне шашкăлла выђаççӗ, тата çвено санаťťинђе те шашкă вăййине выђаса илеççӗ. Ку пионерсемшӗн усăллă.

А н а ђ й ӗ в.

### Тав тăватпăр.

(Шаккăл, Тукаш вулăсӗ.)

Пирӗн йалта шахмăт вăййи сарăлсах пыраť. Шахмăт вăййине стутент Çеркей Васлийӗ вӗрентет. Пирӗн йалта кăçал шахмăт вăййине çамрăксем пурте пекех пӗлеççӗ. Малтан Çеркей Васлийӗ 2—3 ађана çеç вӗрентрӗ, кайран вӗсене кура çамрăмсем пурте пекех вӗренђӗç.

Шахмăђӗсене килтех тăваççӗ. Халӗ пирен йалта 3—4 ађан шахмăт пур. Ӗç çук ђухне çамрăксем йаланах пӗр-пӗрин патне пухăнса шахмăтла выђђаççӗ. Шахмăт вăййине вӗреннӗренпе çамрăксем хушшинђе хуликанства та ђаксах пыраť.

Çак кунсенђе шахмăт ăсти Ђулхулана ВУС-а вӗренме кайаť. Çамрăксем шахмăт ăстине вӗренме кайађђен тав тăваççӗ. Çеркей Васлейне ырă вăйă вӗрентнӗшӗн аслăлăх „ђулне" кышлама сӗнетпӗр!

(Шаккăл ађипе Х.—Х. çамкорсем)

# ПУШТӐ ЙЕШЂӖКӖ.

**И. Караттайа**—Сăвву аптрамасť. Технӗккă йенђенťте, шухăшсем йенђен те есӗ ђылай малалла йарса пусни паларăť. Анђах, вырăнăн вырăнăн çыхăнусăр вырăнсем пур.

...„Куштан хӗсӗр йавăнан сăпса
Кӗслейӗн йăслаť мађђара...
Ђăваш хӗрӗ класра савăнса
Пайан хыт итлет—урокра"...

Кунта есӗ хӗре сăпсапа танаштарма шухăшланă пек туйăнаť. Сăнсен çыхăнăвӗ кунта нимӗнте çук. Пӗр строфара ун пек икӗ тӗслӗ сăпалăх.

**Ђ-ça**—„Йалкор" сăввуна сăвă теме пулмасť. Унта есӗ статйа çырассине сăвă майлă çырса хунă.

...„Йалти куштан иртӗннине ăçйалкорӗ шур хут çине ӳкерет".

Ана, вăл ђăн просă пулђӗ. Сăвă технӗккине вӗренме тăрăш.

**Улитта Ентр.**—„Ӗçхалăхӗ парăнас çук"—пала йапалах мар. Каймасť.

**Мăрсакăла**—„Кӗрпуне" кӗмест, пађар.

**Попрăва**—Есӗ çырнă йурă хаçата тухмасť, вăл халăх йурри, ун пеккисене пуçтарса пыратпăр. Çитес çулсенђе вӗсем шурналсем çине тухӗç.

**С. Константинăва**—Есӗ: Йеççенин кам?, тесе мăтатăн. Йеççенин вăл хуликанланнă вырăс поеђӗ—1925 çулта çакăнса вилнӗ. Йеççенин сăввисем тулаш (формă) йенђен аван, анђах шухăшӗсем килӗшӳллӗ мар. Пирӗн ђăваш поеђӗсенђен „Йеççенинланнисем" çук. Унăн формине йуратса, ун майлă çыраççӗ. Ун пек пирӗн Хусанкай поет çыраť. Сунтал çинђе Хусанкай сăввисене тупса вула.

**Саликăва**—(Уђйанăвск) Ай-ай есӗ! „туман ťыха" пилӗкне хуçтарасшăн. Сан сăввусене вуласа курмасăрах хаçата кайассипе кайас çукки çинђен йепле калама пултартăр вара ретакси. Сăввусене йар, кайран йамалли çинђен калаçма пулаť.

**Çиновйӗва**—„Çамрăк пурăнăç" хаçатсем çине йама та, Сунтала та йурăхлă пулмарӗ.

**Киремет Петťине**—„Савнипе калаçни" сăвă йевӗрлех те, унта сăвă йӗркине пăхăнман вырăн нумай:

„Кала-ха, Лисук! халех кала!..
Кама есӗ ытларах йуратан?
Мӗн-ма каламастăн... ан кала
Пӗлетӗп епӗ Макара йуратан".

**„Кала, кала; Йуратан, йуратан"**... пек пӗрпек сăмахсемпе сăвва шăрçалатин йурăххах мар.

Председатель редколлегии **Золотов А. И.** — члены: **Васильев Н. В.**, **Данилов Н. Ф.**, **Золотов Н. Я.**, **Кириллов Н. К.**

**Чувашлит № 2165. Заказ № 110.** **Типо-фото-цинкография школы ФЗУ, Чебоксары.** **Тираж 2000.**

# СУНТ̆АЛ ПИПЛИОТЕККИ № 2

СЫРАМПИ **ВИРЙАЛ** Историллĕ еппос

**! Ҫак кунсенђе ҫапăнса тухаҭ. КАНАШ потписђĕкĕсене йаратпăр. Уйрăм ҫырăнса илме 5 пус. !**

**„Вирйал" Онт̆апĕр ăмăртуне килнĕ йапала. Ăмăрту Комисҫи кун автăрĕ малашне те хастарăн ĕҫлетĕр тесе, ăна ҫакна ҫырнăшăн, конорарсăр пуҫне 25 тенкĕ укҫан памалла турĕ.**



— Маҫак, мана саватни,
Йумах йарса паратни?—



Ӳлпут хыттăн йунарĕ,
Халăх пăлхана пуҫларĕ...



Шĕвĕр пӳрнепе пусса,
Пĕрмайах улталанса...



Пер касакне тӳсеймен,
Шыврах ђиксе вĕлернĕ...